К 83.39(=Чув)6
Ф33
Ч-39759

РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН ПĔЛŸ МИНИСТЕРСТВИ

И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ

**Г.И. ФЕДОРОВ**

# ИВАН МУЧИ ПУЛТАРУЛĂХĔ ТАТА ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИНЧИ КУЛĂШĂН ИЛЕМЛĔ ХĂЙНЕ ЕВĔРЛĔХĔ

**Лекцисен конспекчĕ**

Шупашкар 2001

Национальная библиотека ЧР
4-039759

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Обязат. экз.
К83.39(=Чув)
Ф33

ФЕДОРОВ Г.И. Творчество Ивана Мучи и природа комического в чувашской литературе: Конспект лекций / Чуваш. ун-т. Чебоксары, 2001 . 60 с.

Освещаются национально-эстетические особенности сатирико-юмористической прозы, выявляются истоки и пути становления комического сознания в повествовательных жанрах, устанавливается степень проявления в комическом различных черт философского мышления словесной культуры нации.

Для студентов старших курсов дневного и заочного отделений филологического факультета.

Утверждено Методическим советом университета

Ответственный редактор: д-р филол. наук, проф. В.Г.Родионов

4-39759

Национальная библиотека Чувашской Республики

Проверено 2010

## УМ СĂМАХ

Чăваш литературинчи кулăш пирки нумай тĕпчевçĕ çырнă. Хв.Уяр, М.Илпек, Л.Агаков, С.Аслан, А.Кăлкан, А.Галкин, ытти авторсем вĕсем умĕн ĕçленĕ М.Федоров, Ф.Павлов, И.Тăхти, Иван Мучи ăсталăхĕ пирки каланиех, тĕслĕхрен, вуншар кĕнеке-статьяра тĕл пулать. Ку тĕлĕшрен тишкерÿçĕсем хушшинче М.Я.Сироткина, В.Я.Канюкова, Г.Я.Хлебникова, Е.В.Владимирова, Ю.М.Артемьева асăнма кăмăллă. Кашниех вĕсем сатирăпа юмора литература тĕпчевçи пек курса хакланă. Апла пулин те, питлевпе тăрăхлавăн чăвашлăхĕ тупăнчĕ, халĕ ун тĕрлĕ енĕсене уççăнлатасси кăна юлчĕ теме иртерех. Сăлтавĕ ăнланмалла — тĕпчевçĕсем кулăшăн нациллĕ илемлĕх вăрттăнне çеç мар, философи тĕшшине те тĕпчесе пĕлеймен-ха. Сатирăн хăйне çеç тивĕçлĕ, юморăн хăйпе çеç çураçуллă, иронин анлă функцийĕсене палăртса тухрăмăр теме те çук.

Çак пособири тĕллев — шÿтлĕ хайлавсен чăнласах халăхла тымарĕсене, ун философилле таппине тишкерсе тухасси, Иван Мучи пултарулăхĕнче халиччен курăнсах кайман функцисене уççăнлатасси. М.Федоровпа И.Тăхти, Ф.Павловпа Хв.Уяр, М.Илпекпе Хв.Агивер пекех Иван Мучи те шÿт мехелне-тĕввине пĕрре кăна мар салтса курнă. Ку вара вĕсен илемлĕх системине, поэтикине, хайлавсенчи халăх ăнĕн еккине çине тăрсах шырама хистет, Мучи пултарулăхне наци шÿчĕн контекстĕнче тĕсеме хушать. Ыйтăвĕсем ретрен-ретех: мĕнре-ши вĕсен кулăшĕн ыттисемпе пăтрашми хапĕ-ĕлки? Тăрăхлав-питлевшĕн вырнаçуллă сăрĕсем еплерех-ши вĕсен? Çăвар туллин ахăрттарас тĕллевпе çырлахнă-ши ку сатирик-юмористсем? А.Кăлкан, А.Галкин юптарăвĕсенче, калăпăр, С.Аслан, В.Енĕш прозинче шăпах йăх-яха çунтарса илесси тĕпре. М.Федоров, И.Тăхти, Хв.Уяр вара кулăш мехелĕпе шÿтрен ытла вăлтса, шахвăртса каласишĕн усă курнă темелле. Шÿчĕ вара,çавна пула, тарăн, философиллĕ шухăш çавăрма кирлĕ пулса тăнă. Шÿтленĕ пек туса шÿтлĕ мар ыйту хускатни, систерсе калани кун пек чухне сăмахлă культурăн авалхи вăйтармăшĕпе килĕшсе тăрать. Кунпа пĕрлех, историллĕ уйрăм самана паллисене вырăна хурасси те кăмăл тĕпелĕнчех тăнă. Кашни-пĕр япалара (пулăмра, лару-тăрура, ĕç-пуçра, геройра...) анлă шухăш таппи уçăлса пырать çак ăстасем çырнинче, иртнипе пуласлăхăн халăхла ĕмĕчĕ-шанăçĕ сыпăнать, наци кунĕ-çулĕ сăнарлă, философиллĕ тĕвве çыхăнать. Çавна пулах, илемлĕх мелĕсем, стильпе поэтика чĕр вăй тупаççĕ кунта; сăмах-юмаха сыпнă, шухăша çавăрнă чух чăвашсен эстетика ăсĕнчи, культура асĕнчи сисĕм-туйăма мала хума хистеççĕ. Ку мĕн ĕмĕртен тĕкел упраннă пулăх, ун ытамне темле мел те кĕрсе пынă: анекдотăн илемлĕх тĕшши, тĕлĕксен ытарлăхĕ, шÿт, йĕкĕлтÿ, пурнăçăн халапа çаврăннă вăрттăнĕсем... Урăхла каласан, чăваш пурнăçĕн парка, ĕмĕр чĕрĕ вулли ĕнтĕ, халăхăн мĕн авалтан вăй-хал кĕрекинче шутланнă «аптраманлăх» (П.Хусанкай), «авăнманлăх» (А.Артемьев), «хуçăлманлăх» (И.Тахти) т. ыт. те. Сатирăра, тĕслĕхрен, пĕр-пĕр пулăмăн, çыннăн тĕрлĕ енĕсене капашсăр пысăклатнине асăрхатпăр. Ирониллĕ, юморла сюжетра вара пач урăх мелсем тĕпе килеççĕ иккен. Тĕлĕк мелне, йĕкĕлтÿ поэтикине, ирониллĕ интонацие ăнкарма кун пек чух текстри сăнарлăха тарăннăн тишкерме лекет.

Кулас-тăрăхлас кăмăл, шÿтлесе шÿтлĕ мар ыйтăва хускатасси çынна, лару-тăрăва хак панипе çыхăннă. Кулăш мелĕсенче кун пек чух халăх

сӑмахлӑхӗн пин ҫултан килекен таппи сисӗнет. Хак паракан сӑмаха чӑваш ҫынни тӳррӗн, куҫран тӑрӑнтарса тенӗ пек каламан, аякран ҫаврӑнӑ, систермесӗр вӑлтма юратнӑ, юптарулла хайланӑ. Профессиллӗ литературӑра, кунсӑр пуҫне, уйрӑм ҫыравҫӑн ӗҫ мехелӗ те, ун чун килтти те палӑратех. Суха кассине тарӑнрах ярас текенӗ кун йышши паллӑсем хӑш ӑста шыравӗнче мӗнле палӑрнине сӑнать, хӑш пултаруҫӑ хӑшне мӗнле витӗм кӳнине тӗсет. Ҫакӑ вара шӳтпе кулӑшӑн, питлевпе тӑрӑхлавӑн илемлӗх функцийӗ пирки пусӑрӑнарах шухӑшлама хистет. Кулӑшпа шӳт, кукӑртассипе вӑлтасси, юптарупа питлев чӑваш прозинче тата эпикӑллӑ поэзийӗнче сӗтеклӗ ҫимӗҫ панӑ. Вӑл пуррипе наци литератури хӑйне евӗрлӗ интонаци хайланӑ, эмоцин евӗклӗ те ҫураҫуллӑ тӑрӑмне тӗпе кӑларнӑ. Камитпе мыскаралӑх, йӗплевпе тӑрӑхлав писатель-поэта калас сӑмаха ӑш кӑмӑлпа витерме пулӑшнӑ. Прозӑн, поэзипе драмӑн философилле ӑнӗ, хайхискер, юморлӑ пытарӑнчӑка, иронилле вӑрттӑна кайса тымарланнӑ. Камитлӗхпе мыскара тӗшшине тупасси вӑл сӑмахлӑ чӑваш культурин хӑйле сӑпатне, ытти халӑхсен литературипе пӑтрашманлӑхне тупасси те. Ҫакӑнпа пӗрлех чӑваш литературин философилле тавра курӑмне ӑнкарасси. Ыйтӑвӗ ку питӗ пысӑк, чӑваш ӑнӗн философиллӗ тымарӗсене тӗпе илмелли ыйту. Акӑ мӗншӗн кун пек чух Мучин сатирӑллӑ, юморлӑ публицистикине ҫӗнӗ енчен хак парас тӗллев мала ӳкет, ӑна ытти писательсемпе пӗр рете тӑратса пахаласси тӗпе тухать. Наци литературин чӑн чӑвашлӑхӗ мӗнле, мӗнре йӑл илнӗ-ши? Ҫав нацилӗхӗн шӳтпе ҫыхӑннӑ енсем пур-ши? Авалтан, ӗмӗрсем тарӑнӑшӗнчен килекен шӳт йӗрки-шывӗ халӑх философийӗн хӑш енӗсемпе тачӑрах ҫыхӑннӑ?.. Ҫакӑ пурӗ пӗрле хамӑр литературӑн хӑйне тӗллӗнлӗхне тупма пулӑшӗ. Кунпа пӗрлех, ҫав хӑйне тӗллӗнлӗхе сатирӑн кирек хӑш литературӑшӑн та (узбек, акӑлчан, турккӑ...) кирлӗ енӗсемпе пӑтраштарассинчен сыхлӗ. Мучи ӑсталӑхне тишкерни, писатель сатирипе юморӗ халӑхӑн сӑмахлӑ культуринче мӗнле вырӑн йышӑннине ӗнентерни чӑваш кулӑшӗн ӳсӗмне курма пулӑшӗ.

## Чăваш цивилизацийĕ хывăнас çул-йĕр тата наци культурин ăнĕ

Кулăша, паллах, хăй тĕллĕн çеç тĕпчеме çук, ăна халăх ăс-хакăлĕпе культурин, сăнарлă шухăшĕн наци контексчĕ енчен те сăнамалла. Кашни халăхăн сăмах культури яланах хăйĕнле, ытти нацисен сăмахлăхĕнчен урăхла сăпатлă. Кун сăлтавĕсем тĕрлĕрен. Анăçра пурăнакансем акă чылай ĕмĕр каярахах пĕр вырăнта чăмăртанса тĕпленнĕ. Çырулла культура амаланăвĕ кунта çавна кура вуншар томлă сага (Д.Голсуорси «Сага о Форсайтах»), çĕр ытла хайлава пĕр пĕтĕм ятпа пĕрлештерес (О. де Бальзакăн «Человеческая комедия» пуххи) еннелле сулăннă. Куçса çӳрекен йăхсем Парфенон, Эйфель башни пек палăксем хывман. Сонет, прозăлла сăвă, сăвăлла роман, эпопея, октава йышши жанрсене те мал енчи халăхсем кай енчен каярахпа илнĕ. Куна ăнланма йывăр мар: урăхла культура урăхла сывланă. Инçет Çурçĕрти халăхсемех, сăмахран, вĕрӳ-суру, кĕлĕ, чĕлхе евĕр пулăмсене хисепе хурарах пынă. Кăркăссемпе казахсен, тĕслĕхрен, мифсемпе легендăсене ум ярасси мала ӳкнĕ. Ахальтен мар М.Б.Храпченко академик Ч.Айтматов, О.Чиладзе романĕсем нумай литературăсенче мифла туртăмсене çĕнĕлле вăратса янине асăнать. Чукча литературинче вара йăла-йĕрке, кулленхи пурнăç таппи-юхăмĕ, тĕрлĕ ĕненӳ çинчен калани пĕлтерĕшлĕ. Прозаик-поэт паян çав йăла-йĕрке, ĕненӳ патне таврăнать те тăван тавралăх сăнне кăштах кулăшларах сĕмлĕн ӳкерет, ачаран çывăх ӳкерчĕксене ăшă юморпа витерет. Çакна С.Куриловăн «Ханидо и Холерха», Ю.Рытхеун «Сон в начале тумана», «Конец вечной мерзлоты» романĕсем аван ĕнентереççĕ. Сăнарлă пурнăç кунта экзотика шайĕнче мар, аваллăхран тымарлă туйăм-сисĕмпе хĕмленет. Иртнине паянхи шайран сăнанă чух романистсем çĕнĕ перспектива тупаççĕ: хăйсем çине те, халăхĕ çине те вĕсем ырă сунăмлă ирони витĕр пăхаççĕ. Манси поэзийĕ-прозинче романтикăллă çĕкленӳ, лирикăллă туйăм, юрлă инçет поэтики мал ĕмĕтлĕ. Унпа пĕрлех, шаманпа шаманлăх ăрăмлăхне савни-ĕненни, йăх унта хăй халлĕхне курни. Тĕслĕхе Ю. Шесталовăн «Синий ветер каслания» повеçне илме юрать, унта шăпах çак енсем ум ертӳçе çаврăннă. Эппин мансисен сăмахлăхĕнче кулăшĕ те çав сĕмлĕрех. Коми сăмахлăхĕшĕн ритмăн васкавсăр ӳсĕмĕ, шухăша кайни, юмаха чăна куçаракан сăпатлантару, чĕрчун пурнăçĕпе çыхăннă мифологи, вăрман кун-çулне тĕсекен халап-легенда кăтартуллă-мĕн. Кун хăйне евĕрлĕхне Г.Юшковăн «Чугра» романĕ аван кăтарма пултарĕ. Çавăнпах коми çыравçи-сăвăçищĕн шӳте уйрăм эпизода тăрлакан, уйрăм сăнара хаклакан мел пек мар, пĕтĕм текст тăршшĕне саланакан ирони пек курасси ырă. Кавказ тăрăхĕнчи хăш-пĕр халăхсен (аварсеннех авă) пуплес-çырас йăли ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсенчен, халапсемпе юптарса каласинчен шăранса тухать (Р.Гамзатов «Мой Дагестан»), кунта кулăш ăшă кăмăллă пулни пĕлтерĕшлĕ. Абхаз халăхĕн çыравçи Ф.Искандер вара кулăшра майĕпен трагеди тупса пыракан туртăмсем асăрхать.

Ку таранччен калани уççăнах тепĕр шухăш патне çитерет. Чăваш цивилизацийĕ те шӳтрен-камитрен, юморпа сатирăран пăрăнман. Ытти халăхсем хушшинче хăйсене (наци представителĕсем пек курса), чăваш ятне-чысне упрама вĕсен ухмаха пенĕ пек тума тивнĕ, çапла çын хăйĕн этем сăвапне, халăх ятне çӳле çĕкленĕ, çав ятпа ĕмĕрсем витĕр тухнă. Çав камитлĕхре, мыскаралăхра, ухмаха пенинче мĕн паянччен, чăваш

халăхĕн историллĕ, политикăллă, (патшалăхлă) ăнĕ пытаранса упранать. И.Тăхти хайлавĕсене тимлĕн, тарăннăн вулакан çакна асăрхĕ: чăвашсен историллĕ кун-çулĕ мĕнле философи хывнă-ши? Çакăн пирки пуç ватса писатель питĕ нумай шухăшлать. Мĕнле халăх-ши вăл чăвашсем? Историллĕ миссийĕ мĕнле вĕсен? Ытти халăхсем хушшинчи вырăнĕ епле? Халăхăн хăйĕн наци тивĕçне упрамалли мĕнле çул-йĕр пур?.. Вуншар ыйту хускатнă Тăхти хăй прозинче, вĕсен вăрттăнне çине тăрса шыранă: ухмаха пенин философиллĕ пĕлтерĕшĕнче, халăх шӳчĕн вăлтмăшĕнче, Çул сăнарĕнче, камитлĕ лару-тăрура, тĕрлĕ культура, тĕрлĕ халăх çыннисене «мыскараллăн» шайлаштарнинче т. ыт. те.

Кунашкал ыйтусем лартса чуна-юна вĕретекенсем, пуçа ватакансем питĕ нумай пирĕн — Хвети, Сп.Михайлов, М.Федоров, Ф.Павлов, И.Тăхти, П.Хусанкай, Хв.Уяр т. ыт. те. Анчах чăвашсен историллĕ философине «патшалăхлă шухăшлавне» шӳтсĕр шӳтпе çыхăнтарса тарăннăн тĕпчекенни, тен, пĕр Тăхти çеç пулĕ. Ухмаха пени ун ухмаха кăтартмасть, шӳтленийĕ вара шӳтшĕн те мар пек, тăтăрхаллă (вырăсла: серьезный) ĕç-пуçшăн кирлĕ вăл.

Ухмаха пересси эппин питĕ явапллă тĕллеве çыхăннă. Хăйĕнчен тăрăхланипе килĕшет те пек этем, хăй те пулăшать пек чăвашран (çав хушăрах хăйĕнчен те) мăшкăллама. «Пире, чăвашсене, пырать», «Чăваш хырăмĕнче пăта та çĕрет», «Чăваша каç кӳлĕм ăс кĕнĕ» текелет пек. Анчах кун пек калани теприн (тăрăхлама шут тытнă этемĕн) тăрăхлав еккине тĕпрен аркатма кирлĕ-мĕн, чăвашра чăвашлăха хисеплеме вырăнлă вăл. Тăрăхлав объекчĕ (чăваш) вара чăна тĕрĕс мара, ăса айванлăха çавăрать. Тĕнчипе паллă философ, М.М.Бахтин калашле, умри хыçа, хыçри ума ӳкет, çӳлти аяла анать, аялти çӳле хăпарать, пиччĕнни тӳнтере тухать, тӳнтерĕ пиччĕн пулса тăрать. Çакна пула йĕплекенни, чăваша ним вырăнне хумасăр калаçаканни аптрашкие юлать вара. Кулăшĕ кулăш кăна та мар, эппин, чăвашсен; наци философийĕн хăйне евĕрлĕ палăрăмĕ вăл. Ахальтен мар И.Тăхти хайлавĕсенче ку мел тĕпе тухать, ун шыравĕсене нациллĕ сывлăш кĕртет. Акă мĕншĕн М.Федоров, И.Тăхти, Хв.Уяр, М.Илпек пултарулăхĕсенче халăх тени наци ăнлавпа çыхăнса каять, уйрăм çынра чăвашăн çĕршер çул инçĕшĕнчен тымарланса килнĕ енĕсем сăпатланаççĕ. Пĕр чăваш çинчен каланинче пиншер чăваш пирки шак хуни тĕшше ларать. Çакна кура, çапла çирĕплетсе калани те йăнăш пулмĕ: авалтан сывă упраннă, пирĕн ĕмĕре çитнĕ чĕрĕ туртăмсем ытларах чухне шӳтпе камит, иронипе юмор сĕткенĕпе тутлăхланнă. Малаш перспективи те вĕсен çав шӳт философийĕнченех тухса паркаланать.

Вăтам ĕмĕрсенче чăвашсем фольклорпа йăла-йĕркене пĕр-пĕринчен уйăрман. Ку вара халăхăн культурăпа идеологи вăй-халне упранă, чăвашсене этнос пек сыхланса юлма пулăшнă, тет В.Г.Родионов. Авал ăрăмлă сăмах (пил, кĕлĕ, ылхан...) вăйĕ кашни çыншăн чĕрĕ пулнă, вăл халăхăн ĕлĕкрен килекен йăли-йĕненĕвне пуçтарса кăшăлланă. Кунашкал мехелĕн ырă енĕсем питĕ нумай. Чи кăтартулли, чи пысăк вырăн йышăнаканни вара — чăваш йăли-йĕркинче, ун ăрăмлă сăмахĕнче тĕн идейисем упранни. Апла пулсан, чăвашсем хăйсене этнос пек ăнланса илесси авалтанах килекен йăла-йĕркепе, ăрăмлă сăмахпа, халăх ăнĕнчи культурăпа, тĕн идеологийĕпе тачă çыхăннă. Майĕпен культурфилософиллĕ çак хĕм асам-ăрăмлăх тыткăнĕнчен хăтăлнă, ытарлă пĕлтерĕш, илемлĕх функцийĕ туяннă. Кулленхи калаçура, сăвă-юрăра

тăтăш тĕл пулнăран, ăрăмлă сăмах тарăн философи техĕмĕпе пуянланнă. Фольклорăн илемлĕх чĕри варне вырнаçнă. Сăмах та, илемлĕх хатĕрĕ те кун пек чух ирони сĕмĕпе тĕсленеççĕ, халăхăн ĕмĕрхи йăли-ĕненĕвне тĕнрен, ăрăмлă сăмахран расна вутпа хĕмлентереççĕ. «Обновленный интерес к фольклору, — тесе çырать С.Алиева, — вызывает к жизни формы юмористической прозы, в которой демонстрируется национальное видение мира вне всякой идеи, современных событий и людей. С наибольшей яркостью это проявляется в прозе народов Северного Кавказа». «Северного Кавказа» çаврăма, тен, шута илмесен те пырĕ; чăваш прозипе поэзийĕшĕн те кăтартуллă фольклор техĕмне çĕнĕлле ăнланни, çавăн пек ăнланнин кулăш çуратас туртăмĕ. Мих.Федоровăн Хĕветĕрĕ ав: хăй тахçан вăрмана кайса килнине тепĕр хут, мифла шухăшласа ăнланать, иртнине (хăйне те, мифне те, миф çуратнă саманине те, хăйпе пулса иртнĕ ĕçе те) юморлăн хаклать. И.Тăхтин калавĕ-очеркĕнче те иртнĕ кун патне таврăнни ирони килпетне тăтăшлăх тĕсĕ кĕртет. Мучи хайлавĕсенче те тахçан пулнă ĕç-пуç патне тепре таврăнасси, ăна шÿтлĕ хакласси тĕпе ларать. Кун пек шыравра шÿт онтологийĕн, ун философийĕн çăлкуçĕ те тупăнать: çын, халăх,наци хăйĕн иртнĕ пурнăçĕ патне таврăннинчемĕн вăл. Таврăну мехелĕ чылай чухне чăваша тарăн пĕлтерĕшлĕ ирони патне илсе тухать.

Халăх культурипе цивилизаци çулĕ, хайхи, наци ăнĕпе килĕшсе тăрать-мĕн. Ăнĕ вара ку тĕрлĕ сăпатлă : чĕлхепе пуплев ăнĕ, эстетика ăнĕ, историлле ăн, философилле ăн, психологилле ăн т. ыт. те. Ак вырăссен сăмахлă культури: авалхи славян чĕлхине килĕштернĕ вăл хăй вăхăтĕнче, ÿкĕнÿ, ÿкĕт, житие, летопись... жанрĕсене кăмăлланă. Анчах христианла мифсем те, кивĕ славян чĕлхи те чăннипех халăх культури пулса çитеймен ун чух. Тÿррипе, халăхла культура вырăс чĕлхиллĕ шухăшлавпа çураçмаллине пуринчен вăйларах Пушкин туйса илнĕ. Çырулла никĕс ун чух вырăс культурине тивĕçтерми пулать: ахальтен мар Пушкин хăй прозине пĕр-пĕр Калуçă (повествователь) каласа пани пек калăплать. Ку ĕнтĕ «калуллă (повествованиллĕ) илемлĕх» вăл. Пушкин прозине тĕпчекен Н.К.Гей калашле, «повествовательная художественность». Н.В.Гоголь «килсен» «натуральная школа» текен юхăм хывăнсан, çак туртăм татах вăйланать. Кунта вара Калуçă сăмахĕ (Гоголь хайлавĕсенче) — тĕпренех шÿтпе шăварăнать. Çак нÿрĕкпе хăш-пĕр событисене (ĕçсене, геройсем хăтланкаланисене) капашсăр ÿстерессе «паркаланать». Икĕ ен тухать куç умне — сăмах-юмаха халăхла, çырулла мар культурăри пек çавăрасси тата çав сăмахăн кулăшла техĕмĕ. А.П.Чехов, М.Е.Салтыков-Щедрин хайлавĕсем куна пит аван кăтартаççĕ.

Каллех М.Бахтин шухăшне илсе кăтартни вырăнлă пулассăн туйăнать: çырулла тата çырулла мар культурăсем пĕр-пĕринпе çуммăн аталанма тытăнни официаллă тата официаллă мар культурăсем хушшинчи расналăха вăйлатать. «Народный язык, — тет пысăк тĕпчевçĕ, — захватывая все сферы идеологии и вытесняя» «язык официальный»,«нес с собою новые точки зрения, новые формы мышления (ту же амбивалентность), новые оценки, ведь этот язык был языком жизни», «смеховых жанров». Ку вăл чăнах та çапла: Гоголь ĕçĕ-хĕлĕ вырăс литературине çĕнĕ, халăхла шĕм кĕртет, М.Федоров, И.Тăхти, Ф.Павлов хайлавĕсем чăваш литература аталанăвне çĕнĕ çулпа—халăх культурин çулĕпе— яраççĕ. Официаллă çул-йĕр Е.Рожанский, Игн.Иванов, И.Юркин, каярах П.Хусанкай, ыттисен

пултарулăхĕсенче йăл илсе каять. Пуçланасса вара вăл христиан тĕнне сарас тĕллевпе, çавăншăн йĕркеленĕ çырулăхпа, шкул ĕçĕпе пĕрлĕхлĕ пулăм пек хывăнса пуçланнă. Халăхла çул-йĕр ытларах шўтпе палăруллă; çыравçăсене камитлĕх, гротеск (капашсăрлату) илентерет, иронипе юмор хавхалантарать. Христианла, тĕнле шухăшлав, çапла майпа, хăйне тĕллĕн çеç аталанмасть, халăх чĕлхи çине таянса пырать. Вăхăчĕпе, И.Я.Яковлев шкулĕнчен пуçласа, официаллă туртăм тўпи чакнăçем чакать. XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче кăна тепĕр хут вăй илсе каять вăл, чăваш литературине идеологи çулĕ çине тăратать, прозăпа очерклăрах туса ярать. Чăн та ĕнтĕ, 30-мĕш çулсенчи официаллăх тĕн ыйтăвĕпе пачах çыхăнман; ку вăхăтра истори аталанăвне марксизм хушни пек ăнланасси тĕпе ўкнĕ, тĕрлĕ идеологсем литературăна ертсе пыма капашнă. Çапах та, чăвашсен авалхи тĕнĕ (кĕреке, хăна-вĕрле, уяв, йăла-йĕрке тексчĕсене вырнаçса юлнăскер) çухалмасть. Пирĕн литературăн сăнарлă, илемлĕ никĕсне хыват вăл, христианла туртăмсем кунта вăйсăртарах палăраççĕ.

Чăваш сăмахĕн чăн-чăн ăстисем ялан халăхла пуплевшĕн, унти кулăшпа иронишĕн хыпăннă. Халăх сăмахлăхĕнчи сюжет-фабулăна никĕсе хурса ĕçлесси, Калуçă сăнарне халăх прозинчи пек ăсталасси ирĕксĕрех писательсене шўт картине кĕртет. Тĕслĕхрен, М.Федоров Арçури çинчен калакан мифа фольклортан мĕнле пур çаплипех илмен, тĕрлĕ мифсем çине таянса хăй çĕнĕ миф хывнă. Апла пулсан унчченхи мифне те, мифла чăнлăхне те, мифла геройне те, мифла шухăшлавне те унăн çĕнĕлле (кулăшла, ироиллĕ) техĕмпе тутлăхлантарма тивнĕ. «Судра» хайлав авторĕ Ф.Павлов та çапла ĕçленĕ — Ухтерккере вăл чăвашсен кулленхи ытарлă Калуçă сăнне курнă, герой сăнарне тĕпренех çавăн çинче калăпланă. Хв.Уярпа М.Илпек, И.Тăхтипе Иван Мучи пирки те çакнах каламалла, унта та эпикăллă поэзипе проза хывăнас çул-йĕр ытларах чух шўтпе, кулăшпа çыхăнни уçăмлă. Шўчĕ кунта стиль , сăнарлăх мелĕн картне ларма тивĕçет, халăхăн ĕмĕрхи çул-йĕрне палăртать. Е тата çапла та пулать — чылай чух шўтçĕ трагеди ăсти те. Ку ен пĕр чăваш е вырăс пултаруçисен кăна мар — акăлчансен генилле драматургĕ Шекспир та, вырăс сăвăçи А.С.Пушкин та, коми сăвăçи И.Куторов та, абхаз прозаикĕ Ф.Искандер та, грузин художникĕ Ч.Амирэджиби те çакнах кăмăлласçĕ. Чăвашсем те ку енпех паллă — Хв.Акивер яланах этем шăпине анекдот пек курса ăнланать, ăна тĕпчеме тытăнать те, унта хăрушă драма е трагеди тупать. Ф.Павлова та çак ретрех асăнма тивĕçлĕ. Юнлă драмăсем («Ялта») хайланипе пĕрлех, вăл трагикомеди те ăсталать («Судра»). Эппин, Ф.Павловăн илемлĕх тĕнчине икĕ ен пĕрлĕхĕ (кулăшпа синкер пĕрлешни) тытса тăрать, чĕр сĕткен парать. Çапла та хушса хума пулать — чăн трагеди çук та пулĕ чăвашăн. К.Ивановăн «Шуйттан чури» трагедийĕ мĕншĕн вĕçленеймен-ши? Мĕншĕн Ухсай ун сюжетне тĕпе хурса çырнă трагеди юмахланса, «балладăланса» кайнă? Мĕншĕн ун «Тутимĕр» трагедийĕ çак жанрăн саккунĕсене тупсах пĕтерейммен? Б.Чиндыков трагедийĕсенче мĕншĕн ăс-хакăлпа тунă, ытла та пĕтĕмлетўллĕ, абстрактлăрах символсем, сăнлăхсем нумай?! Чăвашсен шухăшлавĕ шўте кăмăлларах панăран мар-и акă? Шўчĕ вара (халăх ăнĕнче) трагедие анализ туни вăл, ăна çĕнтерни! К.Ивановăн "Нарспийĕ" пĕрре пăхма шўтлĕ шухăша пачах "кăмăлламасть" пек. Илĕр-ха Сетнер амăшĕ юмăç патĕнче ларнине сăнлакан сценăна—хăрушă ĕç-пуç пуласса систерет мĕштĕрти старик: "Çамки шăтăк—хупăнмĕ", "Шăнса кайĕ вĕри юн..." Ку вăл пулас

вилёмсен черечĕ çине шак хуни-тăр. Анчах çав саманта "курнă" хĕвел пайăрки вара сиксе выляса çӳрет, старикран "тăрăхлать". Акиверĕн илемлĕх тĕнчи пирки те çакнах каламалла...

Ку таранччен каланинче çапла пĕтĕмлетӳ тĕвĕленет: халăх культуринче шӳт чылай чух трагедипе, нацин аптраманлăх философийĕпе çыхăннă иккен. Çынсем ăна (шӳтпе камитлĕхе) шӳтлĕ мар япаласем çинчен калама та, вăлтма та хута яраççĕ. Хайхискер, интернацилĕх тени те çĕнĕ сĕмсемпе хушăмланать. Чăваш кулăшĕн вырăс культуринчи евĕр паллăсем çеç мар, ытти халăхсен культуринчи евĕр, типологиллĕ пĕрпеклĕхсем те пур-мĕн. Сăмахран, абхаз, авар, грузин, коми... сăмахлăхĕнчи пек енсем. Ф.Павловăн, Хв.Акиверĕн... трагикомедилĕхĕ те наци ăнĕнченех шăтса ӳсет-мĕн, çав вăйпах парка хунав ярать. Ку тĕлĕшрен Акивере М.Федоров, Хв.Уяр, М.Илпек традицийĕсене аталантарнишĕн ырлама тивĕçлĕ. Анчах Уяр ĕçĕ-хĕлĕнче Мучи витĕмĕ те вăйлă сисĕнет, çак туртăм Акивере те хăйне евĕрлĕ çулпа уттарать. Эппин, чăвашсен илемлĕ ăнĕнчи трагикомедилĕх вăл наци философийĕн тĕп енĕсенчен пĕри теме пулать. Халăх цивилизацийĕ, ун политикăллă, эстетикăллă, историллĕ, патшалăхлă ăнĕ кунта пĕр пĕтĕм ӳт-пӳ тупать. Чи трагедиллĕ шухăшлакансем (М.Федоров, К.Иванов, Ф.Павлов, Ю.Скворцов т. ыт. те) комедилĕхрен те хăпаймаççĕ, ун вăйне туйсах тăраççĕ. Мĕне пĕлтерет-ши Нарспи аппĕ хăй хĕрĕн туйĕнче «аçтахаланса» ташлани? Аппĕн хĕрĕ туйĕнче ташлама юраманни çеç мар вăл. Туйĕ çавăнпах трагеди умĕ пуласса систерни кăна та мар. Михетер сăнарĕ хăрушă анекдот палли пулнине кăтартни те вăл: Нарспие телей сунатăп текен арçын чыса маннă, халăхăн ĕмĕрхи философине пăрахăça кăларнă, туя тӳнтер сăнар тума «тар тăкнă». Чăнах та, поэмăра туй инкеке çаврăнать, инкек — туя. Хавасăхĕ, «уявĕ» — анекдот кăна-мĕн, анекдочĕ вара — трагеди кунта. Каллех çав пĕрлĕх, кулăшпа синкер пĕрлĕхĕ ум илет поэмăра.

Кулăшăн нациллĕ тымарĕсене, генезисне тупас тесен эппин чăваш цивилизацин уйрăмлăхĕсене шута илмеллех. «Арçурири» Хĕветĕр хăй шăпине те, халăх кун-çулне те вăрмана кайса килни урлă ăсласа илет. Ю.Скворцовăн «Славик» калавĕнчи çамрăкшăн кун пек чух кӳршĕре пурăнакан хĕр качча тухни кирлĕ. В.Игнатьевăн «Тăватă тантăш пĕр Пурхи» калавĕ те ку енпе питĕ кăтартуллă: чуна тăкăслатса тăнă кирĕке юлташĕсем ăнсăртран çырса янă çыруран пуçласа тасатма пикенет Пурхи. «Çапса çумăр çăвать» повеçри (Акивер) Тарас та ăнăççăр пурнăçне шĕкĕлчет, хăйне арăмĕпе «килĕшӳллĕн» тишкерет... Тĕслĕхсене вĕççĕр тăсма пулĕччĕ. Пуринче те пĕр мехел: пĕр япалана, пулăма, çынна... тепринпе шайлаштаруллăн тĕсени-тĕпчени тухать ума. Ку вăл — релятивизм философийĕ; чăвашсен аптраманлăхне чĕр вăй парса тăракан сĕткен теме пулать-тĕр ун çинчен. Çыннисем, япалисем, пулăмĕсем мар, вĕсем хушшинчи çыхăнусем, хутшăнусем кирлĕрех темелле чăваш сăмахлăхĕн ăстисене! Акă мĕншĕн кунта ĕçе çĕнĕлле хаклани, пĕр-пĕр событи е ситуаци пирки пуçа ватса шухăшлани, пĕр е тепĕр çын кăмăлĕ-екки, пурнăçĕ çинчен шута ӳкни ума тухать. Акă мĕншĕн чылай прозаик героя хăйне сăнлассишĕн . хыпăнмасть, çав герой çинчен хыврăнса-пуçтарăнса пыракан шухăша (Сăмаха) ытларах кăмăллать. Аптраман чăваш çавăнпах-тăр чылай чухне иртнĕ куна, событие, ăшне пăлхатнă тепĕр çынна шӳтлĕ хаклать, çапла туса вăл хăй валли çĕнĕ ориентир

тупать. Хакĕ вара шухăш еккипе пĕрле тупăнса пыракан Сăмахра тĕртĕмленет. Сăмахĕ, хайхи, чăваш прозинче, эпикăллă поэзийĕнче, тепрер чух драмăра та (вăл калуллă пулсан) хайлавăн тĕп геройĕ пулса тăрать. Ун таппи яланах ум ретре тăракан Калуçă (повествователь), Калавçă (рассказчик) сăнарĕнче сулăм хевти тупать.

Халăх шӳчĕ яланах йывăра çĕнтернипе çыхăннă: кун паллисене М.Федоров, И.Тăхти, Иван Мучи хайлавĕсенче аван куратпăр. Шӳчĕ романтикăллă, лирикăллă иронире тĕшше ларасшăн, çĕкленӳллĕ хавал тупасшăн. Геройри ырă туртăмсем пĕр вăхăтрах хĕрхӳ те, çутă та, лирикăллă та. Романтикăллă шӳтпе гротеск (капашсăрлату) вара çав хушăрах пурнăçа аркатакан, чуна ватакан тӳнтерсене те асăрхасах пырать. Çак тĕлĕшрен, тĕслĕхрен, К.Ивановăн «Тимĕр тыллинчи» тухатмăш карчăкăн гротесклă сăнарĕ питĕ кăтартуллă — ытарайми хитре, сăпайлă Чĕкеç пурнăçне пĕр шикленми пĕтерет вăл, çамрăк валли мал ĕмĕтлĕ пĕр шанăç хăвармасть. «Нарспи» поэмăна та çак енчен тĕсемелĕх пур. Хĕрĕн ятне Михетер лартнă туй, сăмахран, вилĕм туйĕ темелле, çавна сиссе «вăйран тухса сикеççĕ» хăнасем, çамрăк пуçне çиекен усала çул парса ташлаççĕ. Ку та вăл — гротесклănă «камитлĕх».

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Ф.Павловăн «Судра» хайлавĕнчи трагедипе комеди пĕрлĕхне йĕрлесе тухăр. Çав трагедие Ухтеркке мĕнле çĕнтерет-ши? Мĕншĕн ку герой сăнарне чăвашăн кăтартуллă, типлă сăнарĕ теме пулать?

2. И.Тăхтин «Çанталăк», «Шерхулла», «Помидор» калавĕсене тишкерĕр. Камитлĕхе, мыскаралăха тĕпе хурса, хăйне ытти халăх çыннисемпе танлаштарса, чăваш хăй нацилĕхĕн хăш енĕсене мала кăларать? Çакăн пирки шухăшлăр: асăннă калавсем тăрăх И.Тăхтин историллĕ, патшалăхлă, политикăллă ăславĕ-шухăшлавĕ пирки мĕн калама пулать? И.Тăхти чăваш цивилизацийĕн çулĕ-йĕрĕ çине мĕнле пăхать?

3. «Нарспие» çĕнĕ куçпа вуласа пăхăр: кунта туя вилĕм туйĕ темелли сăлтавсем мĕнле палăраççĕ? Çав туй анекдот палăрăмĕсем тупнине мĕнле тĕслĕхсем çирĕплетеççĕ?

### Сăнарлă сăмах культурин чăвашла традицийĕсем. Илемлĕ пуплевĕн хăйне евĕрлĕхĕ, калу. Калуçă сăнарĕ

Каласа паракан çыннăн сăн-сăпачĕ, ӳт-пĕвĕпе кĕлетки пĕр-пĕр хайлавра вулакан умне уççăн тухмасан та пултараççĕ. Сăмах тĕп герой пулса мĕнле амаланса пыни те çителĕклĕ кун пек чух. Литература хайлавĕнче Сăмах таппи тĕпе ӳкет, калу (повествовани) мехелĕ, ăна йĕркелемелли май-шыв ум илет. Пуплевĕн калуллă тыткаларăшĕ урлă пирĕн вара Калуçă, Калавçă сăнарĕсене ăнланса илме лекет. Гогольтен пуçланнă çак туртăм вырăс литературинче те Сăмахах мала кăларать. XX ĕмĕр вĕçнелле кунта та Л.Толстойла пысăк эпопейăсем çырассин вырăнĕ хĕсĕкленет, кĕскен те татăклăн калакан Чеховăн традицийĕсем нумай-нумай çыравçа илентерме тытăнаççĕ. Хушса та калар: Чеховпа Мопассан витерĕшĕ XX ĕмĕрте нумай-нумай литературăна çĕнĕ перспектива уçса парать. Çак енчен пăхсан, Чеховăн стильпе поэтика курăмлăхĕ чăваш литературинче те питĕ уçăмлă. Унта Уярăннипе Мучиннех, сăмахран, вырăс шӳтлевçинни пек (хăш чух унран вĕреннипе, тепĕр чух — типологиллĕ пĕрлĕхе пула) хатĕр-хĕтĕр, шухăш тĕртĕмĕ питĕ уççăн курăнать. Пĕр енчен çак прозаиксем хайланинче кулăш тĕпе тухать, тепĕр енчен — Сăмах, вăл тĕп герой вырăнне йышăнни. Маларах каланине манăçтармасан пире кирлĕ тепĕр пĕтĕмлетӳ те тĕртĕмленет: чăваш литературине кун пек поэтика Чеховран вĕреннипе çеç килсе кĕмен. Халăх прозинчи, эпикăллă поэзири хайлавсем те çак енсенех пысăка картнă, унта та шӳтпе Сăмах сăнарлă мал ĕмĕте таптарнă. Шăп çавăнпа çеç, шалти условисем тымартан хăпарса пиçсе çитнĕрен кăна, Чехов традицийĕсем пулăхлă ана çине ӳкнĕ, «наци нӳрĕкĕпе» сĕткенленнĕ.

Ку пурĕ çакна ĕнентерет: литературăн чăн вăйĕ, чăн нацилĕхĕ пур чухне те çырулăхпа çеç çыхăнман. Тепрер чух (е тĕпрен илсен те-и ?) халăхăн калаçу чĕлхинчен, сăмахлăхĕнчен, йăли-йĕркинчен тымарланать вăл. Хăш-пĕр чух калав-очерк, фельетон-тĕрленчĕк авторĕсем (шӳт анине ытарнă ăстасем пушшех те) ятнех пайăр сăпатлă пуплев тыткаларăшĕ ăсталаççĕ. Вырăс çыравçи М.Зощенко (Мучин унăннипе пĕр пек енсем питĕ нумай) хăйĕн шӳтлĕ калавĕсене хутла вĕренсех çитеймен çын калани пек хăрталать. И.Тăхти хайлавĕсенчи Калуçă сăмаха яланах темĕн тĕрлĕ кукăртса, халапласа, вăлтса калаçать. Мучи ăсталанă Калуçăн кашни детале ӳстерес, гротесклас (капашсăрлатас), сюжет таппине абсурда çитерес екки пысăк...

Çакна та каламалла: кашни халăхăн хăй çулĕ аслă пулнине вырăна хурас вăхăт çитрĕ. Пысăк халăхсем е Европăри çĕр-шывсем пухнă пулăх çеç кирлĕ текен шухăш хăйĕн урмăшлăхне уççăнрах кăтартрĕ. Нациллĕ, чăннипех халăхла туртăмсем хывăнасси çырулла культура пуçланасса кĕтсе пурăннă тени чăнласах вырнаçуллă шухăш мар. Çырулăх тĕн шухăшĕсене, вăл ыйтупа çырнă кĕнекесене чăвашсем хушшинче сарма кирлĕ пулнă. Ытти халăхсен шăпине те пырса тивнĕ çакнашкал пулăм: вырăссен çырулăхĕ аталанни те христиан тĕнне сарассипе тачă çыхăннă. Гоголь витĕмĕ хăватлă палăра пуçлани вара сăмахлă культура христиан витĕмĕнчен хăтăлма тытăннине те систерет-тĕр. Ахальтен мар аслă сатирик шӳт, мистика патне туртăнать, халăх чĕлхинчи, сăмах вĕççĕн çӳрекен текстсенчи поэтикăна иленет. Çапах та ĕнтĕ, çырулла çак мехел

халӑхла туртӑмсене паркалатма нихӑш енчен те пулӑшман теме май килмӗ: чӑваш культурине ҫапла майпа ытти халӑхсен чун, ӗненӳ, философи ункайӗ кӗнӗ. Ку ӗҫ питӗ кирлӗ, анчах ҫав кирлӗлӗх шалтан пиҫсе ҫитни ырӑрах. Кулӑш тӗлӗшӗнчен те кунашкал условисем, ытти литературӑсенчен тивӗҫлипех илнӗ опыт пач та ҫук теейменӗр. Уҫҫӑнах темиҫе тӗвӗ палӑрать: К.Д.Ушинский, Л.Н.Толстой — И.Яковлев шкулӗ, Букварьсем (ача-пӑчана ӑса вӗрентекен прозӑри, поэзири кулӑш); Н.В.Гоголь — Мучие, Илпеке хушма вӑй панӑ техӗм; А.П.Чехов — Мучин, Уярӑн кӗскен те витӗмлӗн йӗплес йӑли, текста тӑтӑш иронипе витерес ӑсталӑхӗ т. ыт. те. Анчах та Мучи пултарулӑхӗнче (ҫак контекст паллисем йӗркеленнине кура) тарӑн философиллӗ, ҫӗршер ҫул инҫӗшӗнчен аталанса килекен енсем те тупӑнаҫҫӗ, мӗншӗн тесен унашкал шӳтпе камит яланах сӑмах ӑсталӑхӗн ӗмӗрхи таппипе чӗррӗн ҫыхӑннӑ. Ҫыруллӑ утӑмсен пуҫламӑшӗ, вӗсем «пулӑшнипе» литературӑмӑр ытти традициллӗ халӑхсен культурисем патне «кивҫене» кайни — пурте вӑл хамӑр сӑмахӑн чӑн чӑвашлӑхӗпех, ҫав Сӑмахӑн калулӑхӗпех ҫыхӑннӑ. Хамӑрлӑ-хӑмӑр вара тахҫанах хыванӑ терӗмӗр, ытти халӑх традицийӗсем ҫав чӑвашлӑха хӑватланма, ҫӗнӗ сӗмсем тупса тата вӑйлӑрах амаланма пулӑшнӑ.

Сӑмах кулӑш мехелӗпе ҫыхӑнни, вӑл ирони мелӗпе пӗтӗҫни чӑваш халӑхӗшӗн мӗн авалах кӑтартуллӑ пулнӑ. Пӗр-пӗр япала (пулӑм) ҫинчен пӗлтерекен Калуҫӑ кирек хӑҫан та иртни патне таврӑнать, ӑна, ҫав иртнине, кулӑшла хак парать. Иртнийӗ вӑл — халӑхӑн яланхи пурнӑҫӗ, ял йӑли-йӗрки, историллӗ событисем, тӗрлӗрен ҫынсемпе пулса тухнӑ пӑтӑрмахсем т. ыт. те. Ытарлӑ сӑмах еккине чухлакан ӑста, халӑх чӗлхине аван пӗлекен шӳтҫӗ куллен-кунлӑхӑн ҫав палӑрӑмӗсене культура сӗмӗ кӗртет, вӗсенче философиллӗ тӗшӗ шырать. Ҫапла туса вӑл кун-ҫул йӗркине ӑнланать. Куллен-кун таппи вара кун пек чух притча, халап картне ларать, ытарлӑ, вӑлтуллӑ пӗлтерӗш тупать. Ламран-лама куҫнӑҫем унра кулӑш хевти вӑйланать. Илӗр авӑ И.Я.Яковлев шкулӗнче хатӗрленӗ Букварьсене — вӗрентӳ кӗнекисен авторӗсем ниме пӗлтермен, вак-шак пек событисене илнӗ темелле: лаша шырани, ҫул ҫинче тӗл пулнӑ темиҫе лав пӗр-пӗрне ҫул парасшӑн пулманни, пур-ҫук укҫипе этем тем-тем илме ӗмӗтленни т. ыт. те. Сӑнарах пӑхсан, пачах урӑххи курӑнать — ӗҫӗ-пуҫӗ пӗрре те вак-шак мар иккен. Халӑх пултаруҫисем вӗсене ытарласа калани тарӑн шухӑш аталантарать. Куласси те, ӑс парасси те, аваллӑха ӑсласа илесси те, шӑпа авкаланчӑкӗсем пирки пуҫ ватни те — тем те пур унашкал кӗске, ытарлӑ текстсенче. Мӗнрен килнӗ-ши ку? Паллах, ҫав событисене, пулӑмсене Калуҫӑ ытарлӑ ҫавӑрса каланӑран, унта ӑса вӗрентмелли хавал тупнӑран, пурнӑҫ философине тӗпченӗрен. Ҫыруллӑ культура пулманран, вӑл вӑрҫӑ вучӗсенче ҫунса кӗлленнӗрен, Сӑмахӑн эстетикӑллӑ пӗлтерӗшӗ кулленшер ӳснӗ, хӑватланса пынӑ. Калас шухӑшӑн пӗлтерӗш тӗввине салтас, сӑнлас ситуацин тӗрлӗрен тӗрлӗ пайрӑмӗсене тупас, чип-чипер япала, тӑтӑрхаллӑ, пурнӑҫра чи кирлӗ ӑнлав ҫинчен калаҫнӑ чух ухмаха пенӗ пек тӑвас йӑла илентернӗ сӑмах ӑстисене. Йывӑрлӑхран хӑраман чӑваш, ҫав йывӑрлӑхра чыссӑр пуласран кӗрӗк пӗркеннӗ, иртни патне тӑтӑш таврӑннӑ, тӑтӑш шӗкӗлченӗ ӑна. Ҫапла хӑйне те, халӑхне те, наци культурине те тӗрӗс-тӗкеллӗх, сӑваплӑх картинче усранӑ. Паллӑ-ха, иртни иртнишӗн кирлӗ пулман этеме, ку ӗҫ юхӑмӗнче пурнӑҫӑн ҫӗнӗ хавасӗ тупӑннӑ, халӑхӑн, нацин пурнӑҫ, идеологи, йӑла-йӗрке, илемлӗх философийӗ чӑмӑртаннӑ. Эппин таврӑну (аса илӳ), шӳт, Сӑмах философиллӗ сӗм йышӑннӑ кӑна та

мар, вĕсем культурфилософи категорийĕсем пулса калăпланнă. Ку ăнсăртран мар: иртнине, трагедие тепĕр хут сăнакан, ăна илемлĕн сăнарлакан этем Сăмахпа, шӳтпе йывăра çĕнтернĕ. Ав мĕншĕн ĕнтĕ Сăмах — пирĕн литературăн тĕп палăрăмĕсенчен пĕри. Ун таппинче, илемлĕх саккунĕсене тытса пырас еккинче этем кăмăлĕ, ун нациллĕ шăпи-хапи, истори аталанăвĕ ӳтленнĕ. Ку саккунсене таранăн ăнланас ĕмĕтлĕ студентсене В.Г.Родионов ĕçĕсемпе паллашни пулăшĕ. «Чувашский стих» монографире, Çеçпĕлпе Элкерĕн Çырнисен пуххисем валли хатĕрленĕ ум статьясенче çак тĕпчевçĕ чăваш Сăмахĕн цивилизациллĕ аталанăвĕ пирки пуçласа тарăн калаçу тапратать. Ку ĕçсен шухăшĕсене ăша хывнă çамрăкшăн вара калу, Калуçă текен ăнлавсене ăнкартса илесси те çăмăлтарах пулĕ.

Ăçтан сăн-сăпатланса тухать-ши чăвашсем Сăмах патне туртăнни? Калас сăмах — йывăр ĕç. Ăшра мĕн пуррине тӳррĕн пĕлтерме питĕ хĕн. Кĕскен çавăрса калас ăсталăх пурне тивĕçмест. Чăвашсен сăмахлă культури вара икĕ юппе кайнă: пĕрисем, калассине пĕлтересех тенипе, нумай сăмахлăх енне çул тытнă (Игн.Иванов, И.Юркин, М.Илпек, А.Емельянов, Л.Таллеров), теприсемшĕн хăш-пĕр кăмăла каламасăр хăварасси те юравлă пулнă (И.Яковлев шкулĕнчи Букварь, Мучи, М.Федоров, И.Тăхти, Хв.Уяр, Хв.Акивер). Каласах тенĕ сăмахăн, мĕн вăрăмланнăçем (сюжет авкаланчăкĕсене тӳрре кăларас тенипе, хушма йĕрсем тупсах пынипе т. ыт. те) ăнланмалла марлăхĕ ӳссе пынă. Акă И.Юркин: вăл çырса хăварнă, чиксĕр вăрăм сăмахлă 70 том (архивра упранаççĕ) — сăмаха калаймасăр асапланнин палли-тĕр вăл. Каласа çитермен, вăлтса, юптарса çавăрнă шухăш вара итлекене (вулакана) пин вăрттăнпа астарнă, шухăша ӳкме хистенĕ. Кунашкал Сăмах ытларах чухне шӳтлĕ пулнă, ытарлă шухăшĕ ун ай текста кайнă. Акă мĕншĕн ĕнтĕ кулăш — философи категорийĕ çеç мар, вăлтмалли мел те пулса юлать, стиль, шухăш инструменчĕн картне те вырнаçать.

Чăваш прози ытларах чухне шухăш аталанăвĕ çинче никĕсленнĕ темелле: кунта Сăмах мĕнле майпа аталанса-сыпăнса пыни пĕлтерĕшлĕ. Çавна май, сăмах текстра пĕр-пĕр пулăмăн, япалан, ĕç-хĕлĕн ячĕ çеç пулни çителĕксĕр, вăл хăйĕн сăнарлăхне анлăлатса, функцине расналатса пыни, тĕрлĕ сĕмсем тупни кирлĕрех. Каланă шухăш кунта этем йывăр лару-тăрăва, трагедие, драмăна çĕнтернине (романтикăллă гротеска шута илмесен) кăтартать. Каласси вара ансат мар иккен — ăшра пуррине малтан ăсласа илмелле, тĕпне-йĕрне тупмалла, тĕрлĕ акцентсене палăртмалла. Вăлтнă, ытарланă чух — калаканăн сăнарлăх саккунĕсене аван пĕлмелле, чăвашсем мĕне, мĕнле ай шухăшлăн каланине чухламалла. Тăхти сăнланă çынсем ав вихçан та тӳрĕрен калаçмаççĕ, пĕлтерес шухăша тĕрлĕ майпа ытарласа çавăраççĕ вĕсем. Хăйсене, çитменнине, юриех ыттисенчен катăкрах пек, айванрах пек кăтартаççĕ. Мучи геройĕсем те юптарса калаçма килĕштереççĕ. Сăмах-юмах, хайхискер, юптарнă пек сыпăнса пырать, вăлту таппине парăнать. Кун пек тĕпчев Мучи фельетонĕ-очеркне, калавне-тĕрленчĕкне шăнăрласа тăракан публицистикăллă тĕвве салтма пулăшать: юптарулăхра, вăлтăвра иккен вăл; çав вăлтупа юптарулăх калăва (повествование), сюжета, жанр тытăнкине йĕркеленĕ чух кирлĕ сатирика. Тен, çакăнпа сăлтавланать пулĕ Мучин хăш хайлавĕ, Тăхти çырни-туни тепĕр чĕлхене куçарăнманни! Чăн та Мучи, хăй сатирик пулнăран, И.Тăхтипех шайлашаймасть. Тăхти калăпланă Калуçă сăнарĕнче сюжетăн

пăрнăçтарнă кашни авăнчăкĕнче, кирлĕ-кирлĕ мар пек çаптарнă кашни халапра тарăн онтологи, наци философийĕ тĕртĕмленет; чăвашлăха нумай енлĕн, аваллăхран тымарлантарса тĕпчет писатель. Мучи прозин хăйне сăпатлăхĕ, вăйĕпе вăйсăрлăхĕ те калавсенче тĕп герой çуккинчен килет — ун мĕн пур хайлавне пĕтĕм пултарулăхшăн кăтартуллă пĕр Калуçă хăйле сăн-сăпат кӳрет. Сăвăсенчи лирика геройĕ евĕртерех вăл: калавран калава çĕнĕ енсем тупать, тарăнланса пырать. Хăш-пĕр чух Эпĕ тесе калаçасси те пур ун, тепрер чух ăна виççĕмĕш сăпатран калаçни те çырлахтарать. Тепле пулсан та ку сăнарăн кĕвелĕкĕ, ун пуплев тыткаларăшĕ Сăмаха юптарса калаçнинче йӳççе хăпарать.

Танлаштарушăн Игн. Иванов прозине тĕсесе пăхма юрать: кулленхи пурнăçран ниме пĕлтермен событисене илет пек вăл — ăнăççăр çын ĕççе çӳрени, ятне яни; тулăка пĕлмен хресчен ывăннă лашине хĕнесе-çапса пĕтерни т. ыт. те. Ку ĕнтĕ вăл — чăвашăн кулленхи пурнăçа, иртен куна культура сĕмĕ парса ăнланас йăли, çапла майпа кун-çул тирпейне тупас тĕллев тытни. Сăмах вĕççĕн калама хайлавă пек çырнă произведенисенче прозаик малтан героя тĕрлĕ енчен хак парать (ун характер енĕсене тупса, ĕç-пуç хăçан, ăçта пулнине кăтартса). Кайран геройăн хăтланкаларăшĕсене тӳрре кăларакан эпизод ӳкерет. Юлашкинчен вара ăслав (мораль) патне пырса тухать. Паллах, ку вăл юптару жанрĕн шалти содержанийĕ: çыравçă геройсен ырă е тӳнтер енĕсене ӳстеререх сăнлать, шӳтлĕ, ăс паруллă сăмах еккипе тытать. И.Яковлев шкулĕнчи текстсем, Тăхти, Игн.Иванов, Мучи хайлавĕсем, хайхи, чăвашсен этнориторики мĕнле хывăнса пынине кăтартаççĕ. Калас шухăша ытарлăн çаварнă-мĕн пирĕн халăх: юптаруллăн калаçнă, ухмаха пенĕ пек тунă, ăс вĕрентсе (çамрăксене), халăха çутта кăларас тĕллеве ум ярса сăмахланă. Паллах, кун пек чух публицистикăн тĕрлĕ енĕсем вăйлăн аталаннă, сăмаха, шухăш таппине вылянчăклăн амалантарасси мала ӳкнĕ. Сăмахĕ вара хăйнеевĕрлĕн аталанса пынă, сăнар пулса ӳтленнĕ.

Кун пек функциллĕ Сăмахăн, иронипе капашсăрлатун риторикăпа эстетика майĕсем вăйлă. Тăхти, сăмахран, ироние калав никĕсне хывать, çапла туса унти пур ĕç-пуçа, лару-тăрăва кулăшпа витерет. Пĕр-пĕр событие писатель ялан ăнсăртранлăх картне лартать, айванла, ухмахла ĕç пек хаклать. Кун пек аталанса пынăран, сăнланă событин, пулăмăн шухăш тытăнки арканать, ресемант (семантика, пĕлтерĕш арканни) текстра тĕп мел пулса тăрать. Мучишĕн те ресемант саккунĕ тĕпре: вăл ытарлă (сăнарлă) пĕлтерĕше тӳррине куçарас йăлана, унченхи (пĕрлехи чĕлхери) куçăмлăха урăх сăпатлă тăвассине чи паха пулăм пек курать. Тĕрлĕ сăмахсем пĕр пек янăранинчен, çавна пула хăйсен пĕлтерĕшĕсене выляттарса янинчен (каламбур), хытса ларнă çаврăмсен пĕлтерĕшне «пушатса» ĕçлеттернинчен... ырри уншăн тек нимĕн те çук темелле. Çапах та, кашни сатирик е юморист çак мелпе çеç ĕçлет теме çук. М.Федоров, калăпăр, Хĕветĕр чунĕн «шӳтлĕ сисĕмлĕхне» евĕрлев сăмахĕсенчи ытарлăхпа кăтартма май пуррине шаннă. Анчах эмоци виçи, сăнар пайти кашни çыравçăн расна тӳпеллĕ — Мучие, Агакова, Енĕше шултралатнă сăнсем кирлĕрех. Тăхтипе («Колчак») Уяр та пăрахăç тăвасшăн мар вăл меле. Пĕрех вĕсен шӳчĕн вăйĕпе ытарăшĕ çепĕç тăрăхлавра, ироналлĕ йĕкĕлтӳре аванрах палăрать. Калуçисем те вĕсен урăхрах кăмăл-хевтеллĕ. Айвана пересси, хăйне ухмах вырăнне хурса калаçасси (уйрăмах Тăхти хайлавĕсенче) йăлана кĕнĕ çак ăстасем çырнинче. Сăмаха вылятма, калас

шухăша пĕлтернĕ чух вăлтма, юптарма хушать ку. Тăхтин пĕтĕм прози çакăн çинче шăтса ӳснĕ темелле. Ахальтен мар прозаик илемлĕх мелĕсен хăймине халăхăн кулленхи чĕлхинчен, ун эстетикинчен пухса илет. Хăй каласне вак-тĕвек пирки пуплешнĕн, ним пĕлтерĕшсĕр сăмах вĕтетнĕн хывса пырать ăста прозаик. Ку йăла каярах Хв.Уяра та, Хв.Акивере те илентерет. Ыйтăва тимлĕ тĕпчекен студент, çакна тĕпе хурса ĕçлесен, шӳтлĕ интонацин кулленхи калаçу чĕлхинче упранакан сăнарлăх таппи патне çитет. Пуплеври ăшă кăмăл, калаçакан (итлекен) тепĕр çынна хисеплени кун пек чух тĕпе тухать. Калуçă кашни-пĕр шухăша алăра тĕрĕслесе, асăрханса пĕлтерни хайлавсен жанр килпетне шăнăрлать, шухăш-кăмăл содержанине чăвашла, чăн нациллĕ сĕтекпе тутлăхлантарать.

Иван Мучин те пур кунашкал туртăм, анчах унăн Калуçи сăнлăх-сăнара гротесклăрах, ӳстеререх пыни куçа ӳкет. Тепĕр чухне, пĕлтерес шухăшăн публицистикăлăхне çивĕчлетме шут хывнăран, мĕн пĕлтерес-хыпарлас тени ун фельетонла сăн-пит йышăнать. Калуçă кăмăлĕн таппи абсурд пек çаврăнса тухать, парадокслăн хывăнать. Ф.Павловăн Ухтеркки тӳре-шара умĕнче калаçнă пекрех ку. Унта та герой таçта аяккках пăрăнса каять пек, анчах ун ĕмĕчĕ-шухăшĕ вăлтуллă, ытарлă. Тӳррĕн мар, вăрттăнлăхне тупса ăнланмалла çак герой мĕн хыпарлас тенине. Сăнарах пăхатăн та — кулăш мар, хăрушă сăн-питлĕ трагеди уçăлса каять Ухтеркке шăпинче. Ахальтен-и ав — çакăнтан курмалăхне-и, тен, хăй кăмăлĕ çапла хывăннипе-и? — Акивер калавĕ-повеçĕ те анекдот калăпне вырнаçать. Кунашкал анекдот ĕмĕрнех синкерлĕ вăрттăн упрать иккен. Л.Агаковăн çырас хапи урăхла — ун геройĕсем вырăсла-чăвашла перкелешеççĕ, шултран пуплешеççĕ. Ку ĕнтĕ çав персонаж-харкамсен нишлĕхне кăтартакан паллă. Пĕтĕмлетсе çапла каламалла: кашни прозаик, сатирик, юморист хăйле ĕçлет, хăйле çул-йĕр такăрлать. Паллах, ытти халăх ăстисенчен вĕренесси те пур чăваш кулăшçисен. М.Е.Салтыков-Щедрин, тĕслĕхрен, ав гротеск ăсти пулнă. Гоголь асемантизаци, алогизм мехелне алла илнĕ. Чехов ироние килĕштернĕ, ăна кĕскен те витĕмлĕн калас сăмах ĕлки пек ăнланнă. Иронийĕ унăн та час-час икĕ çын пĕр-пĕрне ăнланманни çинче хывăнать, сăнланнă геройăн пĕтĕм ăш-чикне (характерне) ытамлать. Çакă Мучипе Уяр хайлавĕсенче те уççăн курăнать. Гоголь савнă алогизмпа парадокс та, абсурдлăхпа асемантика та ал майлă пулнă Мучишĕн. Çакнах Агаков çырни-тунинче те аван куратпăр, ун шӳтлĕ калавĕсенче те кулăш екки — ӳстерсе каланă алогизм еннелле çаврăнать.

Кун пек сулăмлă ĕç-пуç ыйту та çуратать — мĕнре çак пулăмсен пĕртен-пĕрелĕхĕ? Уйрăм сатирика çеç тивĕçекенни, ун никампа пăтрашмаслăхĕ? Иронillĕ интонаци хывасси, паллах, Чеховран çеç килмен, М.Федоровах ăшă интонациллĕ поэма хывать. Эппин, чăвашсен шухăш-кăмăл еккинче те пулнă ку техĕм, шăп çавăнпа ăша илнĕ те ăна пирĕн проза ăстисем. И.Тăхти, Хв.Уяр, М.Илпек хайлавĕсенчи Калуçă сăнарĕ — чăн чăвашла тип вăл: çемçен сăмахлать, сăмаха нумай тăсса кайнă пек тăвать, вăлтать. Эппин, нумай сăмахлăха çитменлĕх пек кăна хаклама май килмест: вăлту, юптару саккунĕпе те таччăн пĕтĕçнĕ вăл. Ав Уяр геройĕсем (Някуçпа Илле — «Таната») — «çиелтен» нумай сăмахлăн пек тем те пĕр пуплешсе лараççĕ, иккĕшĕ те ку сăмахсем хăйсене кирлĕ пулманнине ăнланаççĕ. Кашниех çав хушăра тепри мĕн йӳтĕмпе çапла

юптарса ларнине те чухлать. Диалогсенче кăна палăрмасть ку, М.Федоровăн «Арçурийĕ» те сăмаха таçта аяккалла пăрса янă пек, нумай калаçса кайнă евĕр сыпăнать. Тĕслĕхсем çакна çирĕплетме май параççĕ: çак рете тăратнă писатель-поэт хамăр халăхăн пĕр представительне, шÿтлесе калаçнă чух шÿтсĕр шухăш çавăракан, тăтăрха кăмăл хывакан этеме сăнлать иккен. М.Федоров, И.Тăхти, Ф.Павлов, Хв.Уяр, М.Илпек, Хв.Акивер нумай сăмахлăх феноменне шÿтшĕн усă курма май пуррине ăнланнă, çав тĕлĕшпе вăл меле ăнăçлăн ĕçе кĕртнĕ. Ку вара — чăваш сатирипе юморĕнчи Калуçăн пĕр тĕсĕ. Мучипе Агаковăн Калуçă сăнарĕсем раснарах — калаçнă чух картран вĕçерĕннĕ пек тăвасси те пур вĕсен. Гротеск мелĕ килĕшерех парать ку çынсене. Анчах вĕсен те вăлту-шахвăрту тĕшши чĕрĕ, çав тĕшĕ паркаланан хунав чуптарать. Паллах, ку вăл—халăхăн урăх представителĕсене пĕтĕмлетсе сăнланă тип. Эппин, чăваш философийĕн, ун тавракурăмĕн, сăнарлă шухăш еккин чăн нациллĕ техĕмне тĕрлĕ енлĕн тĕшĕлеççĕ сыравçăсем, халăхăн тĕрлĕ представителĕсене палăрăмлăн сăнлаççĕ. Вĕсен ăшĕ-чиккине, сăн-питне уçăмлăн кăтартаççĕ пире. Студентсен вара çав «типологиллĕ» сăнсенче халăхăмăрăн тĕрлĕ сийĕсене, вĕсен кăтартуллă сăпатне курса ăнланма хăнăхмалла, халăх шÿчĕн тĕрлĕ енĕсене тупса палăртма вĕренмелле, вĕсем ытти культурăсенчи традицисемпе мĕнле çураçнине ăнкармалла.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Иван Мучи, И.Тăхти хайлавĕсенчи Калуçă сăнарĕсене танлаштарса пăхăр: вĕсем пĕр-пĕринчен мĕнпе расна?

2. «Судра» трагикомедири Ухтеркке пуплевне тишкерĕр — геройăн нумай сăмахлăхĕ драматурга мĕн тума кирлĕ пулнă?

3. И.Тăхти хайлавĕсенчи Калуçă сăнарне çак енчен сăнаса пăхăр: 1) Вак-шак событисене вăл мĕнле майпа пысăк пĕлтерĕшлĕ тăвать? 2) Калуçă ухмаха персе калаçни произведенисен тĕп идейипе мĕнле çураçать?

4. В.Г.Родионов ĕçĕсене вуласа тухăр (Çеçпĕл, Элкер пирки çырнă статйисем, «Чувашский стих» монографийĕ). Сăмахăн пĕлтерĕшне вăл чăваш цивилизацийĕн хăйне евĕрлĕхĕпе мĕнле шайлаштарнине ăнкарăр, курс ĕçĕ çырăр.

## Чăваш кулăшĕн нумай функцилĕхĕ

Чăваш кулăшĕ нумай сăпатлă, нумай функциллĕ. Куна пĕр сатирик е юморист калавĕ-повеçĕнчех, очеркĕ-фельетонĕнчех, сăнав-хаклавĕнчех асăрхатпăр. Тимлĕ студент çак енсем И.Яковлевпа ун ĕçтешĕсем пухса хатĕрленĕ Букварьсенчех тĕл пулнине асăрхĕ. Пĕр çын хăй айĕнчи лашине виç кун шырани çинчен калакан халапрах тăрăхлав та, ăса вĕрентесси те, пурнăç философине пĕр тĕвве пухса калăпласси те, кулленхи пурнăç йĕркине çырса кăтартни (этос, нравоописани) те, наци шухăшлавĕ эстетикăн хăш енĕсене килĕштерни те... — тем те пур. Пĕрлех И.Яковлевăн илемлĕ тавракурăмĕ çинчен «калани» те тупăнать çав кĕске хайлавсенче. Педагогика идейисемпе мал ĕмĕтленнĕрен, чăваш культурин патриархĕ вырăссен çав тĕлĕшлĕ çыравçисене мала хунă. Çавăнпа К.Д.Ушинскин, Л.Н.Толстойăн нравоописаниллĕ, ăспаруллă калавĕсене чăвашла куçарасси йăлана кĕнĕ. Асăннă куçарусен кирлĕлĕхĕ чăнласах шалтан пиçсе çитнĕ. Ахальтен мар Букварьсен авторĕсем чăваш фольклорĕнче те ăса вĕрентекен хайлавсем шыраççĕ. Букварь ĕçне йĕркелекенсем халăх ăнĕнче эстетикăпа педагогика çеç мар, чăннипех халăхла, философиллĕ традицисем тупаççĕ. Ку вăл — чăваш литература аталанăвĕн çĕнĕ пусăмĕ, унччен çырулла туртăмсем те, сăмах вĕççĕн традицисем те (официаллипе официаллă марри) хăйне тĕллĕн аталаннă. Яковлев шкулĕнче калуллă илемлĕх çĕнĕ сĕмсем йышăнать. Шӳтлĕ лару-тăру нимрен малтан ытарлăха, вăлтса каланă халапа, кĕскен çавăрса каланă шухăша кăмăллани тата вăйлăрах палăрать. Теплерен камитлĕх калăплăн сыпăнса кайнă, трагедиллĕ сюжет вăрттăнне пытанать (Ф.Павлов, Хв.Уяр, И.Тăхти, М.Илпек т. ыт. те). Тепĕр енчен, Сăмаха шӳтлĕ каланă чухнехи пек формăпа çураçтарни тĕл пула пуçлать, анчах каланă шухăшĕ пачах шӳтлĕ мар иккен. Çапла майпа, Чĕмпĕрте чăваш прозин, эпикăллă поэзин содержанинче тата расна енсем хывăнаççĕ. Çыравçăсем шӳтпе е шӳт формипе (анчах шӳтсĕр) халăхăн ĕмĕрхи ĕмĕт-сунăмне, наци психологине, уйрăм çын ăш-чиккине сăнарлаççĕ.

Ф.Павловăн «Судра» трагикомедийĕ çак енчен питĕ хăйне евĕрлĕ: ял сăн-сăпачĕ, империализм вăрçин тапхăрĕ, ялти çынсен социаллă-психологиллĕ тĕсĕ (типĕ) палăрать кунта. Апла пулсан, çак произведенин публицистика техĕмĕ вăйлă, этологиллĕ (нравоописаниллĕ) проза техĕмĕ çирĕп темелле. Унпа пĕрлех, кулăш, тăрăхлав, питлев хĕмĕ-екки те чĕрĕ. Çав кулăша, çитменне, Ухтерккен (тĕп сăнарăн) пуплев тыткаларăшĕ урлах палăртнă. Калас тенине ӳстерсерех хайлать вăл, сăмаха аяккалла пăрнă пек туса ытарлă халапсем хайлать, тӳре-шарана ӳкĕте кĕртме тăрăшать. Виççĕмĕш ен те тупăнать — шăпи питĕ трагедиллĕ ку ватăн, пурнăçĕ тĕкĕнсех çитнĕ. Хайхискер, жанр хăйне евĕрлĕхĕ пирки шухăшлама тивет. Мĕнле несĕле тивĕçерех парать-ши «Судра» хайлав — драмăна-и, прозăна-и?

Драмăра геройсен диалогĕсем, полилогĕсем произведени тăршшĕпех аталанса пыни кирлĕ-çке (конфликта кура)! Кунта вара Ухтеркке монологĕ тĕшше ларать ытларах, ытти геройсен диалог техĕмĕпе таппи тĕллĕн-тĕллĕн кăна сăмсаланать: ак Ухтеркке Сăпанипе сăмахлать, ак вăл Крахьяна ӳкĕтлет, акă Катăк Çăварпа калаçнине тĕвĕлекен самант... Геройпа произведени тăршшĕпе калаçаканни те пĕр миравай кăна. Вăл та пулин "не разговаривать", "аяккалла на пăрăн" текелесе çеç ларать. Ăçта эппин конфликта палăртакан диалогĕ? Е, тен, хăйне евĕрлĕ драма-



НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
4-39759

и эппин вăл? Калуллă (повествованиллĕ) драма? Апла пулас-тăк, комеди-и вăл хайлав? Тен, пуринчен ытла трагеди вăл?! Йĕрес килмелле ĕç-пуç: çиме çăкри çитмест старикĕн, кинĕ картмасть ăна... Кулăшла-и вара çак ĕç? Кулăшла, анекдотла! Анчах — трагедиллĕ те. Ахальтен-и Хв.Акивер (Ф.Павловран вĕренсех-и, тен) кашни кун-çулра, асăрханă кашни анекдотра трагеди курать терĕмĕр. “Судрари” драма таппи те — нимрен ытла Ухтеркке пуплевĕ çине таянать темелле. Диалогсем тĕллĕн-тĕллĕн кăна. Анчах та пур диалог та драма тĕслĕхĕ теме май килмĕ. Кунашкал мелмехел Мучи прозинче те тăтăшах курăнкалать. Анчах ăна, çав прозăна, диалог пуршăнах драма тейĕпĕр-и? Драма теес пулсан, «Судрана» «Сăмах драми» темеллеччĕ-тĕр. Мучи хайлавĕсене те çапла хаклама пулĕ — Сăмаха «театрлама», «драмăлама» тăрăшать çак сатирик. Кунта ним тĕлĕнмелли те çук: «Судрара» та драмăри ĕç-пуçăн, Ухтеркке сăнарĕн пĕтĕм йывăрăшĕ ун пуплев тыткаларăшĕ çине тиенет. Апла пулсан ку драмăна та сăмах драми темелли юлать пулĕ, тен? Тепле тесен те кунашкал енсем Мучи сатирипе юморĕнчи жанрсем те, Павлов хайлавĕн жанрĕ те нумай функциллĕ, синкретикăллă пулнине кăтартаççĕ. Сăмаха театрлас мехел чăваш шÿтĕнче тĕпе тухакан мел пулнине ĕнентереççĕ. Халăх йăли-йĕркисенче (çветкере, сурхури уявĕнче, туйра, çамрăксен уявĕсенче) тĕрлĕрен драмăлла сценăсем выляса илесси яланах йăлара пулнă. Çакна драма техĕмĕ теме те юрать. Хушса та калăпăр: театрланас Сăмахăн йĕрки икĕ тĕрлĕ самана чиккинче палăрни куç кĕрет. Павлов та хăйĕн хайлавне 1918 çулта калăплама тытăннă, Тăхти Сăмахĕн вылянчăклăхĕ те историллĕ пĕр тапхăр теприне куçнипе çыхăннă. Уярăн йĕкĕлтÿпитлев мехелĕ те самана сывлăшĕ урăхланасса сисниех-тĕр, Илпеке те çав тĕлĕшренех хак пама май пур.

Жанрăн шухăша яракан, театрланас екки Яковлев шкулĕнчи Букварьсенчех аван курăнать. «Лаша шырани» халапах — мĕн-ши вăл? Анекдот-и? Ытарлă калав-и? Ăса вĕрентекен юмах-и?.. Тенешкел тенĕрен... Вĕсенчен чылайăшĕ ваттисен сăмахĕн картне те ларнă: Ăнманă хăй айĕнчи лашине виçĕ кун шыранă (варианчĕ: аптранă — çăварĕнчи чĕлĕмне виçĕ кун шыранă). Кантăк касма пĕлмен пÿрте валашкапа çутă йăтнă т. ыт. те. Ваттисен сăмахĕсем тесе йышăнма хĕн вĕсене. Ытларах чухне калаçу юхăмĕнче шăп тĕле килнĕрен хута яраççĕ кунашкал çаврăмсене. Чылай чухне унашкал ăслайсен морализм (ăслав) жанрĕн паллисем те пур: вĕсем кĕске, шухăшĕпе анлă, формипе писĕ, ытарлă. Çавăнпа кун пек тĕслĕхсене тенешкел сăмах е тенешкел халап теме юрать. Ку ĕнтĕ çапла пĕтĕмлетÿ тума май парать: чăвашсен сăмахлă культури синкретикăллă жанрсем хайлама хистет, çакă уйрăмах шÿтлĕ хайлавсен поэтикишĕн кăтартуллă. Чылай чух шÿт-кулăш çинче паркаланса ÿснĕ илемлĕх шÿтсĕр хайлавсенче пачах урăхла тĕллеве пăхăнать. Акă Игн.Ивановăн нумай функциллĕ прози (ăса вĕрентесси, йăла-йĕркене çырса кăтартасси, ытарлă философи хывасси т. ыт. те). Ăна документлă пек туса çырнă писатель, анчах юптару саккунĕсем те (ан тив, жанрĕпе ку калавсем юптару мар пулсан та) вăйлă сисĕнеççĕ кунта. Ку ĕнтĕ ĕмĕрхи саккун — кирек епле халăх та малтанхи тапхăрсенче çавнах кăмăллать. Унсăр пуçне, литературăри эпикăллă туртăмсем хывăнасси те çавăнпах çыхăннă. Вулаканĕ те, çыраканĕ те чăн пулнине пысăка хунă ун чух, ку вара майĕпен-майĕпен илемлĕ чăнлăха сăнлама, ăна сăнарламалли тĕрлĕ майсем тупма пулăшнă. Документлăха асра тытса

тăни вулакана çапла шантарма мехел панă: сăнланă ĕç-пуç чăнах та пурнăçра кирлĕ, куллен кун таппишĕн пĕлтерĕшлĕ пулăмсем шăнăрлать. Анчах çав пулăмсем çумĕнче шухăшласа кăларнă, документлăха тăрлама сăнарланă енсем те вырăнлă. Игн.Ивановăн та документлăх никĕсĕ çинче шухăшласа çитерни пур, геройăн хăтланкаларăшне яланах ӳстерсе кăтартать публицист. Структури хайлавсен виçĕ пайлă: героя пĕтĕмĕшле паспортласа хаклани, ăна тӳрре кăларма кирлĕ эпизод-действи, мораль. Кунашкал мехелпе юптару жанрĕ хайланать, Иванов вара ăна урăх жанр хапишĕн ĕçе кĕртет, шӳтлĕ мар шухăш тăтăрхишĕн хута ярать. Тăхтипе Мучи шыравĕсенче ку мехел тата тарăнараха каять.

Шухăш тĕвви малалла çапла салтăнма тивĕç — юптарулăх, ăна документлăх çинче амалантарса чĕр вăй парасси чăвашсен эпикăллă шухăшлавĕшĕн, проза эстетикишĕн малаш çул уçать. Сăнарлă публицистикăн стиль шăнăрĕ тупăнать çапла. Каярахпа илемлĕхĕн çак сĕмлĕ туртăмĕсем хăйсен тĕрлĕ енĕсемпе В.Рсай, Е.Еллиев, Хв.Уяр, М.Илпек, А.Артемьев, А.Емельянов, Л.Таллеров, В.Петров, Н.Максимов, Н.Мартынов шыравĕсенче палăраççĕ, татах çĕнĕ енсем, пулăмсем çуратаççĕ. Игн.Иванов юптарулăхĕ, документлăхĕ писателе халăха çутта кăларас идейăна сăнлама кирлĕ пулнă. Социаллă кунашкал лару-тăрăва кăтартнă чухне вăл нацие пĕр пĕтĕм пулăм пек илмест, халăхри тĕрлĕ сийсен (ушкăнсен, сословисен) представителĕсене типлă, пуçтаруллă, нравоописаниллĕ калăп-сăнар пек ăсталама тăрăшать. Наци философийĕ, ялти тĕрлĕ сийсен сăн-сăпачĕ, вĕсен ĕмĕчĕ-сунăмĕ вара çакна пула калăплăрах курăнма пуçлать. Эппин юптарулăх, документлăх поэтики чăваш литературинче публицистика стилĕн ытарлăхне шăнăрламалли, ум перспектива тупса памалли тĕп условисенчен пĕри. Хушса та калар: юптарулăх чăвашсен этологиллĕ, нравоописаниллĕ прозипе поэзийĕшĕн сывлăш пек кирлĕ. Шӳтпе камитлĕхĕ вара-çав этосăн тепĕр палли. Кун тымарĕсем халăх прозинче тĕрекленнĕ, литературăра шăтса тухса яланлăх вăй туяннă. Кулăш та çав картрах, вăл та сăмахлă культурăна тĕпрен, шăмă варри таран витерекен пулăм. Çыравçăсен ячĕсене асăнни хăех кăтартуллă тĕслĕх вырăнне пулĕ. М.Федоров, Ф.Павлов, И.Тăхти, Хв.Уяр, Ç.Шăпчăк, Л.Агаков, С.Аслан, А.Кăлкан, Хв.Акивер, М.Илпек, Хв.Уяр, Л.Таллеров — пĕри те вĕсенчен кулăшран пăрăнса иртеймен. Кулăшпа юптарулăх вĕсене философиллĕ, публицистикăллă шухăш карти çавăрма, социаллă пурнăç вăрттăнне этологиллĕн уçса пăхма кирлĕ пулнă. Кашни хутĕнчех жанр синтетикăлăхĕ куçа ӳкет. Тăхтиех ав: авантюрлăх, пăтăрмахлăх хевти илентерет ăна; публицистика та хăй ытамĕнчен ямасть; ытарласа, вăлтса каласси вăл философиллĕ стиле те кăмăлланине систерет. Илпек, Уяр пек нумай саслă проза çыракансем пирки вара ним каламалли те çук — тĕнче курăмĕ çапла ку илемçĕсен: объектран вĕттĕн тăрăхлаççĕ, пурнăç пăтăрмахне манăçтармаççĕ, публицистикăна саваççĕ... Социаллă пурнăçăн документлă пек енĕсенчен те писес йăла çук вĕсен.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. И.Тăхтин «Помидор» калавне пăхса тухăр, унти аллегорисен, символсен сăнарлă пĕлтерĕшне ăнлантарăр. Авантюрлăх (приключени, пăтăрмах пурри), публицистикăлăх, философилĕх кунта чăваш пурнăçĕн хăш енĕсене палăртать?

2. Игн.Ивановăн калавĕсен риторикăллă, юптаруллă тытăмне тишкерсе тухăр, курс ĕçĕ çырăр. Ĕçре калав тытăмĕн кашни пайне (паспорт, ĕç-хĕл, мораль) анлă хак парăр; документлă никĕс хăш пай çине ӳкнине, ӳстерсе

калани хăш пайра тĕл пулнине сăлтавлăр, нравоописани тӳпи мĕнле палăрнине кăтартăр.

3. «Чăвашсен шӳтлĕ прозинчи этологи уйрăмлăхĕсем» ятлă диплом ĕçĕ çырăр, унта çак ыйтусене çутатăр: 1) чăваш прозинчи юптарулăх тата вăлту мелĕсем, вĕсен шӳтлĕ интонаци хывас вырăнĕ; 2) прозăпа поэзири этосăн шӳтлĕ интонацийĕ, ун публицистикăлăхĕ; 3) шӳтпе нравоописанире документлăх тата шухăшласа кăларни шайлашнин уйрăмлăхĕсем.

## Мучи хайлавĕсенчи калу мелĕсем

Сăмах-юмаха шухăш тытăнкиллĕ тума тĕслĕх илер. Акă Мучин «Чее Еххĕм» калавĕ. Сюжет никĕсĕнче — парадокс, сăнарлă (илемлĕ) публицистика мехелĕ. «Вилес текен карчăк вилеймен тет. Сарă Еххĕм карчăк мар, — юптарать прозаик, — вилмелле ĕнтĕ..» Пач кĕтмесле çаврăнса кайнă калав таппи кĕтмесле событисен йĕрĕ çинех ўкет, ăнсăртран кĕмсĕрт эпизодсен тăтăшлăхне мала кăларать. Чип-чиперех вилет герой, «икĕ пичĕ хушшинчи сăмсине, Хусан тутарĕсем тунă пашне пек, каçăртса выртать». Пĕлĕш-йышĕ вара ун çĕрне кама парасси пирки калаçу пуçарать. Куна илтнĕ этем, хайхи, вилнĕ çĕртен чип-чипер чĕрĕлсе тăрать, «вилмен пекех калаçать». Вилессе те хысна вăрманне касма каяссинчен шикленсе çеç вилнĕ-мĕн вăл. Халĕ çурта «пек тўп-тўрĕ ларать Еххĕм хăйĕн тўшекки çинче». Чиркĕве хупас сас-хура тухсан татах вилет герой—турă йĕркипе панихида тутарса илесси килет ун. Тупăк йăтнă ял-йыш алăкран (чиркĕве) кĕрессĕн кĕтмен-туман çĕртен çĕре ўкерех хурать ăна. Хупăлчи уçăлса каять, унтан ним пулман пекех чĕп-чĕрĕ Еххĕм сиксе тухать: «вилмен пекех». «Юмах юплĕ», — вĕçлет хăй сăмахне Калуçă; калавĕ те «юплĕ» ун, ăна вăл «Еххĕме чăн-чăнах çутталла туртса, тивĕçлĕ граждан» тăвассишĕн каласа панă. Камит-мыскара техĕмĕпе амаланса пыракан Сăмах алогизмпа асеман патне çитет. Мĕн пуçламăшĕнчен вĕсне çитиччен автор юптару мелне анлăлатса пырать. Ку юптарулăх чăн логикăна, япалан (пулăмăн .) çут çанталăкри, пурнăçри семантикине абсурдлă туни çинче амаланать. Кăмăла йĕкĕлтекен çак абсурд Дж.Свифта, М.Е.Салтыков-Щедрина ас илтерет. Çырас йăли вĕсен те çапла: социаллăх енчен питĕ кирлĕ, питĕ пĕлтерĕшлĕ пулăма ку ăстасем те логикăсăр, абсурдлă, шўт енчен пăхсан чĕрне хури тĕшне тăман енсемпе çыхаççĕ. Çак вара, шўтли (комедилли) трагедиллипе, синкерлипе çывăх тăнине систерет. Акă мĕншĕн Мучи те шўтлине тăтăрхаллипе, комедиллине трагедиллипе ылмаштарса пырать. «Герой» (герой тени Мучишĕн хушма, иккĕмĕшле май кăна) хăтланкаларăшĕсем кун пек чух гротесклă, шарж евĕр. Тĕрлĕ пулăма сăнлама палăртнă объекта пĕр-перинпе кĕтмесле çыхăнтарать сатирик, абстрактлă ăнлава конкретлăх картне лартать. Çак мел Мучи публицистикин чи тĕп енĕсенчен пĕри. Хăйĕн шалти, эстетика тытăмĕпе вăл кĕмĕл ĕмĕрти поэт-писателе, уйрăмах Маяковский сатирине аса илтерет. Вырăс çыравçисен унччен те асемантизаций кăмăлласси йăлара пулнă. Гоголь, Салтыков-Щедрин, Чехов тупнă поэтика кĕмĕл ĕмĕрте, ун хыççăнхи тапхăрта сатирăллă поэзие (аса илĕр-ха Маяковскин «Хăнкăла», «Мунча» драмисене, «Прозаседавшиеся» сăввине!) нумай енĕпе сĕтеклентернĕ.

Мучин фельетонĕ-калавĕ кĕç-вĕç арканас семантикăпа логикăна градаци техĕмĕпе хĕмлентерет. Градацийĕ хăй вара пĕр йышши пулăмсем (детальсем, событисем, эпизодсем...) пĕрин хыççăн тепри черетленсе, майĕпен ўссе, капашсăрланса кайниччен тымарланать. Ку капашлану-черетленў яланах типлă сăнар хывма пулăшать темелле. «Чее Еххĕмре» те писатель уйрăм çын кахаллăхне çеç питлемест, халăхри кив шухăш-ĕмĕтлĕ çынсен сăнарĕсене типлать. Çавăнпа та уйрăм тăран, хăйне тĕллĕн характер мар, халăхри тўнтерле шухăш-ĕмĕтлĕ çынсен представительне сăнласси, ăна халăхăн пĕр сийĕ пек хакласси, сăнара нравоописани сĕмĕ парасси кирлĕрех сатирика. Гоголь те çаплах мар-и-ха? Вырăс çĕр хуçисем

хушшинче тем тĕрлĕ çын та асăрханă вăл: Собакевич та, Плюшкин та, Ноздрев та... Вĕсенче вырăс пурнăçĕн хăйле тăрăмне, унашкал çынсен йышне, кулленхи ĕмĕт-сунăмне, тӳнтерне пĕр тĕвве пуçтарса сăнарланă. Мучи те çав тĕллевпех ĕçлет. Алогизм еккине курăмлăрах тума калавра тĕлĕк мелĕпе усă курать вăл, пулман (е пулма пултарайман) ĕçе пулма пултараслăн ӳкерсе парать. Чип-чипер, пăтăрмахлă сыпăнса пырас сăмаха юмах еккипе ярать... Тата тепĕр ен: публицист пулнă май, хайлавра (ытти калавĕсенче те çав мехелех тĕпре ун) çĕннипе киввине питрен пит çапăнтарнă. Ку та ăна парадокс, гротеск, алогизм мелĕсемшĕн кирлĕ. Калас сăмахне вара халап çапнă чухнехи пекрех тытса пырать юморист, халап пекех вĕçлет ăна. Калăва (повествование) йĕркелемелли тĕп май — парадокс уншăн, ун таппине ас туса пынипе Сăмах екки хиврe сыпăнса каять, вулакан тимлĕхне сӳнме памасть: 1) карчăк мар Еххĕм, вилмелле пек; 2) хăй вилесшĕн иккен-ха, чĕри вилесшĕн мар; 3) пывă арçынсенчен пĕри каçару ыйтать, «хĕненĕ те пулĕ» тет; 4) халăх ĕçĕпе çӳрекенсем калаçаççĕ: вилме пĕр-ик эрне тăхтанă пулсан хамăр та пытарăттăмăр... Кунашкал, градациллĕн черетленес пулăмсен ретне Мучи çав тери ăста йĕркелет. Хуçлăм-авкаланчăксем калавăн шӳтлĕ интонацине ӳстерсех пыраççĕ, хĕрӳлĕхне хиврелетеççĕ. Пĕр сыпăкран теприне шухăш ирĕклĕн куçать, çавна кура ӳстерсе калани те вырнаçуллă, хайлавăн жанр ăшчикĕпе килĕшӳллĕ. Калуçă чĕлхи-пуплевĕ кунта çырнă текстри пек мар, сăмах вĕççĕн каламалли текст хапипе калăпланса пырать. Калăпланса пырать тени ăнсăртран мар, хыврăнса çирĕпленнĕ пуплев йĕрки-шывне пачах картмасть Мучи. Калас сăмах ак халь, шухăш çуралса, амаланса, туратланса вăя кĕнипе пĕрле тупăнса пыни кирлĕрех публициста. Калăва йĕркелекенĕн пуплев екки уçăмланса, ӳсĕмленсе тăни. Сăмах май каласан, Мучишĕн кăна та мар, ытти чылай ăсташăн та кăмăллă кунашкал ĕç мехелĕ. В.Игнатьевпа Хв.Акивер те, И.Тăхтипе Хв.Уяр та, М.Федоровпа К.Иванов та ытараймаççĕ чăваш литературин никĕсĕнче тăракан çак поэтикăна. Вĕсемшĕн те вулакан (итлекен) куçĕ, ăсĕ (чĕри) умĕнчи сăмах (шухăш) таппи илĕртӳллĕ. Çырнă текстрипе танлаштарсан кунта ăсталанă сăнлăхсăнарăн, калăвăн, ӳкернĕ сăнсен курăмлăхĕ самай пысăкрах. Чăн та, кунашкал чух риторика мелĕсем пысăккăн, калăплăнрах курăнса каяççĕха: калас шухăш-кăмăл пĕрре илтнипех ăнланмалла пултăр, илтекен чĕрине витертĕр тесе тăрăшать сатирик. Градаци мелĕ те (ĕç-пуç таппи, событисен черечĕ ретрен рете сыпăнни, гротеск хавалĕ тупни) пĕччене тăрса юлмасть. Л.Агаковăн сатирăлла хайлавĕсенче, Хв.Уяр прозинче, М.Илпекĕн "Хура çăкăрĕнче", Л.Таллеровăн публицистикăллă повеçĕкалавĕнче куратпăр çакнашкал ĕç хапине. Анчах кунта та градациллĕ çак поэтика калуçă сăмахĕ е шухăшĕ çине таянать, ун аталанăвĕпе çураçса пырать. Çапла туса чăваш çыравçисем пурнăçăн социаллă енĕсене тупаççĕ, типлă сăнарсем калăплаççĕ, эпосăн илемлĕх шăнăрне тĕреклетеççĕ.

«Чышкă тытăмне» те çаплах çырнă Мучи, юмахланă пекрех хайланă. Сăнланнă ĕç-пуçа ытарлă халап-юмах пек ăнланма кирлине ас тутарать унта çыравçă, анчах ун социаллă енĕсем çине те, чăн пулни çине те пусăм тусах хăварать: «Юмах ятăм — юптартăм, пĕр сăмах та суймарăм». Юмахла каласси, «тĕлĕклесе» çырасси — писателĕн чи кăтартуллă мелĕсенчен пĕри. Сăмахăн çапла энерги тупас хевтине Мучи халăх ăнланăвĕ-ĕненĕвĕнченех илнĕ. Халапласа каланине ахальтен мар чăвашсем юмах ярать, юмах çапать теççĕ. Юмах-халапăн кунашкал

пĕлтерĕшĕ кулленхи, йăлари каласура ытларах тупăнать. Юмах тени кун пек чухне жанртан ытла калаçу интонацине, сăнланă событисем мĕнле сыпăннине кăтартать. Апла-тăк, нациллĕ сăмах культурин пĕр енĕ çинчен каланиех ку. Тăхти пекех, Мучи те чăвашсем яланхи, практика пуплевĕнче хăйсене мĕнле тыткаланине тĕсерех парать. Куна ăнкарнă студент хăех сисĕ: наци литературин сăнарлă вăйĕ фольклорта кăна мар, халăхăн кулленхи чĕлхинче те тупăнать иккен. Юмах-халапĕ те вĕсен фольклор капашлĕ çеç мар, стиль мелĕ, поэтика хатĕрĕ вырăнне те. Каланă сăмахăн халапланас екки сăнарлă пуплеве хăйне сăпатлăн ўтлентерет, чăннипех нациллĕ тутăпа техĕмлентерет. Ку вара сатирикăн (Павловăн та, Тăхтин те) тĕпре герой е событи мар, ун çинчен калакан Сăмах тăнине кăтартать.

ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Мучин «Тĕшмĕш чăпти», «Мĕскĕн Упанкка», «Чее Еххĕм», «Юлашки уявçă» калавĕсене вуласа тишкерĕр: пулманнине пулнă пек кăтартни унта мĕнле событисем çине тиенет; çав событисем градациллĕ майпа черетленни сатирика мĕн тума кирлĕ?

2. Юмористăн юмах-халап структуриллĕ калавĕсене суйласа илсе сăнăр — халап евĕр содержани калăва йĕркелеме епле пулăшать?

3. Кунта асăннă е ытти калавсенчи Калуçă сăнарне тишкерсе доклад çырăр. Тĕллевĕсем: юмах-халапăн, тĕлĕкĕн калăва сыпса ярас пĕлтерĕшĕ, ресемант градациленсе пыни Сăмах таппине ўстерсе тăни, Калуçăн типлă, чăн чăвашла уйрăмлăхĕсем т. ыт. те.

## Ресемантпа алогизмӑн сӑнарлӑ пӗлтерӗшӗ. Абсурдӑн жанр функцийӗ. Диалог

Паллах, хальтерех асӑннӑ мелсем ытти стиль хатӗрӗсемпе те тачӑ ҫыхӑннӑ. «Чышкӑ тытӑмӗнче», тӗслӗхрен, чылай сӑнарлӑ ҫаврӑм, фразема, икӗ-виҫӗ пӗлтерӗш тупать. Ҫавна пула уйрӑм сӑмахӑн поэтика вӑйтармӑшӗ ӳссе, сарӑлса пырать. Акӑ ҫӑкӑр ҫи фразема: нимрен малтан тӳрӗ пӗлтерӗшпе ӑнланмалла ӑна — «чӑваш ҫӑкӑр ҫиейми пулнӑ». Куҫӑмлӑ пӗлтерӗш те кирлӗ шухӑша ӑнланма — хайне хӑй тӑрантайми пулнӑ иккен чӑваш ҫынни. Кӗҫ писатель патак ҫитер тӗслӗхе ӗҫе кӗртет, вӑл та икӗ функциллӗ: 1) хӗне, ҫап; 2) хӗн-хур кӑтарт, асап кӳр. Ытти ҫаврӑмсене те ҫыравҫӑ тӗрлӗ сӑпатлӑ тӑвать: хӗнесе «хӗп-хӗрлӗ юна ӳкереҫҫӗ» чӑвашсене Чышкӑ тарҫисем. Хуҫине чӑваш «хӗп-хӗрлӗ тара ӳкни» пирки хыпарлаҫҫӗ. Кунта ӗнтӗ контаминаци йӗрки тӗле килет: икӗ-виҫӗ тӗслӗх пӗр тӗвве пӗтӗҫет, вӗсенчи сӑмахсем пӗр-пӗрин вырӑнне йышӑнаҫҫӗ: хӗп-хӗрлӗ юна ӳк — хура тара ӳк — хӗп-хӗрлӗ тара ӳк. Е татах та — шыва кӗрт тени те каламбур еккине парӑнать: 1) тӗне кӗрт пӗлтерӗшлӗ пулса тӑрать; 2) тӳрӗ пӗлтерӗшне те упраса халӑха Кӗтне, Атӑл, Ҫавал шывӗсене хӳтерсе кӗртнине ас тутарать. Сӑмах-юмаха ҫапла каламбурласа, вылятса пырас меле «Чышкӑ тытӑмӗнче» ҫеҫ мар писателӗн, пур калавӗнче те куратпӑр. Асӑннӑ хайлава сатира ӑсти 1929 ҫултах ҫырнӑ, каярахпа вара Сӑмаха «вылянчӑк», чӗрӗ вӑй парасси унӑн тата уҫҫӑнрах палӑра пуҫлать. Мӗн аталаннӑҫемӗн, пӗр сӑмаха тепринпе ӑнсӑртран пек ҫыхӑнтарасси, фразеологизмӑн сӑнарлӑ тытӑмӗнче логикӑна хирӗҫле туртӑмсем тупасси, куҫӑмлӑ пӗлтерӗшлӗ ҫаврӑмӑн тӳрӗ пӗлтерӗшне тупса ҫутатса ярасси, ун арканнӑ семантикине кирек хӑҫан та чӗлхен авалхи, нациллӗ саккунӗсемпе тутлӑхлантарасси Мучие ытларах та ытларах илентере пуҫлать.

«Юлашки уявҫӑ» калав геройӗ мункуна ӗлӗкхиллех уявласшӑн антӑхса ҫӳрет, анчах ялта ун кӑмӑлне уякан пӗр ҫын ҫук, пурте ӗҫе саланнӑ. Юлашкинчен кӑна пӗр пӗчӗк, хивре ӑслӑ ачана тӗл пулать вӑл.

— Христос чӗрӗлнӗ, — тет савӑнса.

— Чӗрӗлнӗ пулсан типӗтес пулать, — хуравлать лешӗ.

Е тата:

— Христос воскрес...

— Кӑвас чӗреслетсе, — тӑрӑхлать пӗчӗкки.

— Воистину воскрес...

— Вунвиҫҫӗм воскрес, — амалантарать ача каламбур таппине...

Кун пек ресемант калавсенче тӑтӑшлансах пырать, тӗрлӗ майлӑ ахрӑмланать. Калу вара ӳсӗмленсе пыракан, майӗпен гротеск енне тапакан интонаципе пуянланать. Ресемантшӑн тивӗҫлӗ майсен шучӗ вӗҫӗмех ӳсет, шавах расналанать. Чӗлхепе пуплев хатӗрӗсем каламбурланни событисен асемантикипе пӗрлӗхленет. Пӗр событи теприне гротескласа пахалани шухӑш таппине те логика йӗркинчен пӑрса ярать. Сӑмахӑн сӑнарлӑ валентлӑхӗ (тӗрлӗ йышши, поэтикӑллӑ ҫыхӑнӑва кӗме пултарасси) халиччен пулман е пулма та пултарайман пек енсемпе вӑйланать. Сӑмах вылянӑвӗн «театрӗ» теме пулать ку мел ҫинчен. Ахальтен мар Мучи артистра ӗҫленӗ, театр пирки шухӑшланӑ. Диалог, диалог майӗсемпе ӑсталанӑ фраза, текст сцена ӗҫӗнче мал вырӑнта тӑмалла тесе шутланӑ-тӑр вӑл — диалог мелӗ тӗпе тухать вӑл хайланӑ калавсенче. Вӑл, кунсӑр пуҫне, Сӑмаха театрласа вылятас мелпе аван ҫыхӑнать. Ав мӗншӗн ун

пултарулăхĕнче калу мехелĕ мала ÿкет. Сăмаха авкаласа, кукăртса, вылятса пыракан Калуçă кунта — тĕп герой. Пур событие те, пур героя та вăл хушма, иккĕмĕшле пĕлтерĕшлĕ тăвать.

Документлăх юптарулăхпа килĕшÿллĕ, ку — кулăшпа çураçуллă. Анчах Сăмах вылявĕ пирки асăнни ирĕксĕрех тарăн шухăша ярать. Сасăсен вылявĕ, ассонанссемпе аллитерацисем, еверлев сĕмахĕсем фольклорта та нимрен малтан халăх юррисенче аван палăрса пынă. Чĕвĕл-чĕвĕл чĕкеç, кăлтăр-кăлтăр урапа, нарт-нарт кăвакал йышши тĕслĕхсем ача-пăча юрри-сăввисенче, шÿчĕ-халапĕнче час-часах тĕл пулнă. Ăнланма йывăрах мар — ача-пăчана илентерекен Сăмах авалтанах выляпчăк кăна мар, ÿкерчĕклĕ, курăмлă хывăннă. М.Федоровпа К.Иванов ку хатĕр-хĕтĕре эпикăллă поэзире те усă курма пулнине ĕнентереççĕ: «Хайхи-майхи арçури», «Хура лаша ан хартлат»... («Арçури»), «шалт-шалт тыллăм, шалт тыллăм», «хурлăх, хурлăх, Михал тус» («Тимĕр тылă»)... Мучи вара çак сĕмлĕ поэтика сăвă-юрăшăн çеç мар, юморпа иронишĕн, сатирăпа сарказмшăн та юрăхлă пуласса шантарать.

Тата тепĕр ен. Каламбурпа ассонанссене Мучи пĕр-пĕччене хăвармасть, вĕсем событисен абсурдлăхĕпе, алогизмĕпе, тĕрлĕ пулăмсен арканнă семантикипе тымартан çыхăннине асăрхать. Пĕрлех, ресемантне те, каламбурне те, йăли-йĕркине те сатирик пĕр йышши пулăмсен ÿссех пыракан ретне тăрататъ... «Чее Еххĕм», ав, пĕр хут çеç мар, темиçе хут та вилет; «Чышкă тытăмĕнчи» геройсем хăйсен хуçи патне темиçе хут та чупса пыраççĕ, кашнинчех ресемант йĕркипе амаланакан фразема, сăнлăх, ваттисен сăмахĕ тупăнать. Пĕрин хыççăн тепри сыпăнтарса пынă событисем, эпизодсем, мелсем, фразăсем, геройăн тыткаларăшĕсем... градаци мелĕпе ÿссе пысăкланаççĕ, гротеска (капашсăрлатăва) çитеççĕ. Кульминаци вара сăнланă пулăмăн, тиркештернĕ ĕç-пуçăн (енĕн, паллăн, йăлан...) абсурдлăхĕ патне пырса тухать. Çапла вара, публицистăн (ку та вăл унăн яланхи ĕç хапи) пĕтĕмлетÿ, вывод тума вăхăт çитнĕ. Игн.Ивановăн прози те çав туртăмлă. Анчах Октябрьчченхи çыравçă жанрĕн иккĕмĕш пайĕ (действи) хăш-пĕр чух кăна икĕ-виçĕ тĕслĕхрен тăрать, Мучие вара действи аталанăвне пĕр йышшилĕх никĕсĕ çинче хайласси яланах кирлĕ. Прозаиксем иккĕшĕ те событисен (енсен, пулăмсен, пуплев хатĕрĕсен...) черетленĕвне çырав (описани) тума хута яраççĕ, çыравра юптарулăх вăрттăнне уçмалли тĕрлĕ условисене тупса палăртаççĕ. Питлесе сăнланă пĕр событие анчах кăтартни ăнăçсăр пуласса чухлать-тĕр Мучи, пĕр йышшилĕх мелĕ калав-очеркра, фельетонра йăла-йĕркене, кулленхи пурнăçа (бытоописани, нравоописани) çыравласси енне каять. Çавна пула шухăшлавĕ те ун этос еннерех сулăнать. Шÿтпе пĕр йышшилĕх мехелĕсем пĕр тĕвве пĕтĕçеççĕ, повествование пĕрлехи интонаципе сĕтеклентереççĕ. Жанрăн структури кунашкал прозăра Калуçă (Повествователь) сăнарĕ «хуçаланать» теме май парать.

Акă «Тĕшмĕш чăпти» калав: Ухливан хăй çĕрне пуянсем туртса илесрен хăрать, суда кайма хатĕрленет. Анчах тĕшмĕшле темле ĕненÿ те чăрмантарать ăна: «тĕлĕкре эрех ĕçсен хуйхă пулать», «сулахай ура çине пуссан инкек пулать», «çăпата кантри малалла çыхăнсан — телей пуласса, хыçалтан çыхăнсан — ĕмĕтленни пулаймасть теççĕ»... Кашни утăмнех çапла «йĕрлесе», ăнлантарса пырать этем. Вăл йĕрленĕ утăмсен таппи вара градациллĕ хывăнать. Пĕр йышшилĕх саккунĕпе черетленсе пыни кулăш тÿпине вĕççĕрех вăйлататъ. Пĕрлех, этеме пĕтĕмĕшле хак

та парать сатира ăсти: мĕнпур çут тĕнче çине «çапла куçпа» пăхать-мĕн герой, арăмĕн, ял-йышĕн, обществăн, историн таппи-йĕркине çапла кăна хак парать вăл: 1) «виле пулассине систерет пулас», тет тĕлĕкре çурт курни мĕне пĕлтерессе тĕшмĕртнĕ пек пулса; 2) «çын хĕнесен, тĕлĕк кураканни чирлет», — тенине илтнĕ вăл; 3) «шăши тум-тир таврашне çисен» «ырра мар» пулнине ĕненет... Кунашкал градацин пĕр йышшилĕхĕ, тĕрлĕ (пĕрешкелтерех) событисем, эпизодсем ... тăтăш черетленсе пыни Ухливан чун тăрăмне хаклама питĕ пулăшать. Калас пулать, пĕрешкел пулăмсем черетленни кирек хăçан та ĕç-пуça панорамăллăн, нумай енлĕн, эпикăллăн, анлăн хаклама май кӳрет. Кунта та ав: уйрăм çын хăтланкаларăшĕсем пирки кăна пуçне çĕмĕрмест Мучи, халăхри пĕрлехи йăла-ĕненĕве, тĕшмĕшле философие нумай сăпатлăн кăтартать, ăна халăхри пĕр сийĕн тавра курăмĕ пек ӳтлентерсе сăнарлать. Çавна пула герой та пĕтĕмĕшле, типологиллĕ сăн-сăпат тупать, нравоописаниллĕ сăнар пек калăпланать. Çапла татса калама юрать: градациллĕ черетленӳ, пĕрешкел событисемпе эпизодсен тăтăшлăхĕ прозаика пурнăçа эпикăллăн ӳкерме кирлĕ. Уйрăм çыннăн уйрăм шăпи кăсăк та мар юмористшăн. Этемре ытти çынсемпе пĕр пек енсене, общинăлăхăн тĕрлĕ палăрăмĕсене курасси пĕлтерĕшлĕрех уншăн. Пĕр çынра пин-пин этем сăнĕ ӳтленни тăтăшланакан черетлĕхе, градацие тĕрлĕрен тĕрлĕ функцисем кӳрет. Урăхла каласан, Мучи хăй фельетонĕ-очеркĕнче этологиллĕ шухăш хапи калăпласа пырать. Акă герой арăмĕн сăнарĕ — упăшкипе пĕр халлăрах вăл: «сăмсу тăррине хыçмалла марччĕ», «сулахай уру çине тăмалла марччĕ»... — канаш парать мăшăрне. Çуммăн пыракан икĕ йĕр курăнса каять хайхи: Ухливан шухăш-ĕненĕвĕ, ун ăшри туйăм-сисĕмĕ тата арăмĕ ун тыткаларăшне «тăтăшласа» хак пани. Параллеллĕн аталанса пыракан çак мелсем ял çыннисен хăш-пĕр ушкăнĕсене анлăн сăнлама тата ытларах пулăшаççĕ. Ӳкернĕ картинăсен пĕтĕмĕшле, пĕрлехи вăйĕ ӳсет, эпикăллă таппи çивĕчленет.

Паллах, жанр хăйне евĕрлĕхне те пырса тивет ку. Публицистикăллă калавĕ-фельетонĕ писателĕн виçĕ пайлă терĕмĕр: паспорт, действи, мораль. Градаци те, черетленӳ те кунта яланах иккĕмĕш пайĕ çине тиенет, пĕрремĕшĕшĕн документлăх пекки çинче хывăннă паспортлăх та çителĕклĕ. Прозаик хăй сăнарланă пурнăçăн эпикăлăхне, эппин, шăпах действи мехелĕпе туллинрех палăртать. Пĕр йышшилĕх, панорамăлăх функцийĕ хăйне тĕллĕн çеç тĕл пулмаççĕ, юптарулăх поэтики Мучие — сăнланă фактсене (пулăмсене...) объективлă карта лартма пулăшать, юмориста хайлавсенчи субъективлăхран хăтарать, унта пафос тӳпи ӳссе каясран сыхлать. Гротеск та çакнашкал лару-тăрура кулленхи пурнăçăн пĕр-пĕр енĕ парадокса çавăнма пултарассине аса илтерет. Ял пурнăçне çапла, çырав мехелĕпе сăнласси Мучишĕн кăна мар, М.Илпекшĕн те, Л.Таллеровшăн та... ырă. Вĕсем те градациллĕ событисем ретрен рете ӳссе пынине кăмăллаççĕ, вĕсене те çакăн йышши ĕç хапи сăмах еккине иронипе тутлăхлантарма кирлĕ. Кунашкал поэтика писательсене хăш чух нумай сăмахлăх енне туртать, теплерен сăрсене перекетсĕр тыткаласси патне çитерет. Йăла-йĕркене (чӳк туни, шыв вăрлани — Илпек хайлавĕсенче), обращениллĕ çаврăмсене рефренлăн усă курни (К.Иванов, «Тимĕр тылă»), халăх ĕненĕвĕ ярăмăн-ярăмăн явăнса пыни (Арçури, Хĕветĕре хăваланăçем, тĕрлĕ сăпат йышăнни — М.Федоров) т. ыт. те — пурте вĕсем шӳтлĕ мар лару-тăрăва шӳтпе сăнарланă чух усă курнă

стиль мелĕсем. Вăл кăна та мар, Мучи калавĕсенче этнографиллĕ очерксенче палăрнă йышши Калуçă пурри те сисĕнсех тăрать. Тăтăшах вăл хăй хывас текста тикĕс тытса пыма пулăшакан риторика хатĕрĕсене хута ярать: «Тур калашле виççĕ», «çапла çирĕм кун ытла пурăнса...» т. ыт. те.

Асăннă поэтика хатĕрĕсемпе ĕçлени Мучие те, Илпеке те, Таллерова та калăва (повествование), сюжета хăйне евĕрлĕ ăсталама хистет. Иронииллĕ интонаци кунта нимрен ытла Калуçăна тивĕçет. Анчах пурнăçăн социаллă енĕсем, общество аталанăвĕн палăрулăрах уйрăмлăхĕсем çине пусăм туни ăна субъективлăх кăшкарне лекме памасть. Мучи пултарулăхĕнче çак туртăм уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. Вăл яла, хулана, тӳнтерле пĕр-пĕр йăлана, пăсăк туртăма... ӳтлентермелли мел пулни те çителĕклĕ çыравçăшăн. Ахальтен мар чылай чух событисен логики унăн профанаци картинелле сулăнать. Илер-и, акă, «Промфинплан» калава. Никĕсре — этем хăй большевик пулнинчен хăраса ӳкни. Ăна писателĕн каллех пĕр йышшилĕх феноменĕпе тӳрре кăларса пымалла. Ак епле çырать юморист хăй калавне: герой 1) арăмне вăрçать — мĕншĕн вăл, арăмĕ, чăпта çапса план тултарать? — (большевиксене пулăшать эппин); 2) хăйне ӳпкелет — совет çĕрне аш-пăшлă тăвассишĕн вырьăх ӳстерет-им вара? — тен, унăн ку ĕçпе пачах аппаланас мар; 3) паранкă тухăçĕ те ытла пысăк — чакармалла; 4) сехете çĕре çĕклесе çапать — ма вăл, сехет, совет вăхăтне шутласа ларать? т. ыт. те. Ĕç-пуç градацилленсе пыни абсурдлă кульминаци патне çитет: пурăнма та тăмасть-мĕн çыннăн. Герой ухмаха ернине психологиллĕ ресемант йĕркипе тӳрĕ пĕлтерĕше çаврăнă. Анчах ытарлăхне те упрасах хăварнă. Эппин пуплев хатĕрĕсен ытарлăх-тӳрĕлĕхне çеç мар, тĕрлĕ ĕç-пуçăн куçăмлă-куçăмсăрне те тивĕçет иккен çакнашкал функци. Икĕ сий тупăнать калав тĕртĕмĕнче: пĕри — пуплев ресеманчĕ: <u>ухмаха ер</u> (айванла хăтлан) фраземăн пĕлтерĕш тĕввине салтни; тепри — психологилле, ăс-тăн, социаллă тыткаларăш ресеманчĕ, герой принципĕсем абсурда тухни. Фраземăпа геройăн социаллă хăтланкаларăшĕ... кутăнла пĕлтерĕш туяннине палăртма Иван Мучи Гогольтен вĕреннĕ. Гротескланă алогизм шухăш энантиосемийĕ патне илсе çитерет, ПУР тени ÇУК тесе çирĕплетни пулса ӳтленет. Фразема, сăнарлă çаврăм, ваттисен сăмахĕ, каларăш ытарлă пĕлтерĕш тупни кирек хăçан та социаллăх паллиллĕ Мучишĕн. Проблема, событи... пĕлтерĕшне «аркатни» жанр никĕсне выртать, хайлавăн шухăш никĕсне калăплать. Ресемантпа алогизм юнашар пулни çавна тивĕç лару-тăру хывасса кĕтет писатель, ирĕксĕрех тĕрлĕ оппозицисен «çапăнăвĕ» патне (публицистикăллă прозăн саккунĕ) пырса тухать. Час-часах ку тĕлĕшпе тĕшмĕш, кив йăла, çĕнĕ саманан тӳнтерĕшĕ кăтартуллă. Бюрократсемпе кахалсен... философине аркатма публицист тĕрлĕрен штампсене ресемантизацилет. Çавна май, ку тӳнтерлĕхе «таса чунлă», «чĕрĕ куçлă» герой шухăш ăнкарăвĕ урлă пани кирлĕ. Ахальтен-им Гогольпе ача, ваттипе турра ĕненекенпе ача, тĕшмĕшпе пурăннакан вăй питти тата ача... йышши оппозицисем тăтăш тĕл пулаççĕ кунта.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Иван Мучин темиçе калавне вуласа тухăр, вĕсенче сăмах вылявĕ диалогăн шалти сăнарлăхĕпе шайлашнине сăнăр. Асра тытмалли ыйтусем: икĕ текстăн диалоглăхĕ (пароди, интертекст), диалог тата аллитерципе ресемант, диалог тата событисен черетленĕвĕ, диалог Калуçă

сӑмахӗн еккине палӑртни т. ыт. те. Сӑнанӑ уйрӑмлӑхсене анализлесе доклад ҫырса хатӗрлӗр.

2. Мучи калавӗсенчи сӑмахӑн куҫӑмлӑ пӗлтерӗшӗ, выляннӑкла функцийӗ шухӑшӑн абсурдлӑ аталанӑвӗпе епле ҫыхӑннӑ-ши? Шухӑшпа чӗлхе ресеманчӗн пулӑмӗсене тӗпчесе диплом ӗҫӗ ҫырӑр. Теми: «Иван Мучи пултарулӑхӗнчи ресемантпа диалог уйрӑмлӑхӗсем».

3. Мучи калавӗсенчи Калуҫӑн пуплев тыткаларӑшне сӑнӑр, диплом ӗҫӗ ҫырӑр. Теми: «Иван Мучи прозинчи калӑвӑн риторика тытӑмӗ».

**Калуҫăн пуплев тыткаларăшĕ. Ҫырав,
ăна калăплас поэтика. Ирони, ун тăтăшлăхĕ,
публицистикăлăх хевти. Ресемант тĕсĕсем.
Тет, теҫҫĕ... феноменĕ, ун эпикăлăхĕ**

Ресемантпа парадокс, гротескпа алогизм пирки тăтăшах калани пĕр сăмахах вĕтетни мар. Жанр уйрăмлăхĕсене хăйне евĕрлĕ чĕм кĕртет ҫак ен. Калавсен пĕрремĕш пайĕнче (Игн.Иванов пекех) пĕр-пĕр геройпа пĕтĕмĕшле паллаштарать писатель, ун тĕпрех, паллăрах енĕсене тӳрех акцентласа хăварать. Ку ĕнтĕ пĕр йышшиленсе аталанакан событисем валли кирлĕ услови. Ҫав паспорт ҫинче никĕсленет те гротескăн логикăлăхĕ тата алогизм ҫинче хывăнакан хевти. Апла пулсан, Мучишĕн ҫакă паллă: ресемант саккунĕ кирек хăҫан та паспорт паллисем хыҫҫăн вăя кĕрет. Вăхăчĕпе сăнарлăхăн ҫак мелĕ Хв.Уяр пултарулăхĕнче (Мучирен вĕреннипе) йăл илсе каять. Героя писатель, амплификаци мелне тĕпе хурса, тӳрех темĕн тĕрлĕ хак парать, кайран ҫак хака «действие» аталантарнă евĕррĕн уҫса, тарăнлатса пырать. Чăн та, Мучипе Игн.Иванов пек тӳррĕн кăтартмасть ҫыравҫă ҫак «действие», анчах тимлĕ студент «Таната» романра та «паспортра» калани «действире» анлăланнине асăрхама пултарать. Ку уйрăмах Яка Илле, Шахрун, Ивук сăнарĕсемшĕн кăтартуллă. Хăш-пĕр чух Мучин те тӳреммĕн палăрмасть паспортпа ĕҫ-хĕл хушшинчи чикĕ.. Тепрер чух паспорт паллисем ҫук та пек, анчах калав тĕртĕмĕнче вăл шухăш палăрсах тăрать. Алогизм гротескланса пыни, абсурдлă кульминаци хывни вара пĕтĕмлетӳллĕ шухăш калама юрăхлă. Юптару содержаниллĕ жанр тытăмĕ, ҫапла, прозăра вырнаҫуллă пулса тăрать, повествованиллĕ нравоописанипе ҫыхăннă публицистикăллă хайлавсем хывма пулăшать. Кун пек хайлавсенчи пурнăҫа сăнасан, малтанлăха ун прототипĕ ҫук та темелле.

Чăнах та, «Промфинпланри» прототип мĕн вăл? Калуҫă пуплевне тытса, шăнăрласа памалли май кăна. Тăхти пултарулăхĕнчи пекех, кунта та прототип — пуплев йĕрки-шывĕ. Тăхти вăлтса, юптарса калаҫни куллен кунхи сăнарлă калаҫу еккине аса илтерет. Мучин прототипĕ урăхрах — ун вăйтармăшĕ штампсен, трафаретсен, бюрократ хăтланăшĕсен... абсурдлăхĕнчен тапса тăрать. Абсурдлăхăн чĕрĕ чĕмĕ калава та, жанра та, сюжета та шăнăрласа тăрать. Сăмахăн сыпăнса каяс мехелĕ сказ мелне мала кăлара пуҫлать. Мучи пултарулăхĕнчи Калуҫă раснах хăйне евĕрлĕ этем. Ăна ытти ҫыравҫăсен Калуҫисемпе пăтраштараймăн: лексика мар, ҫĕнетнĕ синтаксис кирлĕрех ăна, сăмахăн пĕлтерĕшĕ мар, ун «чĕринче» пытанса тăракан чĕрĕ, халь-халь выляса каяс вăйĕ хаклăрах. Тимлĕ студент сисет — прототип никĕсĕнче темле (пурне те паллă) цитата, сăмах, ҫаврăм выртать. Такам урăххи каланă текст. Калуҫă вара ҫав текстăн пĕрлĕхне аркатас тĕллев лартать, унтан тăрăхла пуҫлать. Вулаканĕ, хайхи, икĕ текст (ҫĕнĕрен туни тата «цитатăлани») хушшинчи (интертекст) ҫыхăнусене тĕсет. Интертекст пулăмĕнчен вара (икĕ текст хутшăнăвĕнчен, сăмахран «Ача ҫуралнă каҫ», «Ҫичĕ ҫыру» пек калавсенче) ирони шăранса тухать. Тахҫан Калаканни (унчченхи текст авторĕ) тата халь Калаҫакани (калăва йĕркелесе пыраканни) сăнарлăн шайлашаҫҫĕ, пароди саккунĕсем хывăнаҫҫĕ. Хайлавăн пĕтĕмĕшле шухăшĕ абсурд пулса тăрать темелле пек, анчах ҫав абсурда вăй парса тăраканни — икĕ текстăн диалоглăхĕ. Кивĕ текст ҫĕнĕ текстпа сăнарлă, диалоглă ҫыхăнăва кĕни Мучи

пултарулăхĕн чи шалти, чи вăрттăн кĕтессисенче пытаннă. Анчах писатель тăтăшах тĕрлĕ диалогсем хывни те ăнсăртран мар. Такам такампа калаçни, сăмах театрĕ хывăнса пыни питĕ кирлĕ сатирика. Кун йышши стиль ӳтпĕвĕнче те жанр, сюжет, калу хăйнеевĕрлĕхĕ палăрса пырать.

Паллă: алогизмпа ресемант, парадокспа абсурдлăх кулленхи калаçура та час-час тĕл пулать, ăна пĕр Мучишĕн кăна паха мел теме çук. Пуплев хатĕрĕсен хăйхаллĕхĕ идея шайне куçать, пĕтĕм хайлавăн структурине витерет. Акă «Ача çуралнă каç» калав: бюрократа ун арăмĕ ача çуратни, ашшĕне пыма ыйтни çинчен хыпарлаççĕ. «Герой» вара арăмне заявлени çырма, çырнă хутне тĕрĕслесен, «ик çĕрте запятой лартманнипе», куçарса çырма хушать. Ку ĕнтĕ калаври пĕр тĕвĕ. Кĕç ачине «пирвайхи заместитель тăвасси çинчен приказ çырма» пикенет, мĕншĕн тесен ку, ун шучĕпе, «тĕнчери империализмшăн сиенлĕ». Çапла май градацин тата тепĕр ăстрăмĕ тупăнать... Ачипе «хутшăнасси» те çапла абсурдлă ун — вăл миçе çултине ыйтать ашшĕ, хушаматне калама хушать, лешĕ чĕнменшĕн кӳлешсе вăрçать. Кунашкал хăтланусем—герой «пурнăçĕнчи» абсурдлăхăн тата тепĕр пусăмĕ. Арăмĕ ăна ӳпкелени каллех тепĕр çавра сыпма кирлĕ писателе... Măшăрĕ уйрăлма шут тытнине пĕлтерсен те хăйĕннипех супать бюрократ: «Пĕччен пурнăç валли смета турăн-и»? — тĕпкĕçлет ăна. Градаци таппи кульминацие çитсен тин пĕлтерет Калуçă: этем ухмаха ернĕ иккен. Анчах та ĕнтĕ ухмаха ернĕ тени — калу (повествовани) мĕншĕн çапла йĕрпе сыпăнса пынине ăнлантарни çеç. Тĕпре — бюрократла пуплеве, ун шухăш-кăмăлне, ун пурнăç йĕркине аркатни. Персонажăн стильпе пуплев тыткаларăшĕ кунта пĕтĕмлетӳллĕ сăнар пулса ӳтленнĕ, çав ӳт-пӳре бюрократсен шухăш екки, вĕсем хăйсене мĕнле тыткалани тĕртĕмленнĕ. Ав епле: объективлă, социаллă ситуацие çыравласа кăтартма йĕри-тавралăха сăнани мар, тĕрлĕ ĕç-пуçа ӳкерни мар (кун пекки вăл Хв.Уяр, М.Илпек, А.Емельянов прозинче тĕл пулать), пĕр-пĕр геройăн арканнă пуплев тыткаларăшне ӳтлентерни те çителĕклĕ. Эппин чĕлхи хăй те пуплев çеç мар кунта. Пысăклатса, ӳстерсе калани, гротеск ĕлки-хапи бюрократ пуплевĕн тыткаларăшĕшĕн кăтартуллă. Ун пирки шухăшлакан Калуçă сăнарĕ вара урăхла мелсемпе калăпланать: хăй калавĕн геройне вăл тăрăхласа хак парать, ухмаха ернĕ тенине вăлтса каламалли май пек ăнланать, персонаж сăнарĕнче бюрократла пĕтĕм системăна тиркештерет. Произведени структури те, хайхи, хăйне евĕрлĕ пулса тухать — бюрократсен пĕрлехи сăн-сăпачĕ йăлтах пуплев тыткаларăшĕ урлă палăрать. Сăмах, унăн таппи кунта чăнласах тĕп «героя» тухать.

Сăмахăн сăнарлă майĕ-мехелĕ, ун ытти сăмахсемпе çыхăнаслăхĕ (валентноçĕ), вăл калу (повествовани) юхăмĕнче мĕнле хавал тупасси тĕрлĕ парадокссенчен килет. Тĕрлĕ пулăмсем шӳтлĕн çыхăнаççĕ, ăнсăртран кĕмсĕрт пĕрлешеççĕ: 1) «Арăм та пур, ача-пăчам та пур, телейĕм вара — çук»; «Хамăн анчах мар, выльăх-чĕрлĕхĕн те телейĕсем çук»; 2) «Качаки те» «60 витре сĕт параканни пулмарĕ, хăямат! Хăй апата тиркемест, улăмпах пурăнать»; Сĕтне «сăра алтăрĕпе парасчĕ хăть», çук « шутлама тăнĕ çитмест» («Телейĕм çук»). Тепĕр тĕслĕх. «...Таçтан учителе тупса пычĕç. — Кала-ха, мĕншĕн пирĕн трактор ĕçлейми пулнă? — Эпĕ пĕлетĕп-и? — Ăна та пĕлместĕн пулсан, мĕне вĕрентнĕ вара сире пысăк шкулта?» («Трактор çурти»). Тĕслĕхсенче персонажсен шухăшĕн хăйне евĕр логики (тĕрĕсрех, логикăсăрлăхĕ, асеманчĕ) ум каять. Пĕрремĕш хайлавра, авă,

сысна йӑхӗ ӑнманнишӗн пӑшӑрханать этем, ҫавӑнтах тата сӑлтавне те тупать: ӑратлӑ сысна ҫирӗм пӑт таран пулӗ те, ҫухалсан инкек-ҫке! — «ҫирӗм пӑт-ҫке тӗш аш ҫухалать». Ку вӑл чӑн чӑвашла психологи темелле — пӗр юрӑра мулкачӑ хӑйне тытсан сунарҫӑсем эрех ӗҫӗҫ, арӑмӗсене хӗнӗҫ, ачисене «шалккӑ» тесе йӗрет... Кун пек сыпӑнса кайнӑ сӑмах-юмах пире ирӗксӗрех нумайсӑмахлӑх вӑрттӑнӗ пирки те ас тутарса хӑварма хушать. Вӑл чылай ҫыравҫӑ-сӑвӑҫа каласшине калас марччӗ тесе хыпӑннӑ чух кирлӗ иккен. Уйрӑммӑнах кун ӑнӑҫлӑ енӗсене Хв.Уяр, М.Илпек аван алла илнӗ, ӑнӑҫлӑ усӑ курнӑ. Анчах та пур нумай сӑмахлӑх та ялан ҫапла тӳрре тухать теейменӗр. Апла пулин те, илемлӗ чӑнлӑха тивӗҫ пурнӑҫ кунашкал хайлавсенче чӗлхе-пуплев тыткаларӑшӗ ҫинче аталанать, чылай чухне чӑвашсен сӑмахлӑ культурине вӑл «пуплевлӗ действи» (речедействие) «пуплевлӗ шухӑш» (речемыслие) пек хаклама май парать. Чиркӳ ҫыннисен уйлав хӑйеврӗлӗхне, ӑс-тӑнпа пуплев йӗркине, кив йӑлапа пурӑнакансен калаҫу мехелне, бюрократсен социаллӑ статусне, вӗсен пуплев тыткаларӑшне т. ыт. те асӑрхать публицистика ӳнерҫи. Ҫакна аркатни-туни чӑваш чӗлхи ӑнӗн, наци шухӑшлавӗн тӗрлӗ енӗсене астусах пыма хистет Мучие. Ахальтен мар ваттисен сӑмахӗсемпе каларӑшсене, тупмалли юмахсемпе ытарӑшсене, юмахри тӗрлӗ ҫаврӑмсемпе халапри чӗлхе пулӑмӗсене писатель тӗрлӗ енлӗ тӗпчет, вӗсенче парадокслӑ майсем шырать. Хытса ларнӑ ҫаврӑмсене чӗртсе ҫӗнӗ ҫыхӑнусем, ҫӗнӗ синтаксис, ҫӗнӗ «логика» йӗркелет. Куна тӗрлӗ очерк-калавран илсе кӑтартнӑ тӗслӗхсем питӗ аван ӗнентереҫҫӗ. Ҫакна кура интертекст пирки ятарлӑ калаҫни те пӑсмӗ.

1) «Иккӗн иккӗнех ӗнтӗ — кӗнекине тупаймасан та, хуплашкине те пулин тупса килетпӗрех» («Трактор ҫурти»). — «Иккӗн-иккӗнех, лашине парса ярсан та·туртине парса ямӑпӑр» тенине ӗҫе кӗртнӗ сатирик кунта. Хайхискер, унччченех халӑхра паллӑ культура тексчӗ ҫӗнӗ текстпа ҫыхӑнӑва кӗрет кунта, вулакан вӗсене иккӗшне те асра тытать. Ҫавӑнпа кӑна кулӑш ҫуралать. Питлевҫӗ ҫырни-туни хӑй ӑссӗн тӑрмашнӑ ӗҫ результачӗ кӑна мар эппин, унччченхи культура текстӗнче упраннӑ пародиллӗ потенцие тупни-хускатни вӑл.

2) Кунашкал ӗҫ мехелӗ «Ҫуралнӑранпа 125 ҫул тултарнӑ хыҫҫӑн кунта килнӗ Гоголь» калавра аван палӑртать. Кулӑш хевтине вӑй параканни кунта та икӗ текст хушшинчи интертекстлӑ ҫыхӑнусем. Ачапа тӗл пулнӑ Гоголь хӑй ҫырнӑ хайлавсенчи персонажсен ячӗпе калаҫать, вӗсен ӗҫӗ-хӗлӗ, ӗмӗчӗ-сунӑмӗ ҫинчен ыйтса пӗлет. Пурӑнаҫҫӗ-и вӗсем халӗ, ҫӗр ҫул ытла иртнӗ хыҫҫӑн? Ача панӑ хуравсем паянхи пурнӑҫпа ҫыхӑннӑ. Икӗ самана ҫыхӑнӑвӗ те ресемант ҫинчех кӗвелӗкленет: ниепле те авланайман Подколесин (Гоголь) паян Агафья Тихоновнӑна «алимент тӳлет» (Мучи); сайра вӗҫен кайӑк Днепр варне вӗҫсе ҫитме пултарӗ тенӗ те (Гоголь), паян Днепра та пӗвеленӗ-мӗн (Мучи); «Вилӗ чунсем» поэмӑра вӗҫен тройкӑна мухтав юрри юрланӑ (Гоголь), халӗ ак никам та тройкӑпа ҫӳремест, автомобиле кӑмӑлларах параҫҫӗ ҫынсем (Мучи) т. ыт. те. Ку тӗслӗхсем Мучи пултарулӑхӗнче яланах тӗрлӗ культурӑсем пӗр-пӗринпе «ҫамкаран ҫамка» (А.Эсхель) ҫапӑннине кӑтартаҫҫӗ. Унран та ытларах — вырӑс генийӗ хывнӑ илемлӗ тӗнче хӑйшӗн ҫӗнӗ перспектива тупать. Ку та ӑнсӑртран мар, тӗрлӗ алогизмпа асемант вӑйтармӑшне алла илнӗ Гоголь Мучие те ҫавна ас тумах, вырӑна хурса парадокс, пароди хайламах йыхӑрать. Пароди ӗлки-ӗренки ӳнер чунӗ тупасси вара иккӗшӗнчен те килет — аслӑ сатирик

поэтикине çиелтен кăна курса мар, хуппине катсах тĕшĕленĕ иккен Мучи. Ун мелĕсемпех ĕçлет вăл: алогизм еккине пысăклатать, пуласла мар ĕç-пуçа пулнă тăвать, фантастикăлла мехеле çĕнĕ тĕс кĕрет, гротеска илемлĕ аталану ирĕкĕ тупса парать. Кун хăйне уйрăмлăхĕ ытти хайлавра та уçăмлă. «Ача çуралнă каçра» — чипер ăслă-пуçлă çынсен шухăш йĕрки тата бюрократланса виçерен тухнă чиновниксен ăн таппи; «Чышкă тытăмĕнче» — патша саманинчи асап-тертлĕ чăнлăх тата хальхи самана; «Чее Еххĕмре» — кив саманаран хăпаймасăр юла юпса аптăракан герой тата паянхи пурнăçăн ўсĕмлĕ, çине тăруллă таппи т. ыт. те. Пуплев-чĕлхе тени эппин чăваш литературишĕн питĕ пысăк пулăм, ун сăнарлă содержанийĕ питĕ тарăн. Çавна май, М.Федоров, И.Тăхти, Иван Мучи, Хв.Уяр, М.Илпек, çавнашкал шўтлĕн çыракан ытти ăстасен пулатрулăхне тишкернĕ чух чăваш çыннисен кулленхи калаçу уйрăмлăхĕсене тĕпе лартма тивет. Литература тымарĕсем фольклорта кăна мар иккен, ун сăнарлă никĕсĕ яланхи, куллен куври пуплевре те тупăнать. Чăвашсен шўтлĕ прози-поэзийĕшĕн, драмишĕн вара çак уйрăмлăх-чи пысăккисенчен, чи палăруллисенчен пĕри.

«Чышкă тытăмĕ» калава тата тепĕр хут сăнаса пăхар-ха. «Икĕ чĕреллĕ» пулнă тет Калуçă Чышкă пирки. Фраземăн куçăмлă пĕлтерĕшне аркатса тўрĕ пĕлтерĕш картне лартать вăл. Икĕ чĕреллĕ тени халăхра 1) пуçтах, чараксăр, 2) темле хуйха-суйха та чăтса ирттерме пултарать пĕлтерĕшлĕ. Ку пĕлтерĕшсем палăрмаççĕ Мучи çырнинче, анчах вулакан вăл пĕлтерĕшсене шута хумасăр юлмасть, мĕншĕн тесен ăна мансан каламбур саккунĕ те ĕçлемĕччĕ. Писатель кулăшне ăша илме сăмаха вăл çапла вылятни питĕ кирлĕ. Е тепĕр тĕслĕх илер-и? «Çăкăр çиейми пулнă», — пĕлтереççĕ тарçи-тĕрçисем Чышкăна чăвашсем пирки. «Çăкăр çи» тени чăвашла тăранса пурăн, тăранса пурăнмалăх ĕçле пĕлтерĕшлĕ. Кунта та прозаик-юморист тўрĕ пĕлтерĕшлĕ çыхăну йĕркелет, анчах ăна çийĕнчех тепĕр фраземăпа çуммăнлатать: çăкăр çиейми пулнă пулсан, патак çитерес, хушать Чышкă. Каллех сăмахăн вылявĕ, каламбурлăхĕ ўкет тĕпе: çăкăр (патак) çи — тăранса пурăнмалăх ĕçлеме пултар — хĕн-асап (çапни-хĕненине) тўс. Сатирине юморлăрах, юморне сатирăллăрах хĕмлентерсе пыракан ăсташăн субъективлăхран хăтăлас тĕллев — чи тĕп вырăнта. Интертекст саккунĕсемпе выляни, пуплев хатĕрĕсене çĕнĕлле «çутатса яни»... — ку пулăмсем кашнинчех вулакана, итлекене питĕ пысăккăн шаннипе çыхăннă. Мучи пĕлет — фраземăн ку е леш пĕлтерĕшĕ чăваш вулаканĕсене тахçанах паллă, Гоголь хайлавĕсене те тахçанах «шĕкĕлченĕ» вĕсем, çĕнĕ (социализмлă) пурнăç тепĕр чух бюрократсене пула сулăнкăна кайнине те аван чухлаççĕ. Апла пулсан,калăва вулаканпа пĕр шайра тытса тăмалăхĕ мала ўкет писателĕн. Сăмах-юмах пушша каяссинчен шикленмест прозаик. Акă «Промфинплан» калав-тĕрленчĕкри персонаж (сатира объекчĕ пулса) хăйне хăех пĕтерет, асемантика таппипе аркатса пырать. «Ача çуралнă каç» калавăн сăнарлă идея никĕсĕ те çаплах, «Макар Сидорович», «Чее Еххĕм» калавсенче те куратпăр ăна. Тата тепĕр сĕвем — вулакана шаннăран, чĕлхе-пуплев хатĕрĕсене пĕрмай чĕртсе тăнăран, событисен логикине аркатсах пынăран Мучи прози çав тери динамикăллă пулса тăрать, ун хăвăртлăхĕ, куçăмлăхĕ ўсĕмленет. Ку ĕнтĕ — тĕнче сатирин тĕпри палли, ун саккунĕсене прозаик алла нумай енлĕн илнĕ.

Фантастикăлла, пулмасла событисене кăмăллани те çавăн çинех

шак хурать. Юмахларах лару-тăру калавра публицистикăллă парадокс «турти хушшине» тăрать, чăвашăн Сăмаха вылятса калаçас ĕмĕртен килекен йăлипе çураçать. Çакă вара малтанлăха ăнсăртран пекрех те туйăнма пултаракан шухăш патне те çитерет. Чăваш литературинче (уйрăмах эпикăллă поэзипе прозăра, драмăра), публицистика мелĕ-мехелĕ, илемлĕ ăс-тăнăн публицистикăлла екки чи тĕпре тăракан паллăсенчен пĕри иккен. Çавăнпа та, тен, чăваш литература теорине тĕпчекен студентăн çакна нимрен малтан шута илмелле пулĕ. Ыйтăвĕсем те паллă темелле: мĕнре-ши халăхăн сăнарлă ăс-тăнĕнчи публицистикăлăхăн хăйнеевĕрлĕхĕ? Унăн мĕнлерех енсем пур? Чăваш литературин нациллĕ техĕмĕпе вăл мĕнле килĕшсе тăрать?.. Е чăваш сатирипе юморĕ тĕнче кулăшĕн поэтикине ăша илнипех çырлахаççĕ-ши? Çак ыйтусен хуравĕ – вăрттăнне тупсан, судент чăваш Сăмахĕн публицистикăлăхĕ текстра философиллĕ сĕмсем тупса пынине те асăрхĕ. Философилĕхĕ пирĕн литературăмăрăн тата тепĕр уйрăмлăхĕ. Чăн та, кулăшла çаврăнă кашни эпизод, сюжет тарăн шухăш сăмсалантарать теме май çук. Анчах калу ирони патне туртăнарах пынăçем, унри шухăш тарăнлăхĕ ӳссех, вăл кĕвелĕклевсех пынине уççăнах курма пултаратпăр. Мучи вара пытарăнчăк ироние килĕштерет, шултраланса пыракан гротеска савса вĕттĕн кулсатăрăхлас мехелпе пĕтĕçтерет. Мĕншĕн çапла-ши ку?

Хуравĕ те тупăнать — тĕп мехел, тĕп сăнар вырăнне кунта часчасах Сăмах, ун вылявĕ, вăл театрланни йышăнать. Тĕрлĕ хайлавра ун поэтикăллă юхăмĕ тĕрлĕ сăпатлă. «Чышкă тытăмĕнче» фраземăсем тĕпре: патак (çăкăр) çи, икĕ пуслă (чĕреллĕ), ситмĕл те сиччĕ, хуп-хура (хĕпхĕрлĕ) тара (юна) ӳк, Васли Йăванччă, вăкăр (ĕне) сĕчĕ пар, шăл çĕмĕрсе (кĕрекен телей) — шăлĕсене çĕмĕрес т. ыт. те. Калу сăн-сăпачĕ те, Калуçă сăнарĕ те, эппин, чăн чăвашла çак илемлĕх мехелĕ, театрланакан Сăмах ресеманчĕ çинче никĕсленеççĕ. Çавăнпах Мучин чылай калавне вырăсла е урăх чĕлхене куçарма питĕ хĕн: куçарура нациллĕ экспрессилĕх паллисем, чăвашăн чăн халăхла шухăшлавĕ çухалса пĕтеççĕ. Пур калав пирки те капла калама май килмĕ темелле пек. Гогольпе ача тĕл пулни çинчен калакан тĕрленчĕкре урăх сăрсене мала кăларнă Калуçă. Пĕр енче чăвашла фраземăсем мар, вырăс çыравçи калăпланă тĕнче палăрăмĕсем, вĕсем ретрен рете сыпăнса пыраççĕ. Апла пулин те, Гоголĕн вырăс чĕлхи, ăнĕ-шухăшлавĕ, ун тĕнчи Мучи Калуçин чăн чăвашла ункайĕпе диалоглă хутшăнăва кĕрет. Вырăсла мехел чăвашла мехелпе шайлашать. «Тĕшмĕш чăптинчи» сюжета йĕркеленине сăнаса пăхар-ха. Тет, теççĕ.. йышши çаврăмсем пулăшса пыраççĕ-мĕн Калуçăна. «Усалăн ури саккăр теççĕ», 1) «Кураксем кил-çуртран писсен, телей тарать, теççĕ»: «Çумăр пуласса ку, тет», «Пупа тĕл пулсан телей пулмасть, теççĕ» т. ыт. те. Халăх йăли-ĕненĕвне çапла ĕретлесе пыни калăва пачах урăх сăнлă тăвать. Тенешкел халапсем çинче хывăннă сăмах-юмах васкавсăр, уявлă интонаци «хăрталать», калас тени эпикăллăн хывăнать. Ку пулăм ятне ларса каласмалăх та пур, чĕлхе пĕлĕвĕнче ăна эвиденци теççĕ. Мĕнре палăртать-ши вăл хăйне? Нимрен малтан калаканĕнчен килмен тĕнчере пулĕ. Вуншар ĕмĕр тарăнăшĕнчен килекен Сăмаха кам каланине паянхи этем илтме пултараймаи, ăна вăл хатĕр халлĕн асра тытать. Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем, тĕшмĕшле çаврăмсем, ăса вĕрентме ытарланисем... шăпах çапла: тет, тенĕ(-мен), хушнă(-ман), каланă(-ман)... сăмахсемпе вĕçленеççĕ вĕсем, пирĕн ума ĕмĕрсен тарăнăшĕнчи эпикăллă

шухăша илсе çитереççĕ, пирĕн ăса хушса-вĕрентсе калани пек вырнаçаççĕ. Темиçе тĕслĕх илер. «Çĕр улми çунăкне çисен упа тытмасть, тет». «Ватă сынна хăртаканăн алли чĕтрекен пулнă». «Çăкăртан аслă ан пул» т. ыт. те. Глаголăн сăпатсăр тата сăпатлă кунашкал формисем илемлĕ литературăра та тăтăш тĕл пулаççĕ. А.Алка прозинчи Калуçă, сăмахран, ялан -нă(-нĕ) аффикслă, -ман(-мен) формантлă çуклăх, иртнĕ причастисемпе усă курать. Çакнах Г.Юмарт поэзийĕнче тăтăш тĕл пулатпăр. Кунашкал глаголсем кăна мар, сăпатлă формăсем те кăтартуллă поэт-писательсемшĕн — поэзири романтикăллă, эпикăллă сывлăша Çеçпĕл, тĕслĕхрен, хушу, хальхи наклоненисемпе, -сан(-сен) формантлă деепричастисемпе палăртать, Тăхти прозишĕн те глаголсем эпикăллă функцийĕ пĕлтерĕшлĕ, Мучи фельетонĕ-калавĕнчи глаголсен те типлăха сăнлас, ўкернĕ сăнсен эпикăлăхне кăтартас функци вăйлă сисĕнет. Паллах, çак аффикссем ĕçе кĕни писатель талантлă пулнине пĕлтермест. Алка прозинчех, сăмахран, ку мелпе ăнăçсăр усă курни питĕ час-час тĕл пулать. Ним пĕлтерĕшсĕр ĕç-пуçах вăл тепĕр чух легенда, халап, ăс вĕрентўллĕ хайлав сĕмĕ кĕртет, ĕмĕрсен тарăнăшĕнчен килекен хавалпа хĕмлентерме пăхать. Çавна пула, калу вăйĕ чакать, илемлĕх мелĕсем перекетсĕрленеççĕ, сăмах-юмах тăкака каять. Глаголăн эпикăри, прозăри пĕлтерĕшĕ те. – питĕ пысăк, ятне ларса каласмалли ыйту, литература хайлавĕнчи пурнăç таппи глаголра ўсĕмленет. Ят вара (япала, паллă, хисеп ячĕсем, ятылмаш-местоимени) статикăлла япалана, пулăма кăна çырса кăтартать.

Çак тĕлĕшрен тĕлĕксен, халапсен, юмахсен сăнарлăхĕ пĕлтерĕшлĕ: унта та Калуçă е хăй курман, хăй илтмен событисене кăтартакан глагол формисемпе ĕçлет; хальхи наклонени те сатирик (ан тив Калуçă хăй курнине çеç кăтартать пек туйăнсан та) çав техĕмпе вăй парать. Калас шухăшăн чылайрах пайне çыравçă кун пек чух халап «ăшне» пытарать, ăна вулаканăн шырама, тупма тивет, хăйĕн чăн чăвашла сисĕмлĕхне хĕв хĕм пама лекет. Нациллĕхĕн енĕсем вара питĕ тĕрлĕрен. «Хăрушă кун», «Кĕрхи тамаша» калавсенче евĕрлев сăмахĕсем пĕрин хыççăн тепри, градаци мелĕпе ылмашăнса пынине куратпăр, апла пулсан, ку калавăн ритмĕ те çавăнтан килет. Евĕрлев сăмахĕсен хăйле черетленĕвĕ, градациллĕ ўсĕмлĕхĕ çыравсăн Сăмаха театрласа пырас ăсталăхĕ çине шак хурать. Кашни сăмах «курăмлă», вырăнлă пултăр, çухалса ан кайтăр тесе ĕçлет проза ăсти, Сăмахра тĕрлĕ, расна функцисем шырать, сăнарлăх вăйĕ ăна çĕнĕлле сăн кĕртессе шанать. Вулакан — сăмах-юмах екки çеç мар, событисен логики арканнине те асăрхама пултарать. Ĕç-пуç йўтĕмĕ, Сăмах вылявĕ хăйне тĕллĕн кăна тăмасть-мĕн, вăл тĕнчен тўнтерĕпе пиччĕнĕ пĕри теприйе куçса пынипе пĕрлĕхлĕ. Кунашкал йĕрке-шыва Мучин Калуçи кирек хăçан та хăй каласа панинче ўтлентерет. Писателĕн илемлĕхĕ — «калуллă илемлĕх», повествовани ăш-чиккине сĕтеклентерсе пыракан илемлĕх. Кашни япаларах, пулăмрах унăн икке-виççе пайланаслăхĕ, çав икĕ енĕн полемики тупăнасси пур. Ресемант та çакăншăнах кирлĕ, вăл жанр килшетне тытать, калава хăйле сăн кĕртет. Çыравăн уйрăмлăхĕсене нациллĕх тутипе техĕмлентерет.

Çапла майпа, ресемантизаци пулăмĕ Иван Мучи пултарулăхĕнче тĕрлĕ сăпатлă: жанрăн канонлă, традициллĕ йĕркине анлăлатать вăл, жанр содержанине çĕнĕ сĕм кўрет; сăнланă этемре герой çеç пулмалли паллăсем çителĕксĕр пулнине уççăнлатать; сăмахăн уйчченхи функцине «пăрахăçлама» пулăшать, урăх функци тупса парать... Кашнинчех икĕ сий

ёҫлет, сăнарлăхĕ вара ҫав икĕ сий шайлашăвне кĕрсе тымарланать.

## ЫЙТУСЕМПЕ ЁҪСЕМ

1. Мучин халап пек, юмах пек ҫаврăнакан калавĕсене сăнаса пăхăр, унта Калуҫă хăй курман е илтмен ёҫ ҫинчен калани мĕнле глагол формисемпе пĕрлĕхлĕ? Ку мел геройсен, лару-тăрусен типлăхне сăнлама епле пулăшать?

2. Калавсенчи сăмах вылявĕ, вăл театрланни ресемантăн тĕрлĕ тĕсĕсемпе мĕнле килĕшсе тăрать? Ҫак мел тĕрлĕ пулăмсем черетленсе пынипе ҫураҫать-и?

3. Пĕр-пĕр геройăн (бюрократăн, кахалăн...) пуплев тыткаларăшне писатель мĕнле ресемантланине тĕсĕр, ун социаллă типлăхне палăртăр. Виҫĕ ыйту ҫине хуравласа Мучи сатирин поэтики пирки доклад ҫырăр.

**Калавсенчи хатӗр лару-тӑру, хатӗр геройсем, вӗсене сӑнланӑ чух амплификаци мелӗпе усӑ курнин уйрӑмлӑхӗсем. Герой, событи, эпизод тата вӗсен социаллӑ тавралӑхӗ. Текста йӗркелемелли мелсем: монтаж, интертекст, фрагментлӑх**

Пултарулӑх ӗҫӗн юхӑмӗнче хӑйне евӗрлӗ эстетика палӑрать Иван Мучин. Чылай сӑнарӗ произведение хатӗр халлӗн килсе кӗрет ҫыравҫӑн, вӗсене вӑл ҫӗнӗрен «туса» аталантармасть, хатӗр лару-тӑрӑвӑн (пулӑмӑн е геройӑн) тӗрлӗ паллисене тупасси, ӑна ӑнланасси ҫеҫ юлать ун. Мучи ку ӑсталӑха Гогольрен вӗреннӗ, вӑл та геройсене хатӗр, пулса ҫитнӗ халлӗн илет. Сӑмах май — Илпек Микулайӗ те (вӑл та Гогольтен вӗренсех) ҫапла тӑвать. «Хура ҫӑкӑрти» Шерккейпе эпир пӗрремӗш хут ҫеҫ тӗл пулатпӑр-ха, анчах ӗнтӗ писатель пире тӳрех ун чи тӗп палӑрӑмӗсем ҫине тӗллеттерсе хӑварать: юрлӑ пурӑнать иккен этем, анчах ҫын умӗнче каҫӑрласси те пур. Чи ҫывӑх ҫыннисене те чунне уҫса памасть: шӑллӗне пӗр шухӑш калать те ӑшра пачах урӑх шут хӗмлентерет. Ҫакӑ вӑл — нумай сӑмахлӑхӑн вӑйтармӑшне сӑнарлӑ ҫул памалли май. Ку вара Илпеке ҫырав (описани) мелӗпе пусӑрӑнарах ӗҫлеме хушать. Кил-ҫурт таврашӗнчи тӗрлӗ япаласене (пӳлӗмсене, пӳрте, ҫенӗке, картишне, ҫурт умне) пӗрин хыҫҫӑн теприне, черетлесе ҫырса кӑтартать прозаик. Ҫырса кӑтартнӑ кашни япала ӑна хӑй геройне хаклама кирлӗ. Кашниех вӗсенчен Шерккей чунӗ-юнӗ пирки мӗнте пулин ҫӗнни каласа хӑварать. Паллах, куна Гоголь традицийӗ кӑна тесе хакламӑпӑр, чӑвашсен Сӑмах еккинче те упранать ку мехел. Илпекпе Уяр, Мучипе Тӑхти ӑна ҫавӑнпа ҫеҫ илме пултарнӑ та Гогольрен.

Теори тӗлӗшлӗ шухӑш ҫавӑрса, шухӑша тӗпчев методологин тарӑнӑшне ярса ҫапла калама юрать. Ҫыравӑн (описанин) эстетикӑллӑ хӑйле саккунӗсем пур. Ҫыравлакан, сӑнлакан ен, пулӑм, событи ӑна та, вулакансене те паллӑ. Унран та ытларах — ҫыравласа кӑтартнӑ ӗҫ-пуҫа пурте палласа илччӗр тесе, писатель кун пек чух ятне тӑрӑшать, «документлӑх» пеккин таппине ҫине тӑрса шырать. Вулакан ҫак лару-тӑру мӗнле сӑнарсемпе ҫураҫуллӑ пуласса вара хӑех тӗшмӗртет, ҫапла тума ӑна пӗр-пӗр пулӑмӑн, ситуацин шалти содержанийӗ хистет. Тӳрех палласа илмелли ситуацие кӑтартасси питӗ йывӑр ӗҫ; пулӑм содержанине ӑшран туйса тӑракан, тӗпӗ-йӗрне чухлакан прозаикӑн кун пек чухне ҫав пулӑмшӑн кӑтартуллӑ герой, лару-тӑру тупасси килет, ӑна анлӑрах кӑтартма тивет. Акӑ мӗншӗн илемлӗ хайлава характер та, ситуации те, стиль сӑрӗсем те хатӗр халлӗн кӗреҫҫӗ. Вӗсене те вулакан — пурнӑҫ тӗрӗслӗхӗпе, илемлӗх саккунӗпе шайлаштарса палласа илет. Мучи питленӗ ҫынсене те пурте паллатпӑр; йӑх-яха, путсӗр героя, тӳнтер пулӑма, вӗсем тавралли лару-тӑрӑва ӳкерсе вара сатирик пирӗн шанӑҫ-ӑнкарӑва тӳрре кӑларать. Ку вӑл — тӗнче сатиринче паллӑ мелсенчен пӗри. Хушса сӗтевлемелӗхӗ те пур: питлев ӑсти хайланӑ ӳкерчӗк, тип фотографи картне лармалла тенине пӗлтермест ку. Тӑрӑхлавра, тиркешӗвре прозаик ун пытарӑнчӑк техӗмне тупать, вулакана вӑл мӗнпе кӑсӑклантарма пултарасса туйсах тӑрать. Анчах Мучи сӑнланӑ кирек мӗнле япалара та кулӑшли те, тӑтӑрхалли те пур. Ҫапла туса сатирик-публицист питлевпе шӳтӗн нациллӗ, чӑвашла пӗр пӗтӗмлӗхӗ ҫине тӗллесе кӑтартать. Илпекӗн

çырав мехелĕнче те кулăш хапи сисĕнет, çырса кăтартнă пур япалипе те писатель Шерккейрен ăшшăн тăрăхлать. Пÿрчĕ-çурчĕ Шерккейĕн чăн пурнăçĕ пекех юхăнчăк, крыльци ун чунĕнчи тÿрех туйăнакан техĕм майлă: май çук каçăрăлса ларать. Пÿрт умĕнчи хурама та ним чиксĕр капăрланать, лапчăк пÿрте витнĕ улăма пытарма тăрăшать.

Çыравçăн çакнашкал хывăннă шухăшĕ Илпек романĕнче текст тăрăх тăтăшланса каять. Унти икĕ енлĕхе герой ăш-чиккинчи икĕ енлĕхпе шайлаштарать писатель, майĕпен-майĕпен ăна калу никĕсне хывать. Чăнах та, мĕн роман вĕçне çитичченех Шерккейре ун чурăслăхне, çын кăмăлне уяс марлăхне мала кăларса пырать романист. Пĕрлех, геройăн хăтланкаларăшĕсем айванла, кăптăрмăшла пулнине те ас тутарать. Этемĕн кăмăл-сунăмĕ, социаллă тыткаларăшĕ çапла пайлана-пайлана икьенленсе пыни калава ирони сĕмĕ кĕртсех тăрать. Хв.Уярăн Яка Иллине, Ивукне çырса кăтартнисем те çакăн пек функциллĕ, унта та герой çинчен малтан мĕн калани роман юхăмĕнче сарăлса, анлăланса пырать, калăвăн сатирăллă никĕсне вырнаçать. Теори тĕлĕшлĕ тата тепĕр шухăш каласа хăварма ал майлă: вулакан кун йышши геройсемпе пĕрремĕш хут çеç тĕл пулать-ха, писатель вара вĕсем çинчен тем те каласа парать. Çакнашкал меле урăхла амплификаци теççĕ. Калăва амплификаци мелĕпе йĕркеленĕ чух писателĕн малтан каланине сармалла, тарăнлатмалла, анлăлатмалла. Ку та чăваш прозин тĕп мелĕсенчен пĕри темелле. Хатĕр характер та, хатĕр ситуаци те, геройăн хатĕр паллисем те — пурте хăйсен еккипе пĕр пĕчĕк тĕвĕрен пуçласа аталантарасса мар, тахçанах паллă енсене сарасса, тарăнлатасса «кĕтеççĕ». Кун пек чух çырав та, калу та час-часах кулăш патне пырса тухаççĕ.

Çук, çырав мехелĕ чăваш литературинче Гогольпе çеç çыхăнман. Хатĕр сăнарпа (лару-тăрупа, геройпа, пулăмпа...) ĕçлекенĕн ирĕксĕрех лару-тăрăва (героя, событие...) хак памалли сĕмсене палăртма, çырса кăтартма тивет пулĕ. Хайхискер, геройăн социаллă тавралăхĕ (вырăсла: среда) тĕпе килет. Ку вара ăна тивĕç стиль сфери калăплама ыйтать. Мучи çак ĕçе Калуçă пуплевĕ урлах тăвать терĕмĕр. Шерккее хаклас сфера авă — кулăшларах, публицистикăллăрах, ăшă юморпа витернĕ сфера. Илпекĕн кăна тĕл пулмасть çакнашкал сферăсен тĕслĕхĕ. Илер акă туй сăнарне: «Нарспире», «Ялтара», «Айтарта»... тĕл пулать вăл, пур хайлавра та ун пĕрешкелтерех никĕсĕ курăнса пырать. Апла-тăк вăл — хатĕр сăнар, хатĕр лару-тăру. Ăна сăнарлакан стиль сферин те хатĕр енсем çук мар пулĕ: трагедиллĕ ĕç-пуç таппи, романтикăллăрах кăмăл сĕмĕ, кун-çул философийĕ т. ыт. те. Илпекĕн Шерккейĕнче те Михетерпе («Нарспи»), Яка Иллепе («Таната»), Пăрчканпа («Ялта»), Ахтупайпа («Айтар») ... пĕр пек енсем пур. Вăл та хатĕр характер. Апла пулсан хатĕр характера çырса кăтартасси (тивĕçлĕ социаллă лару-тăру тупса, стиль сфери хайласа), ăна аталантарса мар, анлăлатса кăтартасси чăвашра мĕн ĕмĕртен йăлара пулнă. Капла тесен ума тата тепĕр ен тухать — хатĕр характер çеç мар, чылай чух çырав мелĕ те никĕсе выртать, вăл та чăн чăвашла стиль, чăн чăвашла илемлĕх паллиех. Ав мĕншĕн Хв.Уяр «Танатара» пасара нумай енлĕн çыравласа кăтартать. Çак никĕс çинче вăл Иллене тивĕç стиль (сатира, гротеск...) сфери хайлать. Çав писателĕннех тум-тире сăнлакан, пит-куçа тĕсекен çыравĕ пач урăх геройшăн (Ивукшăн) кирлĕ. Кунашкал туса прозаик тата урăх стиль сфери хывать. Романра маскăллă вылянчăклăх, Ивук тĕрлĕ роль вылянии тĕпе ÿкет. Çырса кăтартнинче

тӳрех каласа тултарнă енсем пĕчĕккĕн, тӳрре тухса, сăлтавланса пыраççĕ. Кашни хутĕнчех кунашкал çыравăн ĕмĕрхи екки тупăнать: малтан пĕр япалана кăтартнă, унтан теприне ... Ума эппин пĕр йышшилĕх феноменĕ тухать. Пĕр сăпатлă, пĕр функциллĕ япаласем (событисем ) черетленсе пыни çырав мехелĕпе панорамăллă, анлă ӳкерчĕксем хайлама май парать.

Ресемантпа Сăмахăн вылявĕ текст тăрăх тăтăшланса кайнине Мучи хайне тĕллĕн çеç илмест, ку та вăл — çырав мелех. Итлекен, вулакан кун пек чухне сăнара тӳрех, «каптипе» ярса илет, сюжетри интригăна ас тусах пырать. Çавăнпа Калуçă сăмахне те диалоглас, ăна тĕрлĕ роль вылякан персонажсен «аллине парас» туртăм вăйлă палăра пуçлать сатира ăстин. Интертекст саккунĕсем çинчен каланиех аван кăтартма кирлĕ — Мучишĕн вулаканпа шанăçлă диалог туни те питĕ кирлĕ. Кунсăр пуçне, интертекстлă çыхăну хайĕн диалоглăхĕпе те палăрса тăрать. Икĕ текст пĕр-пĕринпе «ĕçлĕ» çыхăнусене кĕнĕрен пароди хывăнать. Сăмах-юмаха вылятни, унăн икĕ енлĕхне курни диалог уйрăмлăхĕсене мала кăларать. Тĕпренех диалог сĕтекĕпе тутлăхлантарса çырнă калавсем пирки вара калаçмалли те çук. Тивĕçлипех çак шухăш патне çитетпĕр: Мучин публицистикăллă тĕнчине тытса тăракан енсенчен пĕри — тĕрлĕ пулăмсем, енсем, лару-тăрусем диалоглă çыхăнăва кĕни, çав енсен диалогĕ тавлашуллăн, полемикăллăн аталанса пыни. Хăй вăхăтĕнче эпир «Художественный мир Федора Уяра» кĕнекере Хв.Уяр тĕнчи шалтан диа-, полилоглă хывăнни пирки çырнăччĕ. Халь, Мучи прозине тишкернĕ чух, ку пулăмăн çăл куçĕ те тупăнчĕ. Писатель Тăхтипе Мучирен нумай вĕреннинче вăл. Прозаиксем виççĕшĕ те фрагментлăн, татăкăн-кĕсĕкĕн пек çыраççĕ, çыхăнсах пĕтес çук пек событисене, пайсене, сыпăксене, эпизодсене пĕр рете тăратаççĕ. Вĕсене вулакан монтаж саккунĕсемпе хăех пĕр тĕвве çыхать. Тепĕр сĕвем те пур. Монтажпа фрагментлăх кай ен культуринче кино искусстви вăя кĕрсен йăл илет теççĕ искусство теоретикĕсем. Чăвашра вара монтажлăх туйăмĕ ĕмĕртен тĕпре пулнă.

ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Иван Мучи, М.Илпек, Хв.Уяр хайлавĕсенчи амплификаци мелĕсене танлаштарăр, писательсен мĕн пĕрешкелли тата мĕн уйрăмми пур? Амплификаци мелĕ геройăн социаллă тавралăхĕпе, стиль сферипе епле çураçăнать?

2. Тăхти, Уяр, Мучи, Илпек çырни-тунинче монтаж, фрагментлăх мелĕсем мĕнле тата мĕнре палăрнине сăнăр. Ку мехел çырав уйрăмлăхĕсемпе мĕнле çыхăнать?

Икĕ ыйтăва пĕрлештерсе диплом ĕçĕ çырăр. Теми: «Чăвашсен этологиллĕ прози, ун эстетикинчи шӳтпе çырав вырăнĕ».

### Сӑмахӑн курӑмлӑхӗ тата унӑн тӗрлӗ енӗсем. Сӑпатлантару. Вӑхӑт сӑнарӗ тата Сӑмах. Сӑмахри анекдотпа трагеди пӗрлӗхӗ

Мучи халиччен асӑннӑ фрагментарлӑхпа, диалоглӑхпа, ресемантпа яланах Сӑмахӑн курӑмлӑхне, сулӑмне ӳстерет, театр сӗмӗ кӗртет. Кашни Сӑмахӑн шухӑшпа пӗлтерӗш енӗсем тата курӑнарах каяҫҫӗ. Хӑйшӗн кирлӗрех енсем ҫине юморист ятнех пусӑм туса пырать, ӑна кулленхи калаҫу сӗтекӗпе тутлӑхлантарать. Сӑмаха вылятас туртӑм И.Тӑхтин те вӑйлӑ, «Колчак» поэмӑра вӑл та шултралатнӑ сӑрсене кӑмӑллать, вӗсен курӑмлӑхне ӳстерет. Прозӑра вара вӑл вӑлту-юптару вӑрттӑнне сисӗни-сисӗнми евӗке пытарать, пачах ним ҫинчен те каламан пек эпизода хывать. Ҫапах та, писатель кун пек хатӗр-хӗтӗре кулленхи калаҫун ахаль йӗркинчех тупать, Мучи вара йӑла-йӗрке мехелӗнче, шӳтлӗ, камитлӗ лару-тӑрусенче курать ӑна. Ҫак тӗллеве Мучи диалогсенче пурнӑҫлать. Шултралатас, детальсене ӳстерес, гротеск хӑватне вӑйлатас кӑмӑл та ҫавӑнтанах ҫуралнӑ. Ҫийӗнчех палӑрас эффекта вырӑна хурарах парать-тӗр сатирик, кулӑш механизмӗ халех, ҫийӗнчех «ӗҫлесе илесси» шанать пуль. Театрализациленӗ сӑмах чӑваш ӑслайӗнче ялан публицистика сӗмӗллӗ пулнӑ, куна И.Я.Яковлев, Иван Мучи, И.Тӑхти пултарулӑхӗсемех аван кӑтартаҫҫӗ. Ахальтен мар «Колчак» поэмӑна сцена ҫинче нумай кӑтартнӑ. Мучи те чылай калавне театрта каламалли реприза евӗртерех ҫырнӑ, вӗсенче курӑмлӑх, фразӑн ӳсӗмлӗхӗ, диалоглӑх, акцент тума пӗлни пысӑк вырӑн йышӑнать. Час-час хайлавсене халӑх вӑййи-куллине, йӑли-йӗркине ҫырса кӑтартнӑ пекрех ӑсталани те ҫавӑн ҫинех шак хурать. Ку ҫеҫ те мар, геройсем вӗҫӗмех тӗрлӗ канона кура тумланнине куратпӑр, тум-тир улӑштарнине асӑрхатпӑр. Ӗҫ-хӗл (действо) пысӑк пӗлтерӗшлӗ Мучи ҫырни-хайланинче («Пӑрҫа»), ку та писатель халӑхӑн сӑмах, йӑла культуринчи театрлӑха асла хунинех пӗлтерет. Пурӗ пӗрле ҫакӑ сӑпатлантару саккунӗсемпе уйрӑммӑнах килӗшӳллӗ. Вӑл та (сӑпатлантару) калава чӗрӗлӗх, хӗв хӗм таппи кӳрет, драма йӗрки-хевти енне туртать. Чӑн та, тӳррипех драма теейӗн куна, прозӑна «драмӑласа» ҫырни тесен тӗрӗсрех пулӗ. Анчах калас шухӑша тӗрлӗ япаласем, пулӑмсем, геройсем ҫине тиесси яланхи йӑла Мучишӗн. Час-часах чӗрӗ мар япаласене сӑпатлантарать. «Хӑрушӑ кун» новеллӑра Хӑяр шӳрпи, Сӗтел-пукан, Кӑмака, Хӗветӗрӗн (колхоза кӗме килӗшмен хресченӗн) ӳт-пӗвӗ, организм пайӗсем пайӑррӑн калаҫаҫҫӗ. Пусӗ те, Вӗтӗ пыршисем те... кӳлешеҫҫӗ хуҫине, колхоза кӗменшӗн вӑрҫаҫҫӗ. Вӗсемпе ҫуммӑн Сӗтелӗ те, Ухвачӗ те, Турчки те, Хура хуранӗ те... ҫав шухӑш ҫинех тӑраҫҫӗ. Килте хаяр вӑрҫӑ пуҫланать, этем хӑйӗнчен хӑй тухса тарать. Фантазилле кун пек сӑнсем яланах пӗр пӗтӗм япалана, пулӑма вакласа, пайӑрласа янипе ҫыхӑннӑ, ҫавӑнпа ҫыравҫӑ вӗсене час-часах тӗлӗклесе ӳкерет, ухмаха ернӗ этем куҫӗ умне темскер курӑннӑ пек туса кӑтартать. «Чышкӑ тытӑмӗ», «Пӗр вырӑнта тӑпӑртатни», «Чее Еххӗм» калавсенче те ҫакнах куратпӑр, унта та этеме ӳт-пӳ пайӗсем ҫине сӗвемлени сӑнарланӑ. Кун никӗсӗнче таҫта шалта метоними выртать. Гоголӗн Ковалевӗ вырӑнне те авӑ ун Сӑмси ҫӳрет хула тӑрӑх («Нос»). Портрет ҫинче сӑнланнӑ этемӗн Куҫӗ герой ҫине чуна витӗр кӗрсе чӑрлаттарса пӑхать («Портрет»). Гоголь ун пек пулӑмсен тапшине мистика, фантасмагори ҫулӗпе ярать, Мучишӗн ав сӑпатлану техӗмӗ те ҫителӗклӗ. 20 ӗҫ. ку меле тӑтӑшах хута янӑ, уйрӑм

çынна кăтартас вырăнне, метоними йĕркипе сас, çăвар, пуç... тесе калани В.Рсай, Хумма Çеменĕ хайлисенче тăтăшах тĕл пулать. Ку ахальтен мар, Сăмахăн курăмлăхне, уйрăм тăранлăхне мала кăларас, Сăмахпа ятне ĕçлес туртăм ун чух питĕ вăйланса каять.

Кăшт маларах драма пирки асăнни ăнсăртран пулмарĕ. Унта кашни геройăн пуплев тыткаларăшĕ мала тухать. Вăл пулмасан — драма та çук. «Судра» хайлавах илĕпĕр: Ухтеркке сăмаха вăлтса, вылятса, аяккалла пăрса калаçать. Катăк çăвар вырăсла-чăвашла перкелешет, миравай пăт-пат кăна, чаркаласа çеç сăмахлать. Мучи ăсталанă Калуçă сăнарĕ те çапла, ун риторика (пуплев) тыткаларăшне ытти çыравçăсен Калуçисемпе пăтраштармастăн. Эппин çав пуплевĕн драмăлăхĕ те Мучи Сăмахĕн театрла курăмлăхĕ çинех шак хурать. Иккĕшĕ те вĕсем (драмăри геройăн пуплев тыткаларăшĕ, публицистикăллă прозăри пуплев уйрăмлăхĕсем) хăйсен риторикăлăхĕпе паллă. Шăп çавăнпах Диалог, Монолог тенĕ ăнлавсем мала тухаççĕ те. Мĕне пĕлтерет-ши ку? Мучи Калуçă пуплевĕнче яланах диалогла техĕм курнине пулĕ. Хăй калана Сăмах, хăй çавăрнă шухăш вулакан кăмăлĕпе диалога кĕрессе шанать Калуçă. Сатирик вара çав диа-, полилоглăха çине тăрса шырать, монологĕ унăн вулаканпа йĕркеленме пултарас пуплев (риторика) çине шак хурать.

Прозаикăн тĕп геройĕ Сăмах терĕмĕр. Вăл кăна та мар, Калуçă та. Анчах иккĕшĕ те вĕсем, çав сăнарсем, Улшăннă самана сывлăшĕпе сывлаççĕ. Апла-тăк Улшăннă, Çĕнелнĕ Вăхăт та тĕп герой кунта. Общество урăхланать, «ÿсет», «çитĕнет», вăл çитĕнни Сăмахра йĕр хăварать. Сăмахĕ Калуçă чунне калăпласа пырать. Анчах Мучишĕн «Калуçă Сăмах, стиль хатĕрĕ, поэтика мелĕ шырать» тени тĕрĕсе килмест. Сăмахĕ те, поэтики те — хăйсем те шыраççĕ вĕсем Мучие. Ку ĕнтĕ Вăхăт сăнарĕ Сăмахăн курăмлăхĕпе пĕрлĕхлине астутарать. Бюрократсен, кахалсен, «тĕшмĕш чăптисен», «Чышкăсен»... иртсе пыран вăхăчĕ çитнĕ, вĕсен пуплевне общество пулăмĕ пек ăнланса аркатмалли тапхăр. Эппин çак публицистикăра самана чунĕ те чĕрĕ, ăна тăтăшлăх, пĕр вĕçсĕр куçăм хевти вăй парать. Хăй ÿсĕмĕн тапхăрне кăтартас тĕллев тытнă Мучи «аякран пек» пăхать хăйне хупăрласа тăракан тĕрлĕ йăх-ях, кив йăла, тăкăс ĕмĕт çине. Мĕн пăхнăçем, мĕн сăнанăçем сăнлав объекчĕ, прототипĕ-сăнарĕ икке пайланса пырать ун, вакланать. Ку вара публициста ирĕксĕрех кулăш патне илсе çитерет. Акă мĕншĕн вăл ăсталанă фельетон-тĕрленчĕке, калав-эссене сатирăллă хроника теме çук — Вăхăтăн чĕрĕ куçăмĕ çеç мар, ун сăн-сăпачĕ, вăл иккĕлле выляса кайни кирлĕрех ăстана. Е урăхла калама юрать — çав вăхăт арканнă, йăшнă, «çĕрнĕ» вăхăта асăрхать публицист. Мĕнре, сăмахран, «Чышкă тытăмĕн» кулăшла хапи? «Икĕ пуçлă», «икĕ чĕреллĕ» тени ăнсăртран мар кунта, шыва кĕрт — тĕне кĕрт, çăкăр çитер — патак çитер фраземăсем ик-виç йĕрпе туратлана-туратлана пыни те писательтен кăна килмест. Саманан калăплăн, курттăмăн çĕнелсе пыракан таппи çапла тума хушать Мучие. Хăй, писатель, самана ыйтнине питĕ çивĕч туять. Самана трагедийĕпе комедийĕ палăрать унта. Çак енсем, паллах, писатель философийĕн уйрăмлăхĕсем çинчен калаççĕ.

Паллах, Вăхăт курăмлăн арканни, Сăмах курăмлăн выляни Мучи тавракурăмĕпе те çыхăннă. Хăй вăл, çав çивĕч публицист, хроника ытамĕнчен хăпнă, анлă палăрăмсен урăхла, икке пайланакан, хĕв кулăш хĕмĕ тапакан чĕрĕлĕхне курнă, сиснĕ. Сиснĕ те... уйрăм тапхăр синкерĕ вара, пĕрех, пуçне çинĕ унăнне. Çав тапхăр ытамĕнчен хăпайман та иккен

хӑй. Ку, паллах, (ӑна илемлӗх саккунне хывсан) — анекдот. Ун ӑшри трагедине, трагеди чӗринчи кулӑша ҫырма-сӑнлама Акивер кӑмӑлӗ кирлӗччӗ тӗр-и, тен? Ҫавӑ-ҫке кашни трагедире анекдот, кашни анекдотра синкер асӑрхаканни! Кунта та тӗнче икке пайланать: кулӑшӗ — синкер, синкерӗ — путишле. Эппин, Мучи чӑваш кулӑшӗн нациллӗ екки-чӗрине шалтан аван туять, ку тӗлӗшпе вӑл чӑннипех те чӑваш кулӑшӗн чи пысӑк пултаруҫисемпе (М.Федоровпа, Ф.Павловпа, И.Тӑхтипе, Хв.Уярпа, М.Илпекпе...) пӗр йышра тӑрать.

## ЫЙТУСЕМПЕ ӖҪСЕМ

Сыпӑка вуласа тухнӑ хыҫҫӑн ҫак ыйтусем ҫине хуравлӑр: 1) Саманапа шӳтлӗ Сӑмах хушшинче мӗнле ҫыхӑнусем пур? 2) Диалогӑн нумай функциллӗ таппи Мучи калавӗсенче мӗнле аталанса пырать? 3) Чӑваш кун-ҫулӗнчи ӗмӗрхи трагедилӗхе ун ӗмӗрхи камитлӗхӗпе епле ҫыхӑнтармалла?

## Сăмах, чĕлхе ăнĕ. Мучин илемлĕ шухăш уйрăмлăхĕсем

Иван Мучи сатири шултралатнă сăрсене килĕштерет, апла пулин те иртнĕ сыпăкра асăннă Уяр, Илпек пек ăстасен пултарулăхĕсемпе пĕр кăкранах вăл. Çавăнпа ăна чăваш чĕлхин, наци культурин ăнĕ енчен ку çыравçăсемпе пĕр ретре пăхса тухмах тивет. Ку писательсем пурте япала (пулăм...) икке-виççе пайланни чăваш халăхĕн чĕлхе ăнĕнче (языковое сознание), пуплевĕн чĕрĕлĕхĕнче палăрнине витĕр туйса тăраççĕ. Пурне те пулма пултараслăх пулма пултарайманлăх картинелле туртать. М.Федоровăн Хĕветĕрĕ вилĕмрен хăрамасть (ытти чăваш та çаплах пулнă!), чыссăр вилессинчен шикленет. Анчах çак шухăша вăрмана кайса Арçурипе тĕл пулмасăр ăнкарма май килмен-шим? Килмен-мĕн: çĕрлехи вăрманта алхасакан усал-тĕсел чыссăр вилĕмĕн тӳнтерле ӳтленнĕ сăнарĕ вăл... Ф.Павловăн Ухтеркки те — суда хунтă (хӳтĕ) шырама пырать-çке вăл! Тӳре-шара вара вăл камит кăтартма килчĕ тесе шухăшлать... Раципе ирраци пĕрлешсе каяççĕ, пĕри теприне куçать, выля-выля тăрать. Таçта шалта, пытарăнчăк, поэмăн тарăна кайнă сĕвемĕсенче — «Нарспире» те кун пек шухăш тупма пулать. «Сарă хĕр» пурнăç хавасĕ хывма çуралать те «Кантăр варĕнчи» тĕмеске пулас шăпа тупать. Ял-йыш пĕрех ырăпа пăхса усрать ăна, «ялан çумăр çумасан Шыв сапать тăприне» (тăпри ан çурăлтăр, Нарспи тухса ан çӳретĕр, чысне ан пĕтертĕр, тесе). Кунта та вĕçсĕр пайланакан, вакланакан тĕнче. «Нарспи ашшĕ Михетер» хĕрне ырă сунать пек, «пуян упăшка» тупать ун валли. Хăй вара хĕрĕн туйĕнче вилĕм ташши сӳнипех çырлахмасть . Хĕрĕн тĕлĕкĕнче вăрмана пырать, «урнă йытă пек» алхасса, вăрмана «шатăртаттарса» çӳрет, вилессе, вăхăчĕпе (пӳкле вилнĕскер) вăрман тăрăх арçуриленсе çӳрессе сисеттĕр вăл. Тăхтамана та çав шăпа пӳрнĕ, ăна та «усал арăмĕ» çине вĕслетет «сĕм вăрман». Вăл пырса кĕрсен те вăрман арçуриленсе «вăтăр та пĕр шуйттан пек улама» тытăнать. Акă вăл чăваш философийĕн тĕпĕнче тăракан пайрăм-сĕвемсенчен пĕри: кулăш трагедиллĕ, трагеди кулăшла пулнине ăнланни; кашни пулăмăн тӳнтерĕпе пиччĕнĕ пĕр тĕвве пĕтĕçнине ăнкарни; çав икĕ-виçĕ енлĕхе Сăмахăн ĕмĕрхи чĕрĕ, ĕмĕрхи куçăмлă, «сывă» калăпне хывса ăнланмалли çаврине тупма пĕлни...

Çак тĕлĕшрен литературăмăр пĕр вĕçĕмех тамăка анать, вĕçĕмех çăтмаха çĕкленет. Вăхăт категорийĕ ӳтсĕр-тирсĕр ăнлав мар уншăн, этем чунĕнче тупăнать ун тĕшши. Чунĕ вара ку — мĕн ĕлĕкренех — пĕчĕк çын чунĕ, ун шăпи. Мучи сатири те çав хаваллă, ăна пурнăçăн çиелтен курăнакан пулăмĕсене çеç сăнлани тесе хаклама май килмĕ. Калас Сăмах икке пайланни Мучи çырнисенче тӳрех куçа ӳкет, вулаканăн ăна нумай-нумай хушă шухăшласа çӳремесĕрех ăнланма май пур. К.Иванов, М.Федоров, Ф.Павлов, И.Тăхти пек писатель-философсен ку пулăм тĕшшине вулакан тӳрех сисмен çĕре пытарас йăли пысăк. Апла пулин те, ку вăл прозаиксенчен пĕри пултарусăртарах, тепри пултаруллăрах тесе çирĕплетни мар. Пуриншĕн те калас сăмах пĕлтерĕшлĕ, пурте вĕсем унăн чĕрĕлĕхĕ, шалти вăйĕ пирки шухăшласа пуç ватаççĕ. Çакă, паллах, тĕрлĕ çыравçăсем тĕнчене те чĕрĕ халлĕн курса, туйса ăнланнине кăтартакан фактор. Чĕлхе чĕрĕлĕхĕ — тĕнче чĕрĕлĕхĕпе, тĕнче пуянлăхĕ - пуплев-чĕлхе пуянлăхĕпе çураçуллă. Литературăмăр тамăка анни — Сăмахăн синкерлĕ тупсăмне тĕшмĕртни, çăтмаха çĕкленни — ун нихçан

сĕвĕрĕлми сăваплăхне, пуянлăхне ăсласа илни. Мучи, Тăхти пирки калаçнă чух та халăх чĕлхин, культурин ăнĕ пирки шухăшламах тивет. Чăн чăвашла пуплев, нациллĕ шухăшлавăн хăйле уйрăмлăхĕсем, ытти чĕлхе ăнĕпе ытамлама май çук енсем илĕртеççĕ вулакана вĕсен хайлавĕсенче. Мучи хайлавĕсене (çав шутрах Ф.Павлов, Хв.Уяр, М.Илпек, Хв.Акивер çырнисене те) вырăна хурас текен вĕренекенĕн чăвашла пуплевĕн нацилĕхне те ăнкарма хăнăхас пулать. Тепĕр майлă та калама юрать: чĕлхе-пуплевĕн чăн чăвашлăхне туякан студент Мучи, Тăхти пек юморист хайлавĕсене туллирех, ăнăçлăрах ăнланĕ. Ку яхăнччен калани çакна ĕнентерет: чĕлхе ăнĕ тени ăнсăртран кĕмсĕрт çаврăнă сăмах сыхăнăвĕ мар. Халăхăн илемлĕ шухăшĕ нимрен малтан чĕлхере. Сăмахра хывăнать, наци культурин никĕсĕ пулса ӳтленет. Вăрçă умĕнхи тапхăрта, 20-мĕш çулсенче чăваш литератури те Сăмах патне ахальтен туртăнман. Ун символла, сăпатлантарнă, метафорăлатнă... пĕлтерĕшĕ ăна чĕлхе ăнĕн ĕмĕрхи туртăмĕсене ăнкарма, ун чĕрĕлĕхĕн çĕнĕ енĕсене тупма кирлĕ пулнă.

Сăмах. Ун таппи, эстетикăллă тĕшши чăвашсене çеç кăсăклантарман. Эрменпе грузин, кăркăспа казах, вырăспа абхаз çыравçисем иленнĕ ун илемлĕхĕн вăйне. Çавăнпа А.С.Пушкин хайланă «История Пугачева», «Путешествие в Арзрум», М.Ю.Лермонтов калăпланă «Пирĕн вăхăтри герой», «Ашик-Кериб» пек хайлавсем литературăн çĕнĕ ӳсĕмри энергине пуçтарса çĕнĕ вăй панине курмасăр тăма çук. Грузинсен О.Чиладзе, Н.Думбадзе, Ч.Амирэджиби пек пултаруçисем, азербайджансен Анар, Айлисли пек ăстисем, кăркăссен Т.Сыдыкбеков, Ч.Айтматов пек прозаикĕсем, казахсен О.Сулейменов пек сăвăçисем, чукчасен Ю.Рытхеу, С.Курилов пек çыравçисем ... — пурте вĕсем чĕлхе ăнĕн хăйне евĕрлĕхне нимрен малтан ытарнă. Кун пек Сăмах хăй ăшне халăхăн вуншар ĕмĕрсем хушшинче пухнă ăсне хывать, кашни художника хăй халăхĕн нушине курăмлăн сăнлама май парать. Маларахах каланăччĕ: чукчасемшĕн йăла-йĕркепе çыхăннă ăрăмлă пуплевĕн сăнарлăхĕ паха. Тухăç культуринчи техĕме кăмăллано вырăс литературин ăстисемшĕн çул çӳревре çырнисен (Лермонтов) илемлĕх тĕшши ырă. Кăркăссем мифсемпе легендăсен философиллĕ вăйтармăшне кăмăлларах параççĕ. Грузинсем шӳтлĕ лару-тăрушăн, градацин юморлă еккишĕн вăй хума хавас... Чăваш литературин те кулăшла, Сăмаха пĕлтерĕшлĕ курас енчен ытти литературăсемпе пĕр пекки çук мар. Теплерен чăваш илемçи-ӳнерçисем шӳтлĕ шухăша вăлтса-юптарса, нумай сăмахлă пек, кирлĕ-кирлĕ мар пек япаласем çинчен сăмах пуçарса хыпарлама килĕштереççĕ. Юмахĕ-халапĕ, тĕлĕкĕ-тĕшмĕшĕ кун пек чух ун йăла-йĕркери сăмахăн ăрăмлăхĕпе те, мифсен онтологилле техĕмĕпе те, градациллĕ пулăмсен шӳтлĕ таппипе те питĕ хăйне евĕрлĕ çыхăнăва кĕрет. Куна ăнкарма çамрăксен чăваш литературин нациллĕ техĕмĕ пирки тарăнрах шухăшлама тивĕ.

Паллах, уйрăм ăстан пултарулăх принципĕсене те хисепе хумаллах. Мучи хайлавĕсенче Сăмах Калуçă сăнарĕпе пĕрлĕхлĕ терĕмĕр, вăл — писателĕн пултарулăх шыравĕсемпе нумай енлĕн пĕтĕçнине асăнтăмăр. Хывас шухăшăн, калас Сăмахăн фантасмагорилĕхĕ юмаха, тĕлĕке, халапа çаврăнни те ăнсăртран мар, ку та чĕлхе-пуплевĕн, тĕрлĕ пулăмăн, япалан... икке-виççе пайланас хевтипе çыхăннă. Тĕрлĕ сăн, ӳкерчĕк чиккисем (тĕлĕкре, юмахра) майĕпен çухалса пыраççĕ, пĕр япала теприне куçать, пĕр ăнлав теприне сĕвĕртет. Писатель çырав мехелне кăмăллани. ăна

ăсталама тĕрлĕ эпизодсен, енсен пĕр йышшилĕхне ĕçе кĕртни те çакăнтанах сĕтек илет пулĕ. Каланман шухăш, хыvăнман Сăмах хăйне тивĕç ӳт-пӳ, капаш тупать çапла. Тĕлĕкĕн чиккисем çукки, вăл тăтăшах улшăнса, «юхса», пĕр пулăмран теприне куçса пыни Сăмахăн чĕрĕлĕхĕпе пĕрлешет, пĕр пĕтĕçӳ йĕркелет. Юмах-халап пирки те çакнах каламалла, унта та кăмăл-туйăм виçи пысăк, тĕрлĕ сăпатлă, туратланса амаланас хевтеллĕ. Вилсе çухалас, кайса çĕтес пулăмсем çĕнĕ тĕртĕмленӳпе пĕр тĕвве çыхăнаççĕ çапла, анчах çав тĕртĕмленĕве хыçа, ăн айне хăварать Мучи, кăтартмасть, сăнламасть ăна. Тӳнтер сăнне ӳкернĕ хыççăн мораль, пĕтĕмлетӳ тĕшшипе тутлăхлантарса хăварсан та çителĕклĕ тесе шухăшлать. Чăнлăха юмаха хывса питлени, «кăнтăрла» (чăнлăхра) пулассине касхи тĕлĕке кĕртни — çыравçăн илемлĕ чăнлăхĕ. Тĕлĕкне, «каçне» «кăнтăрла» вырăнне картать вăл, пурнăçра пулассине, пулнине «юмахри» пек курать. Пулма пултараслăх пулма пултарайманлăх кăшкарне лекет çапла: ку ен ун жанрне те, тĕнче курăмне те, поэтикине те хăйле сĕм, хăйле техĕм кӳрет. Хальхийĕ, умĕнчи пурнăçĕ писательшĕн чăнлăх мар, сивлеме тивĕçлĕ тĕнче çеç пулнă. Ĕмĕчĕпе ырана савнă çыравçă, ыранĕ вара паянхине парас хак(-лăх) пек калăпланнă ун. Хушса çакна калама юрать: хальхине, паянхине шанманни Мучин кăна мар, Çеçпĕлĕн те вăйлă палăрать, ун чунĕн таргедийĕ çинчен систерет. Вăл та интертекст, Сăмах, пулма пултарас пулăмсене мал ĕмĕтлет, анчах шухăшĕ поэтăн сатирăллă мар, романтикăллă хывăнать. Апла пулин те, кунта та (Çеçпĕлре), лере те (Мучире) публицистикăлăх тӳпи пысăк. Тарăнарах кĕрсе пăхсан, Мучие те романтик темелле, ун çĕкленӳлĕхĕ ку енчен сатирăна сиенлемест, ун функцине, философине палăртать çеç.

Студентшăн Мучие Çеçпĕлпе танлаштарни пач кĕтмесле пулĕ. Çеçпĕл те Сăмах хăватне туйсах ĕçленĕ, пĕр вĕççĕрех Чĕлхе пирки шухăшлаçа пуç ватнă. Сăмахăн мĕн ĕмĕртен килекен тымарĕсенче, философийĕнче вăл халăх культурин трагедиллĕ шăпине курнă. Çавăнпа тăтăшах «пулĕ», «килĕ», «юхмĕ» тесе çырнă. Кун сăлтавĕ, паллах, поэт Революцие шанманнинче çеç мар. Е, тен... вуçех те унта мар. Ыран сăнарĕ уншăн та, Мучишĕн те урăхла пулмалли паллă. Анчах çав Ыраншăн Паянăн тăкăсĕнчен хăтăлмалла, ăна сирсе ыватмалла, тесшĕн ăстасем. Хаçатра, митингра, кулленхи пурнăçра пуçтарăнса пыракан опыта туратлантарать Мучи, хăй те урăх Вăхăта куçать. Ыранпа паян пакапар тавлашни Калуçă чун-чĕрине улăштарса пырать, Сăмах еккине тытать. Шухăш туратланăвĕ, пулнипе пулманлăх черетленĕвĕ писателе каллех халăх ăс-какăлне тĕпчеме хушать, унта çав тăтăш пайлашу-аркану, кулăш объекчĕ икĕ-виçĕ сăн тупса пынин вăрттăнне тупма хистет. Тупсăмĕ — пĕрех, Сăмахрах, чĕлхерех-мĕн. Ахаль мар юморист, Çеçпĕл пекех, Чĕлхе сăнарне калăплать, ăна калавран калава куçарса пысăклатать, тĕрлĕ енсемпе сĕмлет — «Пыллă чĕлхе», «Шăмăсăр чĕлхе», «Асаплă сăмахсем» т. ыт. те. «Асаплă» тени Мучишĕн питĕ кăтартуллă: пурнăç чăнлăхĕ уншăн — Сăмахăн чăнлăхĕ. Чĕлхене те, Сăмаха та вăл сăпатлантарнă сăнар шайне çĕклет, ăна хăйне тĕллĕн персонаж пек хаклать. Чĕлхе тени вара символ енне туртăнакан аллегори пек хайланать, Сăмах — философиллĕ, символла сăнар пек ӳтленет.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

Сыпăка вуласа тухнă хыççăн çак ыйтусем пирки шухăшлăр, вĕсен хуравĕсене пĕтĕмлетсе тĕпчевлĕ доклад çырăр.

1. Чӗлхе ӑнӗ текен ӑнлава Мучин илемлӗ шухӑшлавӗпе шайлаштарни сатирӑн философиллӗ мӗнле енӗсем пирки шухӑшлаттарать?

2. Калас сӑмах логики пулмасла ӗҫ-пуҫ логики пек ҫаврӑнни чӑваш чӗлхе ӑнӗпе хӑш енчен ҫураҫать?

3. Чӑваш чӗлхе ӑнӗ пирки калани Мучи пултарулӑхӗнчи нациллӗ уйрӑмлӑхсене тупма мӗнле пулӑшать?

### Мучи хайлавӗсенчи сӑмахлӑ чӑваш культурин ӑнӗ, сӑмах ӑсталӑхӗн калуллӑ илемлӗхӗ

Ҫыравҫӑ кашни хайлавнех хӑйне евӗрлӗ шӑрҫалать, вӗсенче Сӑмахӑн пытарӑнчӑк чӗмне вӑратмалли условисем шырать. Сӑмах тепрер чух ӑна калаканӗнчен те расна, хӑйне тӗллӗн пурнӑҫпа пурӑнасса ӑнкарать, ҫавӑнпах сӑпатлантару вучӗпе хӗрсе сысна, ӗне, сурӑх, пырӑшӑ, пакарта пулса ӳтленет Калуҫӑ пӗлтерес тени. Шухӑш та, ҫавӑрас Сӑмах та, хайхи, театрализациленет, ун пытарӑнчӑк хӗмӗ хӗв шухӑшлӑ гротеск патне ӑнтӑлать. Сӑпатлантаруран вӑй илсе пыракан гипербола япалан, пулӑмӑн, ӗҫ-пуҫӑн туратланас, вакланас, икке-виҫҫе пайланас еккипе пӗрлӗхленет, ун ирони таппипе пӗтӗҫет. Кун пек чухне произведени жанрӗ те хӑйне евӗрлӗ: юптару капашӗ-ӗлки сӑнарлӑ шухӑш таппипе пӗрлешет, ун пехетлӗ нӳрӗкне туртса ытарланать. Кунашкал пулӑм Мучи пултарулӑхне нацин сӑмахлӑ культурин, ун ӑнӗ енчен хаклама хистет. Ӗмӗрсен пархатарлӑ йӑлине кӗнӗ, халӑх пурнӑҫне мал туртӑмлӑ ҫулӑмпа хӗмлентернӗ сӑмахлӑ культура чӑвашсен кӑмӑл-сунӑм хӑватне, шухӑш-туйӑм вӑйне пухса упранӑ ҫеҫ мар, ун таптарӑш энергине пысӑклатсах пынӑ. Ҫынсем пӗр-пӗрне кала-кала кӑтартнӑ лаша вӑррисем-мӗнсем ҫинчен ҫаврӑннӑ калавсенче, ӑса вӗрентекен хайлавсенче эпикӑллӑ поэзипе прозӑн нациллӗ чӗрӗлӗхӗ чӑмӑртанса тӗвӗленнӗ. Калуллӑ (повествованиллӗ) текстсем чылай чух виҫӗ пайлӑ пулнӑ, тенӗччӗ маларах (паспорт, действи, мораль). Профессиллӗ прозӑпа (эпикӑллӑ) поэзия чӑн чӑвашла шухӑша амалантаракан стиль палӑрӑмӗ те тупӑннӑ ҫапла.

Чӗлхе ӑнӗ калаҫу хатӗрӗсенче кӑна (сӑмах, фраземӑсенче, сӑмахсенче ҫыхӑнтармалли грамматика майӗсенче) тӗртӗмленмен. Кулленхи пурнӑҫ таппи пуплеве, ун шалти содержанине вӗҫӗмех улӑштарса ҫӗнетет. Ахаль чухнехи, кашни кунхи калаҫу кулленшер ирони сӗмӗ туянать, илемлӗхӗн тӗрлӗ тӗсӗсемпе пуянланать, хӑй ӑшне тӗрлӗрен поэтика, риторика йӗрки-шывне илет. Нацилӗхрен сӗтек илнипе калулӑх тенӗ пулӑм шӑтса тухать, ӳссе сарӑлнӑҫем чӑваш литературине тӗпрен витерет. Профессиллӗ литературӑн пирвайхи тӗслӗхӗсем, сӑнаса пӑхсан, шӑпах ҫав енсем мала килни ҫинчен калаҫҫӗ. Илемлӗ чӑваш литературинче халӑхӑн сӑмах вӗҫҫӗн ҫӳрекен калуллӑ хайлавӗсенчен (сӑмахӗ кунта прозӑпа поэзи пирки пырать) тымарланса тухнӑ, калулӑх тӗшши чӑвашсен пӗтӗм прозине сӗтеклентерет. Пӗр-пӗр ҫын, событи, лару-тӑру, эпизод... ҫинчен каласа панӑ чух ӗмӗрнех ҫав событисен, эпизодсен... документлӑхӗ ҫине таянма тӑрӑшнӑ, ку кӑмӑл паспортра палӑрнӑ. Иккӗмӗш пайӗн те (действин) хӑйле кӑсӑкӗ пур — Калуҫӑн унта ӗҫ-пуҫа ӳстеререх калама тивнӗ, ӑна пӗтӗмӗшле шухӑш, ӑса вӗрентекен мораль, философиллӗ ӑслав патне туртӑнтармалла пулнӑ. Действи час-часах речедействи пек хывӑннӑ, хӑй ҫинчен теприне каласа паракан монологӗ пулса ӳтленнӗ. Кунашкал ҫырнӑ повесть-калав чӑваш литературинче — ҫӗршер, пуринче те вӗсенче жанр килпетне тытакан ҫак пытарӑнчӑк пур.

Шухӑш аталанӑвӗ юптарун жанр ӑшӗ-чикки тӗлне авкаланса ҫитрӗ. Анчах та кунашкал ӗҫ калӑпӗ унта кӑна тӗл пулмасть иккен, пач юптаруллӑ мар хайлавсенче те куратпӑр ӑна. Авалхи пурнӑҫ ҫинчен каласа паракан бывальщинӑсемпе преданисенче, легендӑсенче, ӑса вӗрентекен калавсенче асӑрхатпӑр, усал-тӗселпе ыр-хаяр ҫинчен пӗлтерекен мифсемпе

пулмăшсем (быличка) те çав калăпах кăмăлласçĕ-мĕн. Сăмахлă культурăн ĕмĕртен ĕмĕре, ламран лама сыпăнса пыракан туртăмĕ вăл, çак пулăм. Ахальтен-им малтанхи прозăпа поэзи тексчĕсенче çак тĕлĕшлĕ кăсăк (Игн.Иванов, И.Юркин пултарулăхĕсенче) тарăн йĕр хăварнă. Игн.Иванов хайлавĕсенех илер. Ятнех пĕр-пĕр çыннăн тĕрлĕ енĕсене палăртарах парать прозаик, кулленхи пурнăçра нимĕнпех те палăрман пек, вак-шак пек ĕçе-хĕле культура пĕлтерĕш кўрсе ўстерет. Шултран тăрăхласа çыракансен аллинче кунашкал проза юптарулăх техĕмне татах вăйлатать. Действи пайĕ кунта туратланакан, вакланакан ўсĕме хисеплерех пырать. Мучи çырнисенче юптарullă калăпăн шалти содержанийĕ вак-шак пек туратлану шайĕнчех юлмасть, пĕр пĕтĕмĕшле, нравоописаниллĕ сăпат та тупать. «Чышкă тытăмĕнче» икке-виççе пайланнă детальсем, пулăмсем, сăнсем ĕретленеççĕ, Октябрьччenхи сывлăша пĕрлĕхлĕн сăнарлаççĕ, ун пăнтăхне уççăнлатаççĕ. Анчах куншăн Сăмахăн юптарулăхĕ, ун театрти пек курăмлăхĕ чакмасть.

Паллах, «Тĕшмĕш чăпти» те, «Чышкă тытăмĕ» те юптарусем мар. Юптару кунта (пĕтĕм, çак кăсăклă прозăри пекех) — илемлĕх хатĕрĕ çеç. Хайлавсен сăнарлă, публицистикăллă хавал вăйтармăшне ўсĕмлетет вăл, Мучин никампа пăтрашмаслăхне пайăррăн палăртать. Вăлтас, шак хурас, шахвăртас, юптарас туртăм эппин эпикăллă поэзипе прозăшăн тĕп стиль мелĕсенчен пĕри. Шўтлĕ мар хайлавсенче те тĕл пулать вăл, шўтлĕ хайлавсенче те яланах юптару жанрĕпе çеç пĕр тĕле килмест. Илĕпĕр ак «Арçурие». Юптару мар вăл, анчах юптарса калани те пур унта. Калăвăн структури те шăпах çапла: малтан Хĕветĕре паспортласа хак панă поэт, ун «документлăхĕ» çине пусăмланă («Эсир ăна пĕлетĕр»), кўршиарши патне мĕн нушапа çўренине кăтартнă, вĕсене те кĕскен паспорт паллисемпе сĕмленĕ. Кайран Хĕветĕр вăрманта мĕн шар курни ума килет. Вĕçĕнче — сарă хĕрсене хистесе калани, ăс парулла кăмăл. Юптарури пек аллегори кăна та мар поэт усă курнă поэтика, символла тарăнлăх пытарăнать поэмăра. Жанрĕ те нумай енлĕ, синкретикăллă: каланă шухăшĕ вăлту екки тытнă, ăса вĕрентес хавал тупнă, халăхăн кулленхи пурнăç таппи çинчен пĕлтерес кăмăл хывнă, наци кунĕ-çулĕ çинчен пуç ватас тĕв тунă. Стилĕ енчен те çапла нумай саслă «Арçури» — публицистикăллă аллегори те пур унта, философиллĕ сунăм та, шўтлĕ, иронилле интонаци те. Çавна пулах калас шухăшĕ тарăн, туратлă, пиçĕ, ум перспективăллă. Жанр никĕсĕнче ним пĕлтерĕшсĕр, вак-шак ĕç темелле: этем, вутă пĕтнĕрен, вăрмана хăрăк шанкă пуçтарма каять... Çук, вак-шак та мар автор тытнă тĕллев, вак-шакки вăл çиелте, ăна вăлтма, ухмаха пенĕ пек тума, сăмаха сыпса яма каланă. Шалта, тарăнра — урăххи, наци философийĕ, ун кун-çулĕн тĕшши. Чыссăр вилĕм пирки шута ўкет герой, çав шăпа хăйне тивĕçесрен хăрать, капла пулса тухсан аппĕ-амăшĕн ячĕ çĕресрен шикленет, ывăлĕ-хĕрĕ пўкле нуша тупасран асăрханать. Пĕрлех, чăваш ятне чыслă тытасси те кирлĕ Хĕветĕре. Ун ăс-хакăлне, чун опытне перекетлĕн, ача-пăча умĕнче тивĕçлĕ упрасси хаклă. Çынна ырă суннă чух «турă ыр вырăн патăр сана» тесе пилленĕ чăвашсен ваттисем. Чи пысăк, чи таса пил пулнă ку, этемĕн пĕтĕм пурнăçне калăпласа-шăнăрласа тăракан пил. Ыр вырăн тивĕçменнисем Арçурие тухнă, пўкле вилнисен масарĕнче выртнă. Унта та канăç тупăнман теплерен: çумăр çумасан тăприсем çурăлнă, вилесем вара çĕр çине тухса чыссăрланса çўренĕ. Эппин, вăлту тупсăмне уçма наци культурин «чунне» тĕпчеме тивет студентăн.

Чăваш литератури чăн чăвашла, чăн нациллĕ стиль палăрăмĕ тупать çапла, философиллĕ тĕшĕрен ӳссе хăпарас, хунавланас, ĕмĕре чĕрĕ вуллăн паркаланас техĕм хывать. Тăхтин ку туртăм тата вăйлăрах палăрать, ытахаль публицистикăшăн кăна çырнă, ниме пĕлтермен кулăш пек хăрталанă тĕрленчĕксем, очерксем, калавсем шӳте те философи вăйтармăшĕ парасçĕ. Тăхтипе Мучирен вĕренсе çак поэтикăна Хв.Уяр алла илет, М.Илпек кăмăлла пуçлать. Мучи калавĕсем (пурте тесен те çылăх пулас çук) те çапларах структурăллă. Унта та публицистикăллă нравоописани, ăса вĕрентсе калассипитлесе тăрăхласси, сăмахпа витересси тĕллевлĕ пĕр тĕвве пуçтарăнать. Чăнах та, юптару, юптарулăх тенине хăйне тĕллĕн кăна илме çук. Халăхăн ĕмĕрхи йăлинче вăл трагедипе, драмăпа, фарспа çыхăннă. Анчах кашни синкер кун пек чухне камитлĕ, шӳтлĕ кăмăлпа пĕрлĕхленнĕ, ăна, çав трагедие, Сăмахра, ун аталанăвĕнче тишкерессипе пĕрлешнĕ. Çапла туса умри, хыçри йывăра çĕнтернĕ чăваш, пурнăçăн малаш ориентирĕсене шыранă. Кашни япалана, пулăма, ĕç-пуçа тĕрлĕ пайсем çине уйăрса тĕсенĕ, пайăр енсен ăшĕ-чиккине тишкернĕ. Çавăнпах юптарăва, вăлтăва, шахвăртăва чăвашсен сăнарлă шухăшлавĕнчи философийĕн тĕп калăпĕсенчен пĕри тесе хаклама юрать. Пурнăç малашĕ çав калăпра — Сăмах (культура символĕ) пулнă-тăр.

Тата тепĕр ен черетленсе килет ума, шухăш çаврине тĕвĕленет: чăваш çынни нимле лару-тăрура та тăр-пĕччене, индивидуалиста, эгоиста тухман, ялан халăхпа, ун чун опычĕпе, ун таппипе пурăннă вăл. Акă мĕншĕн çут çанталăкра çухалса, çĕтсе кайман вăл, пурнăç хавасне хăй аллинчен, чунĕнчен тартман. Тата тепĕр тĕртĕм — сăнарлă шухăшланă чух та, философилле ăславсем калăпланă чух та пирĕн халăхăмăр хатĕр сăнарсемпе, хатĕр ситуацисемпе, хатĕр сюжетсемпе, ытарлă хатĕр шухăш тĕввисемпе ĕçленĕ пулĕ. Юптару та чăвашăн çакăн пек шухăшлав калăпĕ пек хывăнса пынă теме юрать, унра тĕрлĕрен ăсчахсем, ӳнерçĕсем наци кун-çулĕн яланхи, ĕмĕрхи палăрăмĕсене шыранă. Хушса каламалăхĕ те пур — юптарулăхпа вăлтаслăх, шахвăртупа шак хурасси чăвашсен эстетикăллă шухăшлавĕн пĕр енĕ. Пирĕн сăмах пултаруçисем эпикăллă шухăша тытас чух хатĕр лару-тăру тĕшшине шĕкĕлчеме савни. Урăхла çавăрса калама та юрать: сăмахлă культура философийĕн ĕмĕрхи чунĕ-юнĕ, ун ĕçлеслĕх таппи, ун вилĕмсĕр энергийĕ. Энергийĕ вара пĕтмест те, çуралмасть те, пĕр тăрăмран теприне куçса аталанать вăл.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Калуллă илемлĕхĕн тĕпрех енĕсене уйăрса кăларăр, вĕсене шута илсе Мучин темиçе калавне тĕсесе пăхăр.

2. Игн.Иванов калавĕсенчи калулăхăн пĕрешкел мĕнле енсем пур? Ыйтăва хуравласа курс ĕçĕ хатĕрлĕр.

## Геройӑн, лару-тӑравӑн типлӑхӗ, вӗсен социаллӑ тавралӑхӗ. Публицистикӑллӑ ҫырав уйрӑмлӑхӗсем. Интертекст тата жанр хушшинчи ҫыхӑнусем

Мучи яланах хатӗр прототипсемпе ӗҫлет. Кайран вӗсене пайлама, ваклама пикенет, кулӑшла икӗ енлӗх тупать. Тепӗр чух Мучи аллинчи материал уҫҫӑнах хатӗр ситуаци еккине ӗҫлеттерсе яма хушать, мӗншӗн тесен пӗр текст тепӗр текста (интертекст саккунӗпе) пароди кӑшӑлне вырнаҫтарать. Механизмӗн, калӑпӗн хӑйле аталанас чӗмӗ чӗрӗ: пӗр-пӗр этем социаллӑ ушкӑн, халӑхри пӗр сийӗн, класӑн представителӗ пек сӑнланать. Персонаж екки-ӗлкине уҫса пани, ун йӑли-йӗркине сӑнарлани — кун пек чух — ун ҫав сие, ушкӑна, класа тивӗҫ, типлӑ енсене ума кӳни. Ҫав ӗҫре Мучи Н.Гоголь, А.Франс, Г.Уэллс, Д.Свифт, Д.Фонвизин традицийӗсем патне туртӑнать. Типлӑхӑн шултран кӑтартмалли енӗсем пирки шухӑшласа пуҫне ҫӗмӗрет. Сатирӑпа питлемелли, сарказмпа витермелли ун куҫӗ тӗлне пулсах тӑрать. Шухӑшӗсемпе ансӑр, кӑмӑлӗпе кайттӑ, ӗмӗчӗпе лӗкӗллӗ, ытти ҫавнашкал ҫынсене, лару-тӑрава питлет кулӑш пултаруҫи. Куллен-кун нуши-хури вӗсен ырӑкӑмӑллӑхне сӗвӗртсе пӗтернӗ, чун анине хӗсӗклетнӗ, вак-шак нуша айне тунӑ. Хут пӗлменлӗх, теприн кӑмӑлне уя пӗлменни е ятнех уяс теменни, хырӑм нуши асла тухни, пӗчӗк пуҫа пысӑка капаштарса сарӑпланни, ӗҫри ӳркев, чун лӗкки тарӑхтарать публициста, гротескламалли майсем шыраттарать. Ку типсем, паллах, — социаллӑ пулӑм. Социаллӑхӗ вара — Мучин публицистикӑллӑ тӗнчишӗн кӑтартуллӑ енсенчен пӗри. Вӑл та ытти, асӑннӑ енсем пекех, — тӗпри. Вӑлту-юптару та, куна пула, писателӗн аллегори ытамне лекерех пырать. Ҫак енчен пӑхсан, Мучи шухӑшлавне аллегориллӗ теме пулать; пулӑмӗ ку — калава йӗркелет, сюжета хиврелетет, шухӑша ҫивӗчлетет. Ҫакӑ вара Мучие мӗн пур поэтика мелне, стиль хатӗрне, илемлӗх паллисене аллегорипе ҫураҫтарма хушать. Мучин юптарулӑхӗ вара ҫав аллегори туратланса, хунавланса кайнипе тӗрекленет. Тӗрлӗ прототипсем ун социаллӑхӗн никӗсӗ терӗмӗр, анчах вӑл халӑх культуришӗн «чунӗпе» те, ҫийӗпе те — тӳнтер, ун малашлӑхӗшӗн ют. Мучи ҫав тӳнтерлӗхе пайӑрлатса ҫырав ӑсталать, йӗклентерекен пулӑмсен пуплев виттине ресемантизацилет, ун шалти тытӑнкине логика тӗлӗшӗнчен аркатать. Пурнӑҫри ҫӗнелӳ социализмӑн мал ӗмӗтлӗ туртӑмӗсемпе ҫыхӑнасса, унра хавал таппи тупасса ӗненсе ӗҫлет.

Ҫак енпе ӑна каллех Ҫеҫпӗлпе танлаштарма пулать. Вӑл та культурӑшӑн, культурӑра, культурӑпа ӗҫленӗ, культурӑна чӗлхе сӑнарӗнче символланӑ. Вӑл та, Тӑхти пекех, чӗлхепе пуплеве наци ӑнӗн, сӑнарлӑ шухӑшӗн чи тӗп палӑрӑмӗсенчен пӗри тесе йышӑннӑ. Чӗлхепе пуплеве, ун ниҫта та, нихҫан та сӗврӗлми чӗрӗлӗхне культурӑн тӗп никӗсӗ вырӑнӗнче курать вӑл. Парадоксӗ те, ресеманчӗ те Мучин Сӑмахӑн вылянчӑклӑхӗпе сӗтекленеҫҫӗ. Чӑн та, «калуллӑ», вылявлӑ Сӑмаха Мучи обществӑпа политика еккипе чуптарать, публицистика витерӗшлӗхӗ енчен вӑйлатать, типлӑ сӑнарсем тӑвассине ум ярать. Ӑнсӑртран ҫаврӑнса тухнӑ пек шухӑш тӗвӗленӗвӗ пӗрех интрига техӗмӗ тупать. Сӑмах-юмах таппи тӳрех Калуҫӑ такампа тавлашнӑн, такама ҫине тӑрса ӳкӗте кӗртме тӑрӑшнӑн сыпӑнса каять. Уйрӑммӑнах юптаруллӑ текстсен иккӗмӗш пайӗнче уҫӑмланса каять ҫав хевте. Час-часах сӑнарланман темле оппонентпа пупленӗн хывӑнса

пырать хайлав, тăтăшах диалоглă майпа («Асаплă сăмахсем», «Килти экзамен», «Чышкă тытăмĕ») çырать хăй япалисене публицистика ăсти. Диалогăн кунта шалтан таптарса, аталантарса тăракан техĕмĕ пур, анчах пĕр персонаж тепринпе калаçнă пек тăвасси вăл Калуçă пĕр-пĕр объекта пайланин, унра кулăшла тăтăшлăх курнин, описани тумалли майсен кăтартăшĕ кăна. Ку ĕнтĕ — калуллă Сăмах театрĕ вăл, писатель çав «калуллă театр» саккунне пăхăнса çырнин палли. Социаллă типлăх, геройсен сăнарлă тавралăхĕ пирки пуç ватса ĕçлени.

Сăнарлă публицистика ялан тенĕ пек полемикăна савать, тавлашулăха хăйĕн аталану тĕпне вырнаçтарать. Мучи ăсталанă Калуçă такампа тупăшнăн, такама ĕнентернĕн çырни-туни те çавнах кăтартать. Диалограх сатирик пĕр-пĕр Сăмах вылявне гротескласа пырать, диалогĕ — ресемант валли кирлĕ паха услови хывать. Интертекст саккунĕ те ку условисем хайлас тĕлĕшрен питĕ пĕлтерĕшлĕ. Текстсем кăна мар, кун пек чух тĕрлĕ стиль сийĕсем, жанр саккунĕсем тавлă çыхăнăва кĕреççĕ. «Сысна валли майлаштарнă механизм» фельетонра, çапла, хаçат валли хайланă репортаж, пĕр персонаж теприн патне янă çыру, публицистикăллă очерк жанрĕсем хире-хирĕçленсе тупăшаççĕ. Эппин, писатель ятнех тĕрлĕ жанрсемпе тĕрлĕ стильсем диалоглă хутшăнăва кĕни çине тĕллесе кăтартать. Стильсен, сăрсен сийĕсем те шăпах çавна тивĕçлĕ: çырури чун уççи, çурма очеркла, çурма фельетонла публицистика çумлăн аталанаççĕ. Калавсерен расна сăрсем тупăнаççĕ пуплев тыткаларăшне тытса пыракан Калуçăшăн. «Хăнчапа Хăçанра» — Калуçăн сăнарлă никĕсне анатрипе тури чăвашсем пĕр-пĕрне ăнланманни, вĕсем тавлă аталанни выртать. «Хăрушă кунра» выльăх-чĕрлĕх сассисене палăртакан евĕрлев сăмахĕсен системи тата ăна илтсе калу ăсталакан геройăн пуплев тăтăшĕ. Диалогăн та, текстри сийсен хире-хирĕçлĕхĕн те, Калуçăн пуплев структурин те хăйĕн философиллĕ пĕлтерĕшĕ, сăнарлă вырăнĕ пур. Сăнарланă пурнăç икке уйрăлать, икĕ енлĕх кулăша тĕплет. Диалоглăх публицистикăллă шухăшлава кăшăлласа тăрать, шалтан витерсе вăй парать. Ку та (диалоглăх) Мучин тĕнчине чи тĕпе килекен кăтартуллă енсенчен пĕри. Калу та, сюжет та, сăнланă тĕнче те майĕпен фрагментарлăх, ўкерсе панă кашни сăнăн пайăрлăхĕ еннелле сулăнаççĕ. Кашни деталь, сăн, сăпатлантарнă кашни ен нимрен ытла монтаж саккунне ĕçе кĕртет.

Çакнашкал ĕç юхăмĕнче кашни деталĕн, сăрăн вылянчăклă пĕлтерĕшне, пайăр сăпатне, ытарлăхне курма май пур. Агитациллĕ Сăмах театрĕ евĕр калăпланса пырать публицист аллинчи чăнлăх. Акă тĕслĕх: «Паçăр колхоз ани тĕлĕнче тăрри-тăрри» тесе юрлакан кайăксем: «триер, триер», — тесе вĕçеççĕ халĕ. Сăлтавĕ паллă — этем колхоза кĕнĕ, вăрлăха тасатма кирлине ăнланнă, пĕрлехи ĕç сывлăшне хăйĕн чун пахи тума ĕмĕт тытнă. Кун умĕн кăна-ха, персонажа килти япали, выльăххи, хăйĕн пырши-пакарти сăпатланса, этем чĕлхипе калаçса аптратсах çитерНĕччĕ. Вĕсене сăнарланă чух сатирик политика тĕлĕшлĕ кăмăлпа хĕмленнĕ, пафоса объективлă карта лартса хывнă («Хăрушă кун»). Фантази, фантасмагори пеккин юмахлăх тўпи пысăкланать, евĕрлев сăмахĕсен тăтăшĕ гиперболăна хăйле функци кўрет. Этем вара сăпатланнă персонажсен сасси-шавĕнче авраш кăмăлран хăпать, ыттисемпе пĕр рете тăмаллине уççăнрах ăнланать. Ĕç-пуç ятне калăпланă профаваци енне сулăнать, кульминацири абсурда çитет. Монтаж йĕркине мала кăларнă çыравçă ку ĕç-пуç мĕнле пулса пынине кĕскен кăна каласа каять, ăнлантарса,

сӑлтавласа пырассине шута хумасть. Ҫакӑнта ҫитменлӗхӗ те куранса каять — ытла та васкаса хӑрталаса хурать хӑй хайлавӗсене публицист, черетлӗ журнал («Капкӑн») номерӗ валли ал хапӑл ҫырса хунипе ҫырлахать. Ҫавӑнпа профанацийӗ те, абсурдлӑхӗ те шултраланса пыракан детальсенчен речӗпе — теплерен — тивӗҫлӗ условисем пиҫсе ҫитмерех пӗрлешсе каять.

«— Чирлерӗм», — тет пӗр калаври герой. — «Мӗнле чирпе?» — ыйтаҫҫӗ унран пӗрлехи ӗҫре ӑнтарнӑ колхозниксем. «— Рак чирӗпе. Хырӑма рак кӗрсе кайнӑ...» («Йӑлай Йӑкӑначӗ»). Геройсем хӑйсене ухмах пек кӑтартни, айванла тыткаларӑшӗ — Сӑмаха вылятма кирлӗ услови. Калас пулать, ухмаха персе калаҫасси, хӑйне юри айванла тытасси чӑвашӑн ӗмӗрхи йӑли. Тӑхти хайлавӗсенче ҫак меле писатель этем хӑй чысне хӳтӗленӗ чухне ӗҫе кӗртнине куратпӑр. Мучин профанацийӗ — сатирӑшӑн, питлевшӗн кирлӗ абсурд. Чылай чухне вӑл выляса пыракан Сӑмах таппипе ҫураҫуллӑ. Мучие геройсем кирлех те мар, персонаж вырӑнӗнче вара кашӑк-чашӑка та, этем организмӗн пайӗсене те сӑнлама пултарать вӑл. Функцийӗ кӑна ялан пӗрре — ретрен рете сыпӑнса пыракан событисене, пулӑмсене градаци ритмне кӗртесси, ҫав ритм аталанӑвне абсурдлӑ кульминаци, ниме пӗлтермен тӗвӗ, профанаци патне ҫитересси. Вӗсене тӗрлӗ тӳнтерӗн типлӑхне аркатма ӗҫе кӗртесси. Арканнӑ пулӑмсен речӗ шӳтлӗ ҫыхӑнӑва кӗрет, ӑна йӗркелекенни — геройсене, событисене ҫӗнӗ аурӑра хак паракан Калуҫӑ. Описани таппине вӑл профанацин ӳсӗмленекен хӗрӗвӗпе ҫуммӑн тӑратать, пӗрин теприне куҫмалли социаллӑ условисем тупать. Фрагментлӑн сыпӑнса пыракан йӗрсен, стиль палӑрӑмӗсен, описани пайӗсен ӗретленӗвӗ Сӑмах динамизмне пысӑклатать, сатира чӗрӗ, хивре ритмлӑ пулса пырать. Илпек те, Таллеров та ҫак поэтикӑна хута яраҫҫӗ, анчах Илпек гротескалла талпӑнакан событисен ретне туллинрех, сӑлтавларах пырать. Ку вара сатира мехелӗ мар, ӑш кӑмӑллӑ ирони чунӗ пулса тӑрать. Чӑн та, Илпеке капла ӗҫлени нумай сӑмахлӑх еннех сулса ярать, калас Сӑмах ситрен-хутран вакланарах каять.

Мелӗ ку (Мучин те, Илпекӗн те) Гогольрен вӗреннӗскер пулӗ, вӑл та нравоописанилле хайлавсем ӑсталанӑ, ӳкернӗ сӑнсене шӳтпе витернӗ. Анлӑрах пӑхсан, пӗр йышшилӗхӗн градацилле вӑйне публицистикӑпа философилле литература поэтики теме те пулать пулӗ. Пӗрех, ун жанрӑн шалти содержанине нацилле енсемпе вӑйлатасси те ҫук мар. Ку черетленӳлле ҫырав (описани) хӑйне евӗрлӗхӗ жанр содержанине те пырса тивет. Градаци (событисем, детальсем, эпизодсем ретленни) нравоописани (йӑла ҫыравӗ) мехелӗ пулать тенӗччӗ малтан. Фрагментарлӑх монтаж мелне ӗҫе кӗртме хушнине асӑннӑччӗ, ҫакӑ пурӗ пӗрле чӑвашсен эстетика шухӑшлавӗпе таччӑн ҫыхӑннине астутарнӑччӗ. Илес ак Уяр романне. «Тапатара» вӑл кашни героя хӑйне тивӗҫ стиль сферипе ҫырса кӑтартнӑ. Ку вӑл пайӑрлӑх, шӑпах нравоописани техӗмӗ. Стиль сферисем пӗри теприне ылмаштарса черетленни роман ӑшӗ-чиккине чӑвашлӑхпа пуянлатма май панӑ Уяра. Тӑхти те монтаж мелне пысӑка хунӑ, Мучи те ӑна кӑмӑлланӑ. Ҫырас ӗҫе М.Федоровран, Тӑхтипе Мучирен нумай вӗреннӗ Уяр та пӑрӑнса иртеймен ҫав мелрен, ҫавӑнпа шӳтпе камитлӗх, кулӑшпа пӗтӗҫнӗ трагеди таппи нумай Уярӑн кашни романӗнче. Тепле тесен те черетленӳ, пӗр йышшилӗх — эпика сывлӑшӗлле поэтика мелӗ кӑна мар эппин, чӑваш прозине шӑмӑ таран ҫапнӑ публицистикӑлӑха аса илтерет вӑл. Тӑтӑша каякан мехел тем пысӑка систерет, ӗҫ-пуҫӑн анлӑ техӗмӗ-

панорами çине шак хурать, социаллă типлăха ум яма хушать.

Черетленӳ ялан тенĕ пек градациллĕ ӳсĕмпе çыхăннă. Анчах публицистикăллă çыравăн, этологин çак мехелне кашни ăста хăйне майлă йĕркелет. Илпек, тĕслĕхрен, ӳсĕмленес событисен, чун тăрăмĕсен йĕркине Мучи пек çине тăрса, пусăмласа мар, вĕттĕн, систермесле аталантарса пырать. Куна пула калу интонацийĕ лирикăллăрах, ирониллӗрех пулса пырать. Мучин çак ĕç таппинче гротеск, гипербола, шултраланă событисен, çаврăмсен аталанăвне курас килет. Кашнине пĕрне вĕсене вăл капти-капти яра-яра илет. Ку меле вырăс çыравçисенне те курма пултаратпăр, вĕсен те хăйле расналăхĕ пур. В.Маяковский те гиперболăн ӳссех пыракан таппине кăмăллать, ресемант йĕркине вырăна хурса çĕнĕ сăмахсем тăвать — <u>дамье</u>, <u>парижак</u>, <u>серпастый</u>... Ку вăл вырăс чĕлхин ăнĕнчен килекен япала, унта чĕлхе пуянлăхĕ сăмахсен йышĕ ӳсни çине те тиенерех парать-çке! Чăваш чĕлхи вара çĕнĕ ăнлава унчченхи лексика хатĕрĕсемпех пĕлтерме пуласса ĕненет. Сăмахăн куçăмлă тата тепĕр пĕлтерĕш хывăнать çапла, чĕлхе хатĕрĕсем перекетленеççĕ, Сăмахăн ытти сăмахсемпе çыхăнас пултарулăхĕ пысăкланса, анлăланса пырать. Мучи те ав, сăнарлă çыхăнусене çĕнетессинех кăмăллать, çĕнĕ сăмахсем тăвасси кирлех те мар ăна.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Мучи хайлавĕсенчи градациллĕ черетленӳ мелне сăнаса темиçе калава тишкерĕр, сатирикăн ку ăсталăхне Л.Таллеровăн «Пĕчĕк çеç путене» повеçри черетленӳ мелĕпе танлаштарăр. Пулăмсем, ĕç-пуç черетленни çыравăн хăш енĕсемпе килĕшӳллĕ?

2. Мучи хайлавĕсен публицистикăлăхне ун хайлавĕсенчи хăш уйрăмлăхсем лайăхрах палăртаççĕ?

Икĕ ыйту çине хуравласа курс ĕçĕ çырăр, унта сăнарлă публицистикăн уйрăмлăхĕсене тупса палăртăр. Ĕç теми: «Мучи хайлавĕсенчи çыравăн публицистикăллă сăн-сăпачĕ».

### Илемлӗ хайлаван сатирӑллӑ тытӑмӗ. Сӑмахӑн, шухӑшӑн, лару-тӑрӑвӑн сӑнарлу объекчӗн вылянчӑклӑхӗ

Ку яхӑна аталанса ҫитнӗ шухӑш тата тепӗр ҫаврӑм тума сӗмлентерет. Вылянчӑк пӗлтерӗшлӗ ҫыхӑнусен таптаруллӑ вӑйӗ, тӗрлӗ сийсен диалоглӑ, интертекстлӑ хутшӑнӑвӗсем, вӗсем профанаци тӳпине ҫитни — пурте ку каллех чӑн чӑвашлӑх палли. Уяр романӗсенче те ҫакнах куратпӑр, вӗсенех Тӑхти шыравӗсенче асӑрхатпӑр. Этем ку хайлавсенче хӑйне ятнех пӗчӗке хывать, катӑка персе калаҫать. Анчах ҫапла туса вӑл хӑй тивӗҫне хӳтӗлет. Ҫырав мелӗ пӗр-пӗр тӑрӑма (чун тӑрӑмне, общество тӑрӑмне...) сӑнлама кирлӗ пулни ҫителӗксӗр Мучишӗн. Ҫав тӑрӑм кульминацие ҫитнӗ пулӗ тен. Тӗрлӗ йӗрсен, шухӑшсен, асапсен, социаллӑ хирӗҫӳсен аталанӑвӗ чи пысӑк шайра. Ӗнтӗ халӗ ӑна, ҫав шая, шӗкӗлчесе пӑхма вӑхӑт ҫитнӗ. Мучин кашни хайлавӗнчех пур ку идея. Вӑл, ҫитменнине, илемлӗ хайлавӑн шалти тытӑмне (структурине) йӗркелесе пырать. «Чышкӑ тытӑмӗн», ав, арканса каяс вӑхӑчӗ алкумӗнче тӑрать. «Тӗшмӗш чӑпти» Ухливан мӗншӗн никам мар пулса юлни те паллӑ Калуҫӑшӑн. Чее Еххӗмӗн хӑтланкаларӑшӗсем те уҫӑмлӑ уншӑн. Кашнинчех сатирик иртни патне тепре таврӑнать, ҫав таврӑнӑвӑн ытарӑш-йывӑрӑшне Калуҫӑ хул пуҫҫийӗ ҫине тиет. Ҫав таврӑнуран килет те пайлас, ӑна (пайланма тивӗҫнӗ объекта) пайӑрласа тӗсес тӗллев. Ҫакнашкал уйрӑмлӑхсене Гордеев пултарулӑхӗнче те асӑрхатпӑр. Вӑл та хӑйшӗн пӗтӗмӗшле илсен паллӑ феномена пайласа пӑхасшӑн. Анчах чылай чухне пайланнӑ сийсем ҫав шайрах юлаҫҫӗ ун, тӗнчен нумай сийлӗхне ярса илеймест писатель хӑй калавӗсенче. Пӗчӗк ҫын хӑй чунӗнче чакаланать ытларах, хӑш-пӗр повеҫсенче («Шӑрҫа пуҫлӑ ҫӑпата»; «Аваталла-тӑвалла»...) кӑна этемӗн чун арканӑвӗ, тӗнче арканӑвӗ пулса тӑрать. Ку ҫырав та общество тӑрӑмне ҫырса кӑтартни. Ҫак енчен Гордеев Ю.Скворцова ҫывӑхрах тес пулать, вӑл та тӗнче арканӑвне шӳтпе ҫыхӑнтарма васкамасть. Сӑлтавӗ кунта ак мӗнре: пулса иртнӗ ӗҫ-пуҫпа ӑна таврӑнса ӑсласа илни хушшинче пӗчӗк кӑна дистанци пур. Шӳтлӗ хайлавсенче вӑл дистанци самай пысӑкрах.

Ҫавӑ паха та. Уярпа Тӑхтин пӗчӗк ҫынни пӗчӗк те мар темелле, ухмаха персе вӑл хӑй чунӗн пысӑклӑхӗ ҫинчен систерет. Хӑй пуҫне пӗчӗке хывса пысӑккине тиркештерет. «Ӑста эс, тинӗс?» повеҫре Уяр ку пулӑмӑн икӗ енне те харӑс сӑнарлать. Тӑхти геройӗ пӗчӗк пулсан та таса чунлӑ, ҫирӗп кӑмӑл-сипетпе пысӑк. Уярӑн Петӗрӗ хӑйне тепрер чух Наполеон вырӑннех хурать, ҫын умӗнче вара пӗчӗкленсе вылять. Сӑмах-юмаха ухмаха персе вылятни кунта — философилле пулӑм. Хушса та калӑпӑр: тӗрлӗ сӑмах, лару-тӑру, эпизод айванлӑх картне ларни, выляса тӑни, пысӑк япала пӗчӗке капашса хӑйӗн чӑн пысӑклӑхне палӑртни — чӑваш наци философийӗн тӗп паллисенчен пӗри. Чӑваш шӳтне, шӳтлӗ литературине тӗпчени ҫакна тарӑнрах ӑнланма пулӑшать. Чӑн та, кун пек тарӑнлӑх пур чухне те (Мучи хайлавӗсенчи пек) ҫиеле тухмасан та пултарать. Ҫиелте палӑраканни — аллегори, Мучи хайлавӗ ҫав аллегорипе тутлӑхланать. Урӑхла пулма та пултараймасть, мӗншӗн тесен сатирӑн ӗмӗрхи саккунӗ шӑпах ҫапла тума хушать писателе. К.Петров та тӑтӑш усӑ куркалать ҫакнашкал мелпе, каламбурласа выляса илнӗ ҫаврӑмсене текст тӑрӑшшӗне яма вӑй хурать, анчах ку вара (прози пачах сатирӑллӑ мар пирки) чӑнласах ҫиелти мел пулса юлать.

Калавсенчи атрибутика питĕ хăйне евĕрлĕ Мучин. «Чышкă тытăмĕнче» алă, ура, пуç, пукан йышши япаласем, вĕсене пысăклатса кăтартни пĕлтерĕшлĕ. Вăл тĕлĕшлĕ паллăсене кулăш ăсти паспорт паллисемпе хутăш «ĕçлеттерет»: Чышкă — «çитмĕл те çичĕ çĕршыва пусса тăнă» (ура), «çитмĕл те çичĕ халăха тытса тăнă» (алă). Унăн «чăмăрĕнче пурăнакан çитмĕл те çичĕ тĕслĕ халăха сывлама питĕ йывăр пулнă» (чăмăр)... Ку атрибутикăна юмахлă прозăран илет писатель, сăмахне те юмах пек сĕтевлесе ярать. Ĕç-пуç юхăмĕнче вара пач урăх поэтикăна кăмăллать прозаик. Кунта ресемант мелĕ тĕпе тухать, диалог вăя кĕрет. Калуçă Сăмаха алран ямасть, калу юхăмне пӳлсех тĕрлĕ ăнлантарусем тăвать. Калав вĕçĕнче каллех юмах поэтики тухать ума: «Юмах ятăм — юптартăм, пĕр сăмах та суймарăм». Калу тытăмне чăн нациллĕ йĕркеленин пĕртен-пĕр палли мар ку. «Вун икĕ тăван» калава та çав калăппах çырнă, халăх юррисенчи, асамлă юмахсенчи мелсемпе усă курса паспорт хайланă, кайран вара вун икĕ тăван хапрăк-савăтра мĕнле брак туниве черетленӳ хĕмĕпе аталантарнă, градаципе абсурдлă кульминацие çитернĕ. Калуçă хăйне тыткаланинче каллех юмах поэтики мала килет. Юмах-халаппа эппин Мучи Сăмаха тăтăшламалли, калăва йĕркелемелли риторика мелĕ пек усă курать. Ку енчен вăл тĕлĕкпе пĕр тан, ухмаха ернĕ тенипе пĕр ретре. Асăннă çав виçĕ мелре парадокс вăрттăнĕ пытарăнса тăрать, шухăша писатель юмахлă, тĕлĕклĕ (этем ухмаха ерни) сыпăнтарса ярса пуçлать, унпах çавăрса тăрлать. Фантастикăллăрах коллизисем, тĕшмĕшпе çыхăннă ситуацисем, пулманлăха пулнине кăларни гротескпа гипербола шăтса амаланмалли условисене аван хатĕрлеççĕ. Шухăш вылявĕ Сăмах вылявĕпе пĕр кĕвĕллĕ, объект икке-виççе пайланса выляса тăнипе пĕрлĕхлĕ, пурте вĕсем хайлава хайлав пек ăнланнă чух питĕ кирлĕ енсем. Унран та ытларах: чăваш наци философине ăнланмалли енсем те вĕсем. Сăмаха кукăртасси тĕрлĕ геройсем пĕр-пĕрне пачах ăнланман пек тунинче, ухмаха персе калаçассинче вăранать. Кун пек чухне Мучи калавĕсем чылай ăнăçлăрах («Килти экзамен», «Асаплă сăмахсем», «Хăнчапа Хăçан»). Ухмаха переслĕх, айвана тухас, профанациленес ĕç-пуç диалогра лайăхрах ӳт-пӳленет, пĕчĕк çынсен хирĕç тăрăвĕ кулăш хевтине вăйлатать. Гогольпе ача пĕр-пĕрне ăнланманни çинчен калакан хайлаврах, сăмахран, икĕ культура диалогланса ĕçлеççĕ. Ытти кунашкал хайлавсенче те çав сывлăш малта, вĕсенче те уйрăм çынсем кăна хире-хирĕçленеççĕ теме çук.

Пурĕ пĕрле ку каллех ресемант патне таврăнать, ун функцийĕсене тĕрлĕ енчен хаклама май парать. Çапла аталаннă шухăшсен кĕвелĕкĕнче халăх философийĕ, наци культурин контексчĕ палăрса пырать. Ресемант пулăмне, хайхи, çĕнĕ шайра, анлăрах ăнланма пулать. Кунашкал ресемантăн функцийĕсем вара тĕрлĕрен. Çăл куçĕсем те расна вĕсен. Илемлĕ хайлавăн структурине те сатирик тĕрлĕ мелпе ăсталать. Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсен, юмах-халапри çаврăмсен содержани тĕввине пушатни социаллă картинăсем ӳкернĕ чух ăнăçлăрах («Чышкă тытăмĕ», «Коммунизм ырлăхĕпе»). Илтмĕше пени, ăнланман пек туни диалоглă хутшăнусен еккишĕн, калава йĕркеленĕ чух паха («Хăнчапа Хăçан», «Юлашки уявçă») т. ыт. те. Пĕри каланине тепри е геройсем каланине Калуçă ухмаха çавăрса пыни, каламбурласа тăтăшлани философиллĕ (чăннипех нациллĕ, халăхла) сĕм тупать: чăннипе чăн марри, рацине ирраци, пулма пултарнипе пулма пултарас çукки тупăшуллăн аталанаççĕ

Мучи шыравёсенче. Çак хирĕç-тăру сатирика халăха çутта кăларас тĕллевшĕн, çĕнĕ культура контекстне кĕртессишĕн кирлĕ. Культура тени ăнсăртран мар — Тăхти те, Уяр та, Илпек те, Скворцов та, Çеçпĕл те çавăншăнах хыпăнаççĕ; кулăшпа вылянчăклăх, ухмаха переслĕх, Сăмах наци философийĕпе тачă çыхăннине туяççĕ вĕсем. Çак хавал Мучи пултарулăхне Тăхти витĕмĕпе кĕме пултарнă, çавă-тăр ăна сатирик ĕçĕ «пўрнепе тĕллесе»(С.Шавли)ахăрса ларасси çеç пулманнине астутараканни, ун тымарĕсене тарăнарах яма хистекенни. Ахальтен мар сатирик çав стильпех «Турă хушнипе, патша ирĕкĕпе» калав та çырать. Философилĕх тĕлĕшпе Мучи Тăхти шайне çĕкленеймест. Шўт мелĕ-мехелне Тăхти питлеме, кулăшла япала çинчен калама кăна мар, тăтăрхаллă пулăмсем çинчен сăмах пуçарма усă курать. Анчах шўчĕ хушма пĕлтерĕшлĕ стиль тытăнки кăна мар унăн, унта чăвашсен аптраманлăхĕ, авăнманлăхĕ тĕвĕленет, чĕр хавал тупать. Тата тепĕр ен тупăнать хайхи: шăпах аптраманлăхран, авăнманлăхран килет-мĕн чăвашăн ухмаха перес екки, кашни япаларах (сăмахрах, пулăмрах) вылянчăклăх курасси. Ку та халăх ăнĕн тĕп енĕсенчен пĕри.

Апла пулсан та, Мучие Тăхти çумĕнче сĕтев шутлăн çеç хаклама çук. Уярах унран, калăпăр, социаллăха сăнлама, социаллă пурнăçа характерологиллĕн, стиль сфери туса сăнарлама вĕренет. Мучин карикатурăллă портрет ўкерес ăсталăхĕ те çав нушашăнах кирлĕ Уяра (сăнăр-ха Яка Илле портретне, Ивука). Чĕрĕ мар япаласене тĕпе кăларса чĕрĕ этем çинчен каласси те пăрахăçа юлман, Илпеке илентернĕ. Ун никĕсĕнче — кутăнла метафора, кутăнла танлаштару, пĕчĕклетсе пыни, тĕссĕрлетме тăрăшни: çын — кайăк-кĕшĕк — чĕрĕ мар япала. Чăн, мĕнле пур çаплипех илмест Илпек Мучи традицийĕсене, танлаштаруллă икĕ пулăма, япалана, чĕрĕ чуна вăл çумлăн тăратать. Ак Шерккей пуçĕ çинчен вĕçекен текĕрлĕкех — кам çинчен калать тетĕр Илпек ку танлаштарупа? Паллах, Шерккей çинчен. Аишĕ вилнĕ кун витере тăвăлса урисене тăкăлтаттарса тăракан лаша çинчен астутарар-и тата? Вăл та Шерккее хаклакан танлаштару: ялта ăна Лаша Шерккейĕ тенĕ сăмах та ăнсăртран кĕмсĕрт сиксе тухман. Апла пулсан Мучин чăваш прозин илемлĕ стилĕсене мал ĕмĕтлĕ тăвас тĕлĕшрен пĕлтерĕшĕ çав тери пысăк.

Кун сăлтавĕсем тупăнасса шанакан студент социаллăха мала хума тăрăшĕ. Социаллăхĕ уйрăм, конкретлă тапхăр паллисене мала кăларма хушать. Вырăс сатирикĕ М.Зощенко та çапла ĕçленĕ: калăва мещенле этем калаçăвĕ пек йĕркелесе пынă. Пĕрех, ку этемĕн социаллă пуласлăхĕ çукки те палăрсах тăнă. Мучи те (ку вăл пĕр-пĕринчен вĕреннинчен мар, сатира саккунĕсем çапла хушнинчен килме пултарнă) геройăн çапларах хăтланкаларăш речĕсене савать. «Макар Сидорович» калавра чунĕ-чĕрипе питĕ кайттă этеме тĕсет сатирик. Хĕсĕк ĕмĕтлĕскер, пайташăн çеç касăхать лешĕ, мещенле, суя интеллигентлăхпа йăпанать. Мещенле ăнланнă, ансăр калăплă культурăлăх, геройăн çапларах хăтланкаларăшĕ калав никĕсне шăнăрласа пырать. Кун пек сăнлас тĕллев Мучи çĕнĕ пурнăç таппине шаннинчен те тымарланать тес пулать. «Питлеме палăртнă» герой тыткаларăшĕнче тўнтерлĕх, алогизм, тĕрлĕ событисене пăтраштарнă пек туни, вĕсен черетленĕвĕ тăтăшах никĕсе ўкет. Час-часах тĕрлĕ стильсене пăтраштарни те çак сăлтавсенченех килет — хаçатла репортаж семантики, сăмахран, хайлавăн илемлĕх никĕсĕ пулса тăрать («Çичĕ çыру»). Çурма фельетонла, фантастикăллă çыру-репортаж та çав функциллĕ («Сысна

валли майлаштарнă механизаци»). Куна пула жанр тытăмĕ те хăйне евĕрлĕ Мучин. Калуçăн ăнлантаруллă сăмах тӳпи чакать, монтажлăх «мал ĕмĕтлĕ» пулса пырать. Чăнах та, «Çичĕ çырура» тĕрлĕ инстанцирен çырнă çырусене кăна сыпса пынă темелле. Çав сыпăну вăрттăнне вара вулаканăн хăйĕн тупма лекет. Ытти хайлавсем те çав хаваллă. Ку вăл, каламасăрах паллă, градаци мелĕн хăйне тĕллĕнлĕхĕнчен тухса пырать. Конфликчĕ кун пек чух (социаллăхăн пĕр енĕ вăл) этем чĕринче мар, Сăмах таппинче пытарăнса тăрать. Ку ĕнтĕ вăл, каламасăрах паллă, — Мучи публицистикăлăхне палăртакан ен. Çĕнĕ пурнăç таппи, çĕнĕ культура хĕрĕвĕ, историн ӳсĕмлĕ аталанăвĕ Мучие вĕçĕмех кăсăклантарать. Çавăнпа конфликт, вăл темле çиелте выртнă пек, ытла та социаллă евĕрлĕ курăнсан та, хăй авăрне тĕрлĕ культурăсен (текстсен, интертекстăн) хирехирĕçлĕхне те туртса кĕртет. Хăйне евĕрлĕ, питĕ кăтартуллă пулăм хайланать — пĕр-пĕр пулăм, япала икке-виççе пайланви тĕрлĕ сийсен хирĕç тăрулăхне хиврелетет иккен. Калуçă ăшĕнчи шухăш полемикăллăн, тавлăн аталанса пырать. Чылай чухне ку конфликт пытарăнчăк. Монтаж техĕмĕпе сыпăннă калупа сюжет йĕрĕ каласа çитерменнипе пуянланать, калавĕ вара («Çичĕ çыру», «Промфинплан» йышши хайлавсенче) эскизлă хывăнать, социаллă пурнăçа тĕпе хурарах пынă чух жанр тĕлĕшпе вара хайлав вăйсăр, кайттă енсем тупать. Чăрмавĕ, чăн та, монтажра кăна та мар, Калуçă тĕрлĕрен сыпăксене мĕнле çыхăнтарнине ăнлантарса пыма «ӳркеннинче» те.

Пĕр жанр уйрăмлăхĕсем тепĕр жанр уйрăмлăхĕсемпе пĕрлешни ялан синкретикăллă пулăм хывать. Очеркпа фельетон, çырупа репортаж, калавпа эссе, тĕрленчĕкпе калав пĕтĕçĕвĕ Мучие Калуçă сăнарне ытларах хаклама хушать. Калу та, сюжет та пĕр-пĕр герой перспективинчен хăпать, пĕр жанр теприпе тупăшни ĕç-пуç çинчен каласа паракан сăнара та расна, урăхла сăн кĕртет. Калуçă — пысăк культурăллă çын Мучи çырнисенче. Текстпа (пĕр культурăпа) текста (тепĕр культурăна) çапăнтарнă чух пулăмра пайланма, вакланма пултарас потенци тупать вăл. Хайлаври кашни сий куçăмлă, расна ӳт-пӳллĕ пултăр тесе тар тăкать. Ситуаци пародиллĕ пулса тăрать, темиçе йĕр тавлашуллăн аталаннине кăшăлласа тытса тăрать, унпа хĕрӳленет. Илер ак «Килти экзамен» калава: çитĕнекен, ар çулне çитмен ачан çĕнĕ пурнăç илсе килекен информаципе пуçĕ çаврăнса кайнă. Ашшĕ экзамен тыттарать ăна. Сатирăра кирлĕшĕн ачипе официаллă калаçать, ăна Иванов тет. «Кала-ха, Иванов...» Анчах ачи, профанаци саккунне астума кирлĕрен, пĕр ыйтăва та тивĕçлипе хуравлаймасть. «Миçемĕш çул вĕренетĕн», — тесен, «29 çул» тет. Ашшĕ камне ыйтсан, «Гитлер» тесе хуравлать. Ун «шучĕпе» Чăваш Республикипе Лондон, Париж, Берлин, Мускав ятлă юхан шывсем юхса иртеççĕ, Хĕвел тавра Шупуççынни, Хусанкай, Çеçпĕл, Элкер, Васанкка... планетăсем çаврăнаççĕ; литературăра Меркурий, Венера, Юпитер, Уран, Платун ятлă писательсем ĕçлеççĕ. Ниме пĕлтермен, пакăлтату пек аталану йĕрне уйрăм сăмахсене çеç мар, пĕтĕм культурăна ресемантизацилес хавалпа сыпăнтарса пынă. Сатира объекчĕ экзамен ситуацийĕпе тава кĕрет, ку пурĕ пĕрле çĕнĕ пурнăç саккунĕсемпе хире-хирĕçленет. Диалогĕ ĕнтĕ диалог та мар, ухмаха персе сăмахлас мелĕн екки кăна: пĕлтерĕшĕпе пысăк ĕç пирки сăмах тытмалла пек ашшĕпе ывăлĕн, анчах сăмахĕ вĕтелнĕçемĕн вĕтелсе пырать хайлавра. Ашшĕ çирĕп ыйтма капашать, ун шухăшĕпе вăл панă ыйтусем çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ывăлĕ

(ӑнланман пек туса) тӑрӑхласа пырать темелле. Икӗ аура тавлашаççӗ пек, анчах аури пӗрре çеç, информацилле тӑрӑма, обществӑн çав тӗлӗшлӗ енне писатель икке уйӑрать, икӗ енлӗхӗ сатирӑшӑн, сарказмшӑн кирлӗ философилле мел пек хывӑнать. Чӑнах та, ашшӗн сӑмахӗнчи пысӑк пӗлтерӗшлӗхе ывӑлӗ, ав, кулӑша çавӑрса пырать. «Хӑнчапа Хӑçан» тӗрленчӗкре те çав техӗм, унта та икӗ герой пӗр-пӗрне ӑнланманни урлӑ литература чӗлхин пӗрлехи сӑпатне писатель икке пайлать.

ЫЙТУСЕМПЕ ӖÇСЕМ

1. Чӑваш критикӗсем И.Тӑхти, Иван Мучи сатирипе юморӗн хӑш енӗсене ытларах сӑнанӑ-ши? Паянхи вӑхӑтпа килӗшсе, хӑш уйрӑмлӑхсене мала кӑларнӑ пулӑттӑр? Критиксем асӑрханӑ уйрӑмлӑхсенчен хӑшӗ чӑваш кулӑшне çеç тивӗçет? Хӑш енсем пирки вӗсем ытти халӑх шӳтӗнче те тӗл пулаççӗ теме пулать? Ыйтусен хуравӗсене курс ӗçӗнче пӗтӗмлетӗр.

2. Юморпа сатирӑн мӗнле пӗрпеклӗхсем тата уйрӑмлӑхсем пур? Чӑваш критики (тӗрлӗ шӳтçӗсен пултарулӑхне тишкернӗ чух) куна мӗнле палӑртнӑ?

## Хыç сӑмах

Кӗнекере мӗн калани-туни Иван Мучие чӑваш сатирин ӑсти пек хаклама май парать. Чӑнах та, писатель тӗнче литературинче хывӑннӑ сатира мелӗсене аван пӗлет, вӗсене чӑвашсен сӑмахлӑ культурӑри поэтика хатӗр-хӗтӗрӗпе хитре çураçтарать. Хаçат-журнал ӗçӗнче хастарланса тӑрӑшнӑ ӑста çивӗч те витерӳллӗ публицистика саккунӗсене тӗпе çити тишкерет, сӑнарлӑ публицистикӑн енӗсене хывса хӑварать. Ку вара ун пурнӑçа социаллӑх енчен тарӑннӑн тӗпчес пултарулӑхӗпе пӗрлӗхлӗ. Ахаль мар вӑл тупнӑ илемлӗх мелӗсем нумай-нумай прозаика илӗртеççӗ. Вӗсен хушшинче Хв.Уяра, М.Илпеке, А.Емельянова, Л.Таллерова, Хв.Акивере асӑнма кӑмӑллӑ. Хӑй те Мучи чӑваш прозин талантлӑ ӗçченӗсемпе пӗр ретре тӑрать.

## ТУПМАЛЛИ

Ум сăмах 3

Чăваш цивилизацийĕ хывăнас çул-йĕр тата наци культурин ăнĕ 5

Сăнарлă сăмах культурин чăвашла традицийĕсем. Илемлĕ пуплевĕн хăйне евĕрлĕхĕ; калу. Калуçă сăнарĕ 11

Чăваш кулăшĕн нумай функцилĕхĕ 17

Мучи хайлавĕсенчи калу мелĕсем 21

Ресемантпа алогизмăн сăнарлă пĕлтерĕшĕ. Абсурдăн жанр функцийĕ. Диалог 24

Калуçăн пуплев тыткаларăшĕ. Çырав, ăна калăплас поэтика. Ирони, унăн тăтăшлăхĕ, публицистикăлăх хевти. Ресемант тĕсĕсем. Тет, теççĕ феноменĕ, ун эпикăлăхĕ 29

Калавсенчи хатĕр лару-тăру, хатĕр геройсем, вĕсене сăнланă чух амплификаци мелĕпе усă курнин уйрăмлăхĕсем. Герой, событи, эпизод тата вĕсен социаллă тавралăхĕ. Текста йĕркелемелли мелсем: монтаж, интертекст, фрагментлăх 36

Сăмахăн курăмлăхĕ тата унăн тĕрлĕ енĕсем. Сăпатлантару. Вăхăт сăнарĕ тата Сăмах. Сăмахри анекдотпа трагеди пĕрлĕхĕ 39

Сăмах, чĕлхе ăнĕ, Мучин илемлĕ шухăш уйрăмлăхĕсем. 42

Мучи хайлавĕсенчи сăмахлă чăваш культурин ăнĕ. Сăмах ăсталăхĕн калуллă илемлĕхĕ 46

Геройăн, лару-тăрăвăн типлăхĕ, вĕсен социаллă тавралăхĕ. Публицистикăллă çырав уйрăмлăхĕсем. Интертекст тата жанр хушшинчи çыхăнусем 49

Илемлĕ хайлавăн сатирăллă тытăмĕ. Сăмахăн, шухăшăн, лару-тăрăвăн, сăнарлу объекчĕн выляничăклăхĕ 53

Хыç сăмах 58

Учебное издание

Федоров Георгий Иосифович

ТВОРЧЕСТВО ИВАНА МУЧИ
И ПРИРОДА КОМИЧЕСКОГО
В ЧУВАШСКОЙ ЛИТЕРАТУРЕ

Конспект лекций

Отв. за выпуск М.М.Федорова

Подписано в печать 24.08.99. Формат 60x84/16. Бумага газетная. Печать оперативная. Усл.печ.л. 3,72. Уч.-изд.л. 4,4. Тираж 700 экз. Заказ № 659

Чувашский государственный университет
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15

# [illegible]


[illegible] 3
[illegible] 5
[illegible] 11
[illegible] 17
[illegible] 21
[illegible] 24
[illegible] 29
[illegible] 36
[illegible] 39
[illegible] 42
[illegible] 46
[illegible] 49
[illegible] 53
[illegible] 58

20=0.0